МИНИСТЕРСТВО НАУКИ И ВЫСШЕГО ОБРАЗОВАНИЯ
РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ
Федеральное государственное бюджетное образовательное
учреждение высшего образования
«Чувашский государственный университет имени И.Н. Ульянова»

**О.Г. Владимирова А.М. Иванова**

# ХУРАВĔ МĔНЛЕ-ШИ?

# КТО ЗНАЕТ ОТВЕТ?

**Материалы международной олимпиады школьников
по чувашскому языку и литературе**

Учебное пособие

В 3 книгах

Книга 3

Чебоксары
2024

УДК 373.091.27:[811.512.111+821.512.111](075.8)
ББК Ч420.275я7+Ш12=635.1я7+Ш43(2)(=635.1)я7
В57

*Рецензенты:*
д-р филол. наук, профессор *Г.Н. Семенова;*
канд. филол. наук, доцент *А.С. Егорова*

**Владимирова О.Г.**
**В57** Хуравĕ мĕнле-ши? Кто знает ответ? Материалы международной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе: учеб. пособие: в 3 кн. Кн. 3 / О.Г. Владимирова, А.М. Иванова; Чуваш. гос. ун-т им. И.Н. Ульянова. Чебоксары, 2024. 164 с.

ISBN 978-5-7677-3773-4 (кн. 3)
ISBN 978-5-7677-3771-0

Содержит задания и ответы международной олимпиады школьников 9–11 классов по чувашскому языку и литературе 2019–2024 гг. Олимпиадные материалы представлены по направлениям: 1) чувашский язык и литература для школ с чувашским языком обучения; 2) чувашский язык и литература для других школ (с русским, татарским, мордовским, марийским и др. языками обучения). Можно использовать для подготовки учащихся к олимпиадам и в качестве банка заданий на занятиях и во внеурочной деятельности.

Для учащихся школ, учителей-словесников, студентов, магистрантов, аспирантов и преподавателей филологических факультетов.

Ответственный редактор канд. филол. наук,
доцент Н.И. Якимова

Утверждено Учебно-методическим советом университета

ISBN 978-5-7677-3773-4 (кн. 3)
ISBN 978-5-7677-3771-0
УДК 373.091.27:[811.512.111+821.512.111](075.8)
ББК Ч420.275я7+Ш12=635.1я7+Ш43(2)(=635.1)я7
© Чувашский госуниверситет им. И.Н. Ульянова, 2024
© Владимирова О.Г., Иванова А.М., 2024

# ПĔТĔМĔШЛЕ ĂНЛАНТАРНИ

Тăван чĕлхемĕр пуянлăхне, илемлĕ сăмахлăхăмăр асамлăхне туйма-сăнама пĕлни пур çыншăн та пĕлтерĕшлĕ, кăтартуллă. Юлашки çулсенче тăван чĕлхепе тата литературăпа тĕрлĕ шайри олимпиадăсем чылай иртеççĕ. Ку пулăм вара вĕренекенсене мăн асаттемĕрсен чĕлхине, несĕлсен ăс-халне, тăхăмсен пилне ăша хывса пурăнма, ăна аталантарма пулăшать.

Кĕнекене 2019, 2021, 2022, 2023, 2024-мĕш çулсенче пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада ыйтăвĕсемпе ĕçĕсене, хуравĕсене кĕртнĕ. Вĕсене икĕ ушкăна пайланă: 1) чăваш шкулĕсем валли, 2) ытти чĕлхеллĕ (вырăс, тутар, мăкшă, мари) шкулсем валли.

Олимпиада – шкул ачисене вĕренӳ предмечĕпе кăсăклантармалли тата пултаруллă ачасене тупса палăртмалли майсенчен пĕри. Вĕренӳ пособийĕнчи ыйту-семпе ĕçсем «ăс-хакăл» ăмăртăвне хатĕрленме кăна мар, тăван чĕлхепе литература урокĕсене кăсăклă та тухăçлă ирт-терме, вĕренекенсен чĕлхе туйăмне аталантарма, çыравçă ăсталăхне алла илме май параççĕ. Кĕнекери материал çĕнĕ темăпа кăсăкланма, ăна çăмăллăнрах ăша хывма пулăшать. Унпа шкул ачисене олимпиадăна хатĕрлес ĕçре, вĕренӳ процесĕнче, класс тулашĕнчи ĕçсенче усă курма меллĕ.

Ку кĕнеке вĕрентекенсемпе шкул ачисемшĕн нумай енчен усăллă пуласса шанас килет.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2019-мĕш çул***

***9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Ултă сас паллирен тăракан сăмах тăвăр. Çав сăмаха тума:

1) «ешĕл» сăмахăн синонимне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр;

2) *Наум Андреевич, Иван Андреевич, Василий Алексеевич* – чăваш чĕлхеçисем; вĕсен хушамачĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр;

3) çулнă утă ретне (йĕркине) чăвашла мĕн теççĕ? Çав сăмахăн пуçламăш сас паллине илĕр;

4) *туять* сăмахри тăваттăмĕш сасса илĕр;

5) чăваш алфавитĕнчи вун тăваттăмĕш сас паллине çырăр;

6) пĕр-пĕр ĕçе е пулăма ытлашши пысăклатса кăтартни вăл мĕн ятлă сăнарлăх мелĕ? Чи юлашки сас паллине илĕр.

Мĕнле сăмах пулнине, унăн синонимне çырăр.

**Хурав.**

1) «ешĕл» сăмахăн синонимне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр – **С** (симĕс);

2) *Наум Андреевич, Иван Андреевич, Василий Алексеевич* – чăваш чĕлхеçисем; вĕсен хушамачĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр – **А** (Андреев);

3) çулнă утă ретне (йĕркине) чăвашла мĕн теççĕ? Çав сăмахăн пуçламăш сас паллине илĕр – **П** (паккус);

4) *туять* сăмахри тăваттăмĕш сасса илĕр – **А**;

5) чăваш алфавитĕнчи вун тăваттăмĕш сас паллине çырăр – **К**;

6) пĕр-пĕр ĕçе е пулăма ытлашши пысăклатса кăтартни вăл мĕн ятлă сăнарлăх мелĕ? Чи юлашки сас паллине илĕр – **А** (гипербола).

САПАКА (сапака), синонимĕ – *çупкăм.*

**2. Ыйту (ĕç).**

*Пуç, алă, чĕлхе, кăкăр, хырăм, шăл, чĕре, çăвар, ура, хăлха* – çак сăмахсемпе кашнинпе икшер фразеологизм çырăр.

**Хурав.**

| **Ӳт-пӳ пайĕ** | **Ачасен хуравĕсенче тĕл пулма пултаракан фразеологизм тĕслĕхĕсем** |
|---|---|
| пуç | пуç çине хăпарса лар, пуç çурăлса тухать, пуçа çухат, пуç çап т.ыт.те |
| алă | алă пырать, алла ил, алла ус, алла пар, алла вĕрент т.ыт.те |
| чĕлхе | пуклак чĕлхе, чĕлхе кĕçĕтет, чĕлхе çаврăнмасть, чĕлхе çыхланать т.ыт.те |
| кăкăр | кăкăр çап, кăкăртан юлашки сывлăш тухиччен т.ыт.те |
| хырăм | хырăм хыр тăрне кайрĕ, хырăм тытса кул т.ыт.те |
| шăл | шăл хайра, шăл витмест, шăл çырт, шăл шакка, шăл йĕр т.ыт.те |
| чĕре | чĕрене тив, чĕрене уç, чĕрене хытар, чĕререн тух, чĕрене ыраттар, чĕрене çемçет, чĕрене ил, чĕрене çунтар, чĕрене çур, чĕре сикет т.ыт.те |
| çăвар | çăвар кар, çăвар уç, çăварне хупла, çăвара шыв сып, çăвар вылят т.ыт.те |

| | |
|---|---|
| ура | ураран ура иртмест, ура ҫине тăр, ура ярса пус, ураран ӳк т.ыт.те |
| хăлха | хăлхана чик, хăлхана кĕр т.ыт.те |

**3. Ыйту (ĕç).**

Панă тĕслĕхрен чи ансăр глагол сăмах майлашăвне тата чи анлă ят сăмах майлашăвне тупса пуçламăш формăра çырăр. Чи анлă ят сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне палăртăр.

*Темиçе пĕрмеллĕ кăвак кĕпе çине куçа илĕртекен шур чечеклĕ саппун çыхнă вăтам çулхи Станук Макçи хĕрĕ Вĕçелис картишĕнче хуран кукли пĕçеретчĕ.*

**Хурав.**

Чи ансăр глагол сăмах майлашăвĕ: *куçа илĕрт.*

Чи анлă ят сăмах майлашăвĕ: *темиçе пĕрмеллĕ кăвак кĕпе çине куçа илĕртекен шур чечеклĕ саппун çыхнă вăтам çулхи Станук Макçи хĕрĕ Вĕçелис.* Тĕп компоненчĕ – *вăтам çулхи Станук Макçи хĕрĕ Вĕçелис*.

**4. Ыйту (ĕç).**

Хутлă предложени ятне, пайĕсене, çыхăну мелне çырăр.

*Каччă хăйĕн çине тĕлĕнсе те сăнаса пăхнине сиснĕ хĕр тăруках именсе палăрмаллах хĕрелчĕ.*

**Хурав.**

Пăхăнуллă хутлă предложени, тĕп пайĕ – *сиснĕ хĕр тăруках именсе палăрмаллах хĕрелчĕ*, пăхăнакан пайĕ – *каччă хăйĕн çине тĕлĕнсе те сăнаса пăхнине*, çыхăну мелĕ – -*е* пару падеж аффиксĕ.

**5. Ыйту (ĕç).**

Ăн «сознание» сăмахпа пĕр тымарлă тĕслĕхсене тупса çырăр.

**Хурав.**

Ачасен хуравӗнче пулма пултаракан сӑмахсем: *ӑнла, ӑнлав, ӑнлан, ӑнлантар, ӑнлантару, ӑнлану, ӑнланулӑх, ӑнкар, ӑнкару, ӑн-пуç, ӑнлӑ-пуçлӑ* тата ытти те.

**6. Ыйту.**

Мӗн вӑл çемӗ?

**Хурав.**

Çемӗ – сӑвӑри пусӑмлӑ сыпӑксем пусӑмсӑррисемпе виçеллӗ ылмашӑнса пыни, юрламалли е такмакламалли текстри сӑмахсен кӗвви, хӑвӑртлӑхӗ; тӗслӗхрен, мунча такмакӗсен çемми, юрӑ çемми т.ыт.те.

**7. Ыйту (ӗç).**

Чӑваш литературинчи тӗп харкамçӑ ячӗпе ят панӑ хайлавсене аса илӗр. Произведени ятне, авторне палӑртса пилӗк тӗслӗх çырӑр.

**Хурав.**

Ачасен хуравӗнче тӗл пулма пултаракан хайлав ячӗсем:

«Варуççи» (Турхан Яккӑвӗ), «Нарспи» (К. Иванов), «Хитре Чӗкеç», «Пӗтелмей» (Н. Шупуççынни), «Унтри» (Ç. Элкер), «Мучар» (Трубина Мархви), «Якур», «Лизавета Егоровна» (М. Чалтун), «Тутимӗр», «Кӗлпук мучи» (Ухсай Яккӑвӗ), «Таня» (П. Хусанкай), «Сатурпа Илем» (И. Максимов-Кошкинский), «Лиза Короткова» (Н. Айзман), «Салампи» (А. Артемьев), «Айтар» (П. Осипов) т.ыт.те.

**8. Ыйту.**

Ухсай Яккӑвӗ тӑван чӗлхемӗр аран сывлать, пӗтет тесе иккӗленекенсене мӗнле ят парать?

**Хурав.**

Суккӑр пӑвансем тет.

**9. Ыйту (ӗç).**

Текста чӑвашла куçарӑр:

*Настанет время. И чувашский язык будет разрубать железо. Станет острым, станет раскаленною сталью. Будет время – люди услышат и чувашскую песню. Ясное небо, простор белого света, красное солнце любовно воспоет он, чуваш. В чувашской песне зазвенит трель жаворонка в поднебесье. В чувашской песне зашумят морские волны, зашелестит листвою лес, зазеленеют бескрайние луга. Донесется до слуха стон древнего горя, счастье откроется взору. Гуслями зазвенит природа вдоль берегов Волги – это будет звон чувашской песни, чувашского слова, чувашского языка. Чувашский язык станет жаром горящих углей, раскаленною сталью станет.*

*Издревле жил чуваш в угнетении. Каких страданий, каких мук он не вынес, защищая свой язык. Все же чуваш под всеми невзгодами, под горем огромным не уронил своего достоинства и донес свою честь, свое доброе имя до наших дней. Пусть здравствует и в грядущем!*

**Хурав.**

Вăхăт çитĕ. Чăваш чĕлхи те тимĕр татĕ. Çивĕч пулĕ. Хĕртнĕ хурçă пек пулĕ. Вăхăт çитĕ – чăваш юрри те илтĕнсе кайĕ. Таса пĕлĕте, çут тĕнчене, хĕрлĕ хĕвеле савса юрлĕ вăл. Чăваш юрринче – таса пĕлĕт çумĕнчи тăри юрри илтĕнĕ. Чăваш юрринче тинĕс хумĕ шавлĕ, вăрман чашлĕ, вĕççи-хĕррисĕр улăхсем симĕсленсе выртĕç. Авалхи хуйхă сасси илтĕнĕ, телей куç умне тăрĕ. Атăл хĕрри тăрăх тĕнче кĕсле сассипе янраса тăрĕ – çакă чăваш юрри пулĕ, чăваш сăмахĕ, чăваш чĕлхи пулĕ. Чăваш чĕлхи кăвар пулĕ, хĕрнĕ хурçă пулĕ!

Авалранпа чăваш хĕсĕкре пурăннă. Мĕн асап курман, мĕн тӳсмен вăл хăй чĕлхине сыхланăшăн. Чăваш çапах та пур асапран, пур хурлăх айĕнчен чăваш ятне çĕртмесĕр ку тарана çитернĕ. Сывă пултăр малалла та!

**10. Ыйту (ĕç).**

*Театр, сцена, артист, чун, телей, тивĕç, пурнăç, шăпа, илем* сăмахсемпе усă курса 1-2 çавраллă сăвă çырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2019-мĕш çул***

***10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Ултă сас паллирен тăракан сăмах тăвăр. Çав сăмаха тума:

1) çулнă утă ретне (йĕркине) чăвашла мĕн теççĕ? Çав сăмахăн пуçламăш сас паллине илĕр;

2) чăваш алфавитĕнчи çирĕм тăваттăмĕш сас паллине çырăр;

3) йăвă «густой» сăмахăн синонимне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр;

4) «Обратный словарь» тенине чăвашла мĕнле куçаратпăр? Чи пĕрремĕш сас паллине илĕр;

5) *Наум Андреевич, Иван Андреевич, Василий Алексеевич* – чăваш чĕлхеçисем; вĕсен хушамачĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр;

6) сонорлă (ялан янăравлă) хупă сасăсенчен хăшĕ чăваш сăмахĕн пуçламăшĕнче тĕл пулмасть? Çав сасса палăртакан сас паллине çырăр.

Мĕнле сăмах пулнине, унăн синонимне çырăр.

**Хурав.**

1) çулнă утă ретне (йĕркине) чăвашла мĕн теççĕ? Çав сăмахăн пуçламăш сас паллине илĕр – **П** (паккус);

2) чăваш алфавитĕнчи çирĕм тăваттăмĕш сас паллине çырăр – **У**;

3) йăвă «густой» сăмахăн синонимне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр – **Ç** (çăра);

4) «Обратный словарь» тенине чăвашла мĕнле куçаратпăр? Чи пĕрремĕш сас паллине илĕр – **Т** (тӳнтер словарь);

5) *Наум Андреевич, Иван Андреевич, Василий Алексеевич* – чăваш чĕлхеçисем; вĕсен хушамачĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр – **А** (Андреев);

6) сонорлă (ялан янăравлă) хупă сасăсенчен хăшĕ чăваш сăмахĕн пуçламăшĕнче тĕл пулмасть? Çав сасса палăртакан сас паллине çырăр – **Р**.

ПУÇТАР (пуçтар), синонимĕ – *пух.*

**2. Ыйту (ĕç).**

*Фразеологизм, омоним, нумай пĕлтерĕшлĕ сăмах, хурăнташ чĕлхесем, мăшăр сăмах* – çак чĕлхе терминĕсен пĕлтерĕшне ăнлантарса çырăр, тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

**Хурав.**

| **Терминсем** | **Пĕлтерĕшне ăнлантарни** | **Тĕслĕх** |
|---|---|---|
| Фразеологизм | Семантика (пĕлтерĕш) тĕлĕшĕнчен ирĕклĕ мар сăмахсен уйрăлми тачă çыхăнăвĕ – сăмах çаврăнăшĕ | *кĕççе пит, тимĕр пăрçа, сехре хăпрĕ* |
| Омоним | Пĕр пек илтĕнекен, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсем | *касса* (деепричасти), *касса* (япала ячĕ) |
| Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмах | Икĕ е унтан ытларах пĕлтерĕшлĕ сăмах | *сăмса* (çăкăр сăмси, кайăк сăмси, карап сăмси) |
| Хурăнташ чĕлхесем | Пĕр тымартан тухнă чĕлхесем | чăваш, тутар, пушкăрт |

| | | |
|---|---|---|
| Măшăр сăмах | Пĕр пуплев пайне кĕрекен сăмахсене пĕрлештерсе каланипе пулнă çĕнĕ сăмах | *атă-пушмак кайăк-кĕшĕк* |

**3. Ыйту (ĕç).**

Панă тĕслĕхрен чи ансăр глагол сăмах майлашăв(ĕсе)не тата чи анлă ят сăмах майлашăвне тупса пуçламăш формăра çырăр. Чи анлă ят сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне палăртăр.

*Картишне çулла таса мар алăсене çукалама кăмкан çакакан юпаран кăкарнă кăвак çилхеллĕ лаша, Макçи ури сассине илтсен, тĕлĕрнĕ çĕртен пуçне çĕклерĕ.*

**Хурав.**

Чи ансăр глагол сăмах майлашăвĕсем: *кăмкан çак, пуç çĕкле.*

Чи анлă ят сăмах майлашăвĕ: *картишне çулла таса мар алăсене çукалама кăмкан çакакан юпаран кăкарнă кăвак çилхеллĕ лаша.* Тĕп компоненчĕ – *кăвак çилхеллĕ лаша*.

**4. Ыйту (ĕç).**

Хутлă предложени ятне, пайĕсене, çыхăну мелне çырăр.

*Манăн перо хут тăрăх вăраххăн шунине сăнаса ларакан Куçма сĕтел хушшинче тахçанччен пĕр хускалми ларать.*

**Хурав.**

Пăхăнуллă хутлă предложени, тĕп пайĕ – *сăнаса ларакан Куçма сĕтел хушшинче тахçанччен пĕр хускалми ларать*, пăхăнакан пайĕ – *манăн перо хут тăрăх вăраххăн шунине*, çыхăну мелĕ – -*е* пару падеж аффиксĕ.

**5. Ыйту (ĕç).**

Ăс «ум, разум» сăмахпа пĕр тымарлă тĕслĕхсене тупса çырăр.

**Хурав.**

Ачасен хуравĕнче пулма пултаракан сăмахсем: *ăслă, ăслав, ăслай, ăслăлăх, ăсчах, ăслан, ăслантар, ăс-хакăл, ăслан, ăс-пуç, ăслă-пуçлă* тата ытти те.

**6. Ыйту.**

Сăнарлă шухăш аталанăвне çак мелсемпе йĕркелени хăш литература жанрĕнче тĕл пулать?

*Темăна палăртни, аталантарни, кульминаци, вĕçлев, катрен (тăватйĕркелĕх), терцина (виçйĕркелĕх).*

**Хурав.**

Сонет жанрĕнче.

**7. Ыйту (ĕç).**

Çак йĕркесен авторĕ кам? Сăвва кама халаллană-ши? Сăвă виçине тата карт шутне палăртăр.

*Тунсăхларĕ Сире тăлăх Миша-упа,*
*Тертленсе çитрĕ чунĕ телейсĕрĕн.*
*Тем те парĕ курасшăн Сире вăл куçпа,*
*Кĕтнĕ çутă кунне çитерейнĕшĕн.*

**Хурав.**

Çеçпĕл Мишши. Анастасия. Червякована халалланă. Сăвă виçи – 4 тата 3 картлă анапест.

**8. Ыйту (ĕç).**

Повесть ятне тата авторне палăртăр:

*Ку повеçре икĕ тĕрлĕ çулпа пыракан çынсен пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартса панă. Пĕр çулĕпе пыраканĕсем – таса кăмăлпа тӳрĕ пурăнса халăха ырă тăвасчĕ, çĕршыва усă кӳресчĕ тесе тăрăшакансем, теприсем – мораль тĕлĕшĕнчен пăсăлнипе аялтан аялалла анса пыракансем.*

*Çак икĕ тĕрлĕ çынсем хушшинче тăташах хаяр кĕрешӳ те пула-пула иртет. Юлашкинчен темĕнле пулсан та урă ăс-хакăлпа тĕрĕслĕх çĕнсе çиеле тухать.*

**Хурав.**

«Хурапа шурă». Авторĕ – Çемен Элкер.

**9. Ыйту (ĕç).**

Текста чăвашла куçарăр:

*Настанет время. И чувашский язык будет разрубать железо. Станет острым, станет раскаленною сталью. Будет время – люди услышат и чувашскую песню. Ясное небо, простор белого света, красное солнце любовно воспоет он, чуваш. В чувашской песне зазвенит трель жаворонка в поднебесье. В чувашской песне зашумят морские волны, зашелестит листвою лес, зазеленеют бескрайние луга. Донесется до слуха стон древнего горя, счастье откроется взору. Гуслями зазвенит природа вдоль берегов Волги – это будет звон чувашской песни, чувашского слова, чувашского языка. Чувашский язык станет жаром горящих углей, раскаленною сталью станет.*

*Издревле жил чуваш в угнетении. Каких страданий, каких мук он не вынес, защищая свой язык. Все же чуваш под всеми невзгодами, под горем огромным не уронил своего достоинства и донес свою честь, свое доброе имя до наших дней. В лишеньях и в муках, под чужими народами чувашский язык не пропал. Века проходили за веками. Чуваш разговаривал тихо. Чувашский язык травили со всех сторон. А он все такой же – живой, невредимый. Вопреки всем глумленьям – он жив и поныне. Жив он! Пусть здравствует и в грядущем! Это значит – чуваш своим словом заставит гром грохотать и вызовет молний огонь. Это нам дает уверенность. Верим! Настанет время! Кто верит – тот счастлив.*

**Хурав.**

Вăхăт çитĕ. Чăваш чĕлхи те тимĕр татĕ. Çивĕч пулĕ. Хĕртнĕ хурçă пек пулĕ. Вăхăт çитĕ – чăваш юрри те илтĕнсе кайĕ. Таса пĕлĕте, çут тĕнчене, хĕрлĕ хĕвеле савса юрлĕ вăл. Чăваш юрринче – таса пĕлĕт çумĕнчи тăри юрри илтĕнĕ. Чăваш юрринче тинĕс хумĕ шавлĕ, вăрман чашлĕ, вĕççи-хĕррисĕр улăхсем симĕсленсе выртĕç. Авалхи хуйхă сасси илтĕнĕ, телей куç умне тăрĕ. Атăл хĕрри тăрăх тĕнче кĕсле сассипе янраса тăрĕ – çакă чăваш юрри пулĕ, чăваш сăмахĕ, чăваш чĕлхи пулĕ. Чăваш чĕлхи кăвар пулĕ, хĕрнĕ хурçă пулĕ!

Авалранпа чăваш хĕсĕкре пурăннă. Мĕн асап курман, мĕн тӳсмен вăл хăй чĕлхине сыхланăшăн. Чăваш çапах та пур асапран, пур хурлăх айĕнчен чăваш ятне çĕртмесĕр ку тарана çитернĕ. Терт хушшинче, ют халăх айĕнче чăваш чĕлхи çухалман. Ĕмĕрсем иртсе пынă. Чăваш шăппăн калаçнă. Чăваш чĕлхине пур тавраран туланă. Вăл çавах та халь те чĕрĕ, халь те сывă. Пур мăшкăла пăхмасăр – халь те сывă. Сывă вăл! Сывă пултăр малалла та! Çак ĕç – чăваш малашне хăй чĕлхипе аслати алтса çиçĕм çиçтерессине палăртать. Çак ĕç пире шанчăк парать. Шанатпăр. Вăхăт çитĕ! Шанчăк пуррисем – телейлĕ.

**10. Ыйту (ĕç).**

*Театр, сцена, артист, чун, телей, тивĕç, пурнăç, шăпа, илем* сăмахсемпе усă курса 1-2 çавраллă сăвă çырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2019-мĕш çул***

***11-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Çичĕ сас паллирен тăракан сăмах тăвăр. Çав сăмаха тума:

1) çулнă утă ретне (йĕркине) чăвашла мĕн теççĕ? Çав сăмахăн пуçламăш сас паллине илĕр;

2) «училище» сăмах вĕçĕнче мĕнле сасă илтĕннине çырăр;

3) чăваш алфавитĕнчи вун пиллĕкмĕш сас паллине çырăр;

4) «Обратный словарь» тенине чăвашла мĕнле куçаратпăр? Чи пĕрремĕш сас паллине илĕр;

5) «хăвăрт» сăмахăн уçă сасăпа пуçланакан антонимне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр;

6) сонорлă (ялан янăравлă) хупă сасăсенчен хăшĕ чăваш сăмахĕн пуçламăшĕнче тĕл пулмасть? Çав сасса палăртакан сас паллине çырăр;

7) çемçе уçă сасă, кивĕ çырулăх палăкĕсенче ку сас паллипе усă курман, чăваш çырулăхне ăна чи малтан Н.И. Золотницкий кĕртнĕ; çав сас паллине çырăр.

Мĕнле сăмах пулнине, унăн синонимне çырăр.

**Хурав.**

1) çулнă утă ретне (йĕркине) чăвашла мĕн теççĕ? Çав сăмахăн пуçламăш сас паллине илĕр – **П** (паккус);

2) «училище» сăмах вĕçĕнче мĕнле сасă илтĕннине çырăр – **Ĕ**;

3) чăваш алфавитĕнчи вун пиллĕкмĕш сас паллине çырăр – **Л**;

4) «Обратный словарь» тенине чăвашла мĕнле куçаратпăр? Чи пĕрремĕш сас паллине илĕр – **Т** (тӳнтер словарь);

5) «хăвăрт» сăмахăн уçă саспаллипе пуçланакан антонимне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр – **Е** (ерипен);

6) сонорлă (ялан янăравлă) хупă сасăсенчен хăшĕ чăваш сăмахĕн пуçламăшĕнче тĕл пулмасть? Çав сасса палăртакан сас паллине çырăр – **Р**;

7) çемçе уçă сасă, кивĕ çырулăх палăкĕсенче ку сас паллипе усă курман, чăваш çырулăхне ăна чи малтан Н.И. Золотницкий кĕртнĕ; çав сас паллине çырăр – **Ӳ**.

ПĔЛТЕРӲ (пĕлтерӳ), синонимĕ – *хыпар.*

**2. Ыйту (ĕç).**

*Фразеологизм, омоним, нумай пĕлтерĕшлĕ сăмах, хурăнташ чĕлхесем, мăшăр сăмах* – çак чĕлхе терминĕсен пĕлтерĕшне ăнлантарса çырăр, тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

**Хурав.**

| **Терминсем** | **Пĕлтерĕшне ăнлантарни** | **Тĕслĕх** |
|---|---|---|
| Фразеоло-гизм | Семантика (пĕлтерĕш) тĕлĕшĕнчен ирĕклĕ мар сăмахсен уйрăлми тачă çыхăнăвĕ – сăмах çаврăнăшĕ | *кĕççе пит, тимĕр пăрçа, сехре хăпрĕ* |
| Омоним | Пĕр пек илтĕнекен, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсем | *касса* (дее-причасти), *касса* (япала ячĕ) |
| Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмах | Икĕ е унтан ытларах пĕлтерĕшлĕ сăмах | *сăмса* (çăкăр сăмси, кайăк сăмси, карап сăмси) |

| | | |
|---|---|---|
| Хурӑнташ чӗлхесем | Пӗр тымартан тухнӑ чӗлхесем | чӑваш, тутар, пушкӑрт |
| Мӑшӑр сӑмах | Пӗр пуплев пайне кӗрекен сӑмахсене пӗрлештерсе каланипе пулнӑ ҫӗнӗ сӑмах | *атӑ-пушмак кайӑк-кӗшӗк* |

**3. Ыйту (ӗҫ).**

Панӑ тӗслӗхрен чи ансӑр глагол сӑмах майлашӑв(ӗсе)не тата чи анлӑ ят сӑмах майлашӑвне тупса пуҫламӑш формӑра ҫырӑр. Чи анлӑ ят сӑмах майлашӑвӗн тӗп компонентне палӑртӑр.

*Картишне ҫулла таса мар алӑсене ҫукалама кӑмкан ҫакакан юпаран кӑкарнӑ кӑвак ҫилхеллӗ лаша, Макҫи ури сассине илтсен, тӗлӗрнӗ ҫӗртен пуҫне ҫӗклерӗ.*

**Хурав.**

Чи ансӑр глагол сӑмах майлашӑвӗсем: *кӑмкан ҫак, пуҫ ҫӗкле.*

Чи анлӑ ят сӑмах майлашӑвӗ: *картишне ҫулла таса мар алӑсене ҫукалама кӑмкан ҫакакан юпаран кӑкарнӑ кӑвак ҫилхеллӗ лаша.* Тӗп компоненчӗ – *кӑвак ҫилхеллӗ лаша*.

**4. Ыйту (ӗҫ).**

Хутлӑ предложени ятне, пайӗсене, ҫыхӑну мелне ҫырӑр.

*Ҫанталӑк юсанасса сиснӗ тантӑшсем мана тинӗс айӗнчи американецсен фильмне курма сӗнчӗҫ.*

**Хурав.**

Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени, тӗп пайӗ – *сиснӗ тантӑшсем мана тинӗс айӗнчи американецсен фильмне*

*курма сĕнчĕç*, пăхăнакан пайĕ – *çанталăк юсанасса*, çыхăну мелĕ – -*а* пару падеж аффиксĕ.

**5. Ыйту (ĕç).**

Ăс «ум, разум» сăмахпа пĕр тымарлă тĕслĕхсене тупса çырăр.

**Хурав.**

Ачасен хуравĕнче пулма пултаракан сăмахсем:

*ăслă, ăслав, ăслай, ăслăлăх, ăсчах, ăслан, ăслантар, ăс-хакăл, ăслан, ăс-пуç, ăслă-пуçлă* тата ытти те.

**6. Ыйту.**

Мĕн вăл плеоназм?

**Хурав.**

Калуçă нумай сăмахлăн калаçса айвана пенĕ пек пулни.

**7. Ыйту.**

Çак йĕркесен авторĕ кам?

*Ларать пĕччен пĕр камерта вăл,*
*Кун хыççăн кун ахаль иртет…*
*Жандарм калать: «Семенов, тайăл!»*
*Семеновĕ: «Эп – Тайăр!» – тет».*

**Хурав.**

Авторĕ – Митта Ваçлейĕ.

**8. Ыйту.**

Чăвашсен «Аллу хуçăлсан – алса ăшне пытар» текен каларăшĕ Ю. Скворцовăн хăш хайлавĕнче тĕл пулать?

**Хурав.**

«Уках хурăнĕ» повеçре.

**9. Ыйту (ĕç).**

Текста чăвашла куçарăр:

*Настанет время. И чувашский язык будет разрубать железо. Станет острым, станет раскаленною сталью.*

*Будет время – люди услышат и чувашскую песню. Ясное небо, простор белого света, красное солнце любовно воспоет он, чуваш. В чувашской песне зазвенит трель жаворонка в поднебесье. В чувашской песне зашумят морские волны, зашелестит листвою лес, зазеленеют бескрайние луга. Донесется до слуха стон древнего горя, счастье откроется взору. Гуслями зазвенит природа вдоль берегов Волги – это будет звон чувашской песни, чувашского слова, чувашского языка. Чувашский язык станет жаром горящих углей, раскаленною сталью станет.*

*Издревле жил чуваш в угнетении. Каких страданий, каких мук он не вынес, защищая свой язык. Все же чуваш под всеми невзгодами, под горем огромным не уронил своего достоинства и донес свою честь, свое доброе имя до наших дней. В лишеньях и в муках, под чужими народами чувашский язык не пропал. Века проходили за веками. Чуваш разговаривал тихо. Чувашский язык травили со всех сторон. А он все такой же – живой, невредимый. Вопреки всем глумленьям – он жив и поныне. Жив он! Пусть здравствует и в грядущем! Это значит – чуваш своим словом заставит гром грохотать и вызовет молний огонь. Это нам дает уверенность. Верим! Настанет время! Кто верит – тот счастлив.*

*Язык, уцелевший под гоненьем и травлей, не пропадет в мире бесследно. Доселе не слышно было чувашского слова, – ныне услышат чувашскую песню; чувашский стих, чувашская речь взыграют как волны Волги, зашумят как лес, зазвенят как струны гуслей. Чувашский язык разрубит железо, станет острой сталью.*

*Будет время! Настанет время!*

**Хурав.**

Вӑхӑт ҫитӗ. Чӑваш чӗлхи те тимӗр татӗ. Ҫивӗч пулӗ. Хӗртнӗ хурҫӑ пек пулӗ. Вӑхӑт ҫитӗ – чӑваш юрри те илтӗнсе кайӗ. Таса пӗлӗте, ҫут тӗнчене, хӗрлӗ хӗвеле савса

юрлĕ вăл. Чăваш юрринче – таса пĕлĕт çумĕнчи тăри юрри илтĕнĕ. Чăваш юрринче тинĕс хумĕ шавлĕ, вăрман чашлĕ, вĕççи-хĕррисĕр улăхсем симĕсленсе выртĕç. Авалхи хуйхă сасси илтĕнĕ, телей куç умне тăрĕ. Атăл хĕрри тăрăх тĕнче кĕсле сассипе янраса тăрĕ – çакă чăваш юрри пулĕ, чăваш сăмахĕ, чăваш чĕлхи пулĕ. Чăваш чĕлхи кăвар пулĕ, хĕрнĕ хурçă пулĕ!

Авалранпа чăваш хĕсĕкре пурăннă. Мĕн асап курман, мĕн тӳсмен вăл хăй чĕлхине сыхланăшăн. Чăваш çапах та пур асапран, пур хурлăх айĕнчен чăваш ятне çĕртмесĕр ку тарана çитернĕ. Терт хушшинче, ют халăх айĕнче чăваш чĕлхи çухалман. Ĕмĕрсем иртсе пынă. Чăваш шăппăн калаçнă. Чăваш чĕлхине пур тавраран туланă. Вăл çавах та халь те чĕрĕ, халь те сывă. Пур мăшкăла пăхмасăр – халь те сывă. Сывă вăл! Сывă пултăр малалла та! Çак ĕç – чăваш малашне хăй чĕлхипе аслати алтса çиçĕм çиçтерессине палăртать. Çак ĕç пире шанчăк парать. Шанатпăр. Вăхăт çитĕ! Шанчăк пуррисем – телейлĕ.

Мăшкăл айĕнчен чĕрĕ тухнă чĕлхе тĕнчере çухалмĕ. Ку таранччен чăваш сăмахĕ илтĕнмен, – халĕ чăваш юрри илтĕнĕ; чăваш сăвви, чăваш сăмахĕ Атăл хумĕ пек, вăрман сасси пек, кĕсле сасси ырăнне пулĕ. Чăваш чĕлхи тимĕр татĕ, çивĕч пулĕ.

Вăхăт çитĕ! Вăхăт çитĕ!

**10. Ыйту (ĕç).**

*Театр, сцена, артист, чун, телей, тивĕç, пурнăç, шăпа, илем* сăмахсемпе усă курса 1-2 çавраллă сăвă çырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2021-мĕш çул***

***9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш ĕçсене пурнăçлăр:

*Паян ялта чиркӳ праçникне тăваççĕ иккен. Сĕтел çинче ĕçме-çиме туллиех. Кĕреке пуçĕнче кăмăлллă пит-куçлă кил хуçи ларать. Вăл пĕринпе те тепринпе уççăн калаçса хăнисене пăхать. Тăпăлкка кĕлеткеллĕ кил хуçи хĕрарăмĕ сĕтел çине кукăль пыра-пыра лартать. Кăмака кукринче какай шарккăвĕ вĕренипе пӳртре техĕмлĕ шăршă сарăлнă.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă сăмаха (сăмахсене) тупса пуçламăш формăра çырăр, вырăсла тӳркилĕвне кăтартăр.

**Хурав.**

Чиркӳ (церковь), праçник (праздник), сĕтел (стол), хуçа (хозяин), шаркку (жаркое).

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстра евĕрлев сăмахĕнчен пулăннă иккĕмĕшле сăмаха (сăмахсене) тупăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

Тăпăлкка. Паллă ячĕ пулать.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстри хутлă предложение (хутлă предложенисене) çырса илĕр, тĕсне тата пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре палăртăр.

**Хурав.**

*Кăмака кукринче какай шарккăвĕ вĕренипе пӳртре техĕмлĕ шăршă сарăлнă.* Ку пăхăнуллă хутлă предложени, пайĕсене çыхăнтаракан хатĕр – *-пе* аффикс.

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстри кӳртĕм сăмаха (сăмахсене) тупса çырăр, чарăну палли лартас уйрăмлăха ăнлантарăр.

**Хурав.**

Кӳртĕм сăмах – *иккен*. Сказуемăй хыççăн унпа юнашар вырнаçнă, çавăнпа запятойпа уйăрман.

**5. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах çырăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр:

1) Н.И. Ашмарин словарĕн чăвашла ячĕ мĕнле? Пĕрремĕш сас паллине илĕр.

2) *Ывăн* глаголăн синонимне тупăр та пуçламăш сас паллине çырăр.

3) Чĕлхери мĕн пур сăмах йышне тĕпчесе вĕрентекен пай, ун пĕрремĕш саспаллийĕ.

4) Хусанта йĕркеленнĕ пĕрремĕш чăваш театрĕ лартнă пĕрремĕш спектакль ячĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр.

5) Н.И. Ашмарин чăваш чĕлхинчи хăш пуплев пайне питĕ тĕплĕн те туллин тишкернĕ? Çав пуплев пайĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр.

**Хурав.**

ЧĔЛХЕ (чĕлхе):

1) Чăваш сăмахĕсен кĕнеки – **Ч**

2) Ĕшен – **Ĕ**

3) Лексикологи – **Л**

4) Хăв пурăнас тенĕ пек ан пурăн – **Х**

5) Евĕрлев сăмахĕ – **Е**

**6. Ыйту.**

Сăнарлă шухăш аталанăвне çак мелсемпе йĕркелени хăш литература жанрĕнче тĕл пулать?

*Пусăрăнчăк шухăш-туйăм, салху кĕвĕ-çемĕ.*

Çав жанрăн пĕрремĕш сас паллийĕпе пуçланакан тепĕр литература терминĕ аса илĕр, пĕлтерĕшне ăнлантарса çырăр.

**Хурав.**

Элеги жанрĕнче.

Экспромт, эпиграф, эпизод, эпилог, эпиграмма, эпитафи, этюд, эпифора т.ыт.те.

**7. Ыйту (ĕç).**

Çак сăнлăхсем хăш хайлава кăшăлласа тăраççĕ? Хайлав ятне, жанрне тата авторне палăртăр.

*Революци, чăваш ялĕ, икĕ йĕкĕт, тăвата юмах.*

**Хурав.**

Мĕтри Юманăн «Пӳлĕх йăмри», жанрĕ – новелла.

**8. Ыйту (ĕç).**

Произведени ятĕнче тĕсе палăртакан сăмахлă проза тата драма хайлавĕсене аса илĕр, 5-рен кая мар çырăр, авторне те палăртăр.

**Хурав.**

Ачасен хуравĕнче тĕл пулма пултаракан хайлав ячĕсем:

А. Артемьев «Симĕс ылтăн», Çемен Элкер «Хурапа шурă», Илпек Микулайĕ «Хура çăкăр», Ю. Скворцов «Хĕрлĕ мăкăнь», Ухсай Яккăвĕ «Хура элчел», А. Емелья-

нов «Хура кăрăç», Н. Петровская «Шурă лили», Н. Петровская «Хура ангел», Юхма Мишши «Кăвак çĕмрен» т.ыт.те.

**9. Ыйту (ĕç).**

Текста чăвашла куçарăр:

*Тянется и тянется бесконечная нить воспоминаний...*

*Легок только вот этот прохладный лесной воздух, да и то дышать им почему-то трудно.*

*Жизнь – слово тяжелое.*

*Начнет разматываться клубок воспоминаний – и не остановишь его потом.*

*...Человек триста собралось их в Канаше – хрупких молоденьких девчонок и повзрослевших невеселых девушек. Они тоже едут на фронт, на фронт трудовой. Разбили их на бригады по тридцать человек, бригадиров выбрали из них же и повезли в город Е.*

*Сначала рыли блиндажи. Потом глубокие рвы. Работа неотложная, гнетущая и грязная. Не женское это дело – в два дня выкопать широченную глубокую яму.*

*В декабре ударили трескучие морозы. Дул промозглый ветер, то сухой, то влажный, он пробирал до костей, обжигал лицо, шею, шатал из стороны в сторону. Мела ледяная поземка, было холодно и голодно. И ходили девушки на студеном ветру бочком да рядком. Чтобы разогреться, сжимали пальцы в кулак, оставляя торчать в воздухе пустые варежки.*

**Хурав.**

Шухăш çăмхи сӳтĕлме тытăнсан – тытса та чараймăн.

Аса килет тата Укахви хăй ялтан окоп чавма тухса кайни те...

Канаша çитнĕ çĕре Укахви, Хĕветли пек хĕрсем пĕр виç çĕр çынна яхăн пухăнчĕç.

Е. хули çывăхне илсе кайрĕç вĕсене... Çитсенех бригадăн-бригадăн уйăрчĕç. Кашни бригадăра – вăтăршар хĕр. Бригадирĕсем те хăйсем хушшинченех.

Блиндажсем, танксене чармалли окопсем чавтарчĕç вĕсене. Кун пек окопа тăваттăн-пиллĕкĕн ик-виçшер кун чавма тиветчĕ, йывăрччĕ ĕç.

Чи йывăрри вара раштав, кăрлач сиввисем çитсен пуçланчĕ.

Пуринчен ытла çамрăк шăм-шаксене сивĕ хуçрĕ. Çил тумтир витĕр, ӳт-тир витĕр кастарса шăмăсенех çитсе кăтăклать, сулăнтарса ярать; çĕр çумĕпе, вирт кайнă пек, сăлпăран кустарать. Пите кăшт çиле хирĕç тытсанах тăм илсе ярать, çул çинче те хăяккăн çеç, минутсерен çил енне çурăмпа çаврăна-çаврăна утатăн. Алла алса ăшĕнчех чăмăртаса тытатăн та – алса пӳрнескисем пушăллах сулланса пыраççĕ.

**10. Ыйту (ĕç).**

*Ахальтен мар халăхра «Пилĕкне хытă çых, ăсна хытă тыт», – тесе калаççĕ* каларăшпа вĕçленекен сочинени-шухăшлав çырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2021-мĕш çул***

***10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш ĕçсене пурнăçлăр:

*Автобус Çирĕклĕхе çитнĕ çĕре тĕттĕм пулса ларчĕ. Анса юлтăм та васкаса килелле утрăм. Ял çумĕнчи раща-ран тăмана вăрăммăн сас пачĕ. Укăлча çывăхĕнче сасартăк хыçалтан такам яп! ыталаса илчĕ. Кучченеç чикнĕ чăматан çĕр çине шаплатсах ӳкрĕ. Хăраса кайнăскер, хăвăртрах кĕсьерен хунар кăларса çутатса пăхрăм. Кампур пулчĕ иккен! Алла çулать те çулать, хăйне пăхса ӳстернĕ çынна çул çине тухсах кĕтсе илме ăс çитернĕшĕн хĕпĕртет.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă сăмаха (сăмахсене) тупса пуçламăш формăра çырăр, вырăсла тӳркилĕвне кăтартăр.

**Хурав.**

Раща (роща), укăлча (околица), кучченеç (гостинец), чăматан (чемодан), хунар (фонарь).

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстра евĕрлев сăмахĕнчен пулăннă иккĕмĕшле сăмаха (сăмахсене) тупăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

Шаплатсах. Глагол (деепричасти) пулать.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстри хутлă предложение (хутлă предложенисене) çырса илĕр, тĕсне тата пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре палăртăр.

**Хурав.**

*Автобус Çирĕклĕхе çитнĕ çĕре тĕттĕм пулса ларчĕ.* Ку пăхăнуллă хутлă предложени, пайĕсене çыхăнтаракан хатĕр – *çĕре* хыççăмах.

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстри кӳртĕм сăмаха (сăмахсене) тупса çырăр, чарăну палли лартас уйрăмлăха ăнлантарăр.

**Хурав.**

Кӳртĕм сăмах – *иккен*. Сказуемăй хыççăн унпа юнашар вырнаçнă, çавăнпа запятойпа уйăрман.

**5. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах çырăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр:

1) Н.И. Ашмарин словарĕн чăвашла ячĕ мĕнле? Пĕрремĕш сас паллине илĕр.

2) *Ывăн* глаголăн синонимне тупăр та пуçламăш сас паллине çырăр.

3) Чĕлхери мĕн пур сăмах йышне тĕпчесе вĕрентекен пай, ун пĕрремĕш саспаллийĕ.

4) Хусанта йĕркеленнĕ пĕрремĕш чăваш театрĕ лартнă пĕрремĕш спектакль ячĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр.

5) Н.И. Ашмарин чăваш чĕлхинчи хăш пуплев пайне питĕ тĕплĕн те туллин тишкернĕ? Çав пуплев пайĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр.

**Хурав.**

ЧĔЛХЕ (чĕлхе):

1) Чăваш сăмахĕсен кĕнеки – **Ч**

2) Ĕшен – **Ĕ**

3) Лексикологи – **Л**

4) Хăв пурăнас тенĕ пек ан пурăн – **Х**

5) Евĕрлев сăмахĕ – **Е**

**6. Ыйту (ĕç).**

Сăнарлă шухăш аталанăвне çак мелсемпе йĕркелени хăш литература жанрĕнче тĕл пулать?

*1, 2, 4-мĕш йĕркесем рифмăланни, 3-мĕш састашсăр пулни, философиллĕ тĕшĕ мала тухни.*

Çав жанрăн пĕрремĕш сас паллийĕпе пуçланакан тепĕр литература терминĕ аса илĕр, пĕлтерĕшне ăнлантарса çырăр.

**Хурав.**

Рубаи жанрĕнче.

Ремарка, ретроспекци, ретрадаци, реквием, реминисценци, реализм, реплика т.ыт.те.

**7. Ыйту (ĕç).**

Çак сăнлăхсем хăш хайлава кăшăлласа тăраççĕ? Хайлав ятне, жанрне тата авторне палăртăр.

*Çул, вăрман, хĕвел, лĕпĕш, таптаннă чечек, куккук.*

**Хурав.**

«Çул çинче», жанрĕ – калав, авторĕ – Сергей Ялавин.

**8. Ыйту (ĕç).**

Произведени ятĕнче шута (хисепе) палăртакан сăмахлă проза тата драма хайлавĕсене аса илĕр, 3-рен кая мар çырăр, авторне те палăртăр.

**Хурав.**

Ачасен хуравĕнче тĕл пулма пултаракан хайлав ячĕсем:

Л. Агаков «Пĕрре, çуркунне…», Г. Тимофеев «Тăхăр ял», П. Осипов «Икĕ каччăн пĕр шухăш», В. Алакĕр «Икĕ

юлташ», «Виçĕ хĕр», Г. Харлампьев «Пĕр колхозра», Хв. Уяр «Пĕр сăмах», «Пĕр ача пурнăçĕпе вилĕмĕ», Илле Тăхти «Икĕ çыру», «Пĕр кĕтӳ кашкăр» т.ыт.те.

**9. Ыйту (ĕç).**

Текста чăвашла куçарăр:

*Тянется и тянется бесконечная нить воспоминаний...*

*Легок только вот этот прохладный лесной воздух, да и то дышать им почему-то трудно.*

*Жизнь – слово тяжелое.*

*Начнет разматываться клубок воспоминаний – и не остановишь его потом.*

*...Человек триста собралось их в Канаше – хрупких молоденьких девчонок и повзрослевших невеселых девушек. Они тоже едут на фронт, на фронт трудовой. Разбили их на бригады по тридцать человек, бригадиров выбрали из них же и повезли в город Е.*

*Сначала рыли блиндажи. Потом глубокие рвы. Работа неотложная, гнетущая и грязная. Не женское это дело – в два дня выкопать широченную глубокую яму.*

*В декабре ударили трескучие морозы. Дул промозглый ветер, то сухой, то влажный, он пробирал до костей, обжигал лицо, шею, шатал из стороны в сторону. Мела ледяная поземка, было холодно и голодно. И ходили девушки на студеном ветру бочком да рядком. Чтобы разогреться, сжимали пальцы в кулак, оставляя торчать в воздухе пустые варежки. Опускали озябшие руки в мерзлую воду, и с голых кистей сползали ледяные «перчатки».*

*С каждым днем тяжелели ломы и лопаты... Многие болели.*

**Хурав.**

*Шухăш çăмхи сӳтĕлме тытăнсан – тытса та чараймăн.*

*Аса килет тата Укахви хăй ялтан окоп чавма тухса кайни те...*

*Канаша çитнĕ çĕре Укахви, Хĕветли пек хĕрсем пĕр виç çĕр çынна яхăн пухăнчĕç.*

*Е. хули çывăхне илсе кайрĕç вĕсене... Çитсенех бригадăн-бригадăн уйăрчĕç. Кашни бригадăра – вăтăршар хĕр. Бригадирĕсем те хăйсем хушшинченех.*

*Блиндажсем, танксене чармалли окопсем чавтарчĕç вĕсене. Кун пек окопа тăваттăн-пиллĕкĕн ик-виçшер кун чавма тиветчĕ, йывăрччĕ ĕç.*

*Чи йывăрри вара раштав, кăрлач сиввисем çитсен пуçланчĕ.*

*Пуринчен ытла çамрăк шăм-шаксене сивĕ хуçрĕ. Çил тумтир витĕр, ӳт-тир витĕр кастарса шăмăсенех çитсе кăтăклать, сулăнтарса ярать; çĕр çумĕпе, вирт кайнă пек, сăлпăран кустарать. Пите кăшт çиле хирĕç тытсанах тăм илсе ярать, çул çинче те хăяккăн çеç, минутсерен çил енне çурăмпа çаврăна-çаврăна утатăн. Алла алса ăшĕнчех чăмăртаса тытатăн та – алса пӳрнескисем пушăллах сулланса пыраççĕ. Тăм илтерсе янă аллисене хĕрсем сивĕ шыва чикеççĕ те, çара алăранах пăр «перчетки» шăнкăлт! хывăнса ӳкет.*

*Кунсерен лум-кĕреçе йывăрланса пырать алăра, хĕрсем чирлеççĕ...*

**10. Ыйту (ĕç).**

*Ахальтен мар халăхра «Пилĕкне хытă çых, ăсна хытă тыт», – тесе калаççĕ* каларăшпа вĕçленекен сочинени-шухăшлав çырăр.

***Пӗтӗм тӗнчере иртекен***
***«Чăваш чӗлхи – тăван чӗлхе» олимпиада***
***2021-мӗш çул***

***11-мӗш класс (чăваш шкулӗ)***
***Ыйтусемпе ӗçсем, хуравсем***

Текста вулăр та 1-мӗш, 2-мӗш, 3-мӗш, 4-мӗш ӗçсене пурнăçлăр:

*Хваттер алăкӗн шăнкăравӗ вăрăммăн янăраса кайрӗ. Алăк умӗнче тăрхала та типшӗм питлӗ, пысăках мар чăматан йăтнă çамрăк çын тăрать. Ула карттусне пӗр вӗçӗм хуçлаткалать, çамка çинчи вăрăм çӳçне пӳрнисемпе якатанçи тăвать. Кӗтмен хăна хăй камне ӗнентерес тесе кӗсйинчен темле справка та кăларса кăтартрӗ. Карттус хуçи Петӗр ятлă иккен.*

**1. Ыйту (ӗç).**

Текстра вырăс чӗлхинчен калаçу урлă йышăннă сăмаха (сăмахсене) тупса пуçламăш формăра çырăр, вырăсла тӳркилӗвне кăтартăр.

**Хурав.**

Хваттер (квартира), чăматан (чемодан), карттус (картуз), хуçа (хозяин), Петӗр (Петр, Петя).

**2. Ыйту (ӗç).**

Текстра евӗрлев сăмахӗнчен пулăннă иккӗмӗшле сăмаха (сăмахсене) тупăр, мӗнле пуплев пайӗ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

*Шăнкăравӗ* – япала ячӗ пулать, *янăраса* – глагол (деепричасти) пулать.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстри хутлă предложение (хутлă предложенисене) çырса илĕр, тĕсне тата пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре палăртăр.

**Хурав.** *Кĕтмен хăна хăй камне ĕнентерес тесе кĕсйинчен темле справка та кăларса кăтартрĕ.* Ку пăхăнуллă хутлă предложени, пайĕсене çыхăнтаракан хатĕр – -*е* аффикс.

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстри кӳртĕм сăмаха (сăмахсене) тупса çырăр, чарăну палли лартас уйрăмлăха ăнлантарăр.

**Хурав.**

Кӳртĕм сăмах – *иккен*. Сказуемăй хыççăн унпа юнашар вырнаçнă, çавăнпа запятойпа уйăрман.

**5. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах çырăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр:

1) Н.И. Ашмарин словарĕн чăвашла ячĕ мĕнле? Пĕрремĕш сас паллине илĕр.

2) *Ывăн* глаголăн синонимне тупăр та пуçламăш сас паллине çырăр.

3) Чĕлхери мĕн пур сăмах йышне тĕпчесе вĕрентекен пай, ун пĕрремĕш саспаллийĕ.

4) Хусанта йĕркеленнĕ пĕрремĕш чăваш театрĕ лартнă пĕрремĕш спектакль ячĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр.

5) Н.И. Ашмарин чăваш чĕлхинчи хăш пуплев пайне питĕ тĕплĕн те туллин тишкернĕ? Çав пуплев пайĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр.

**Хурав.**

ЧĔЛХЕ (чĕлхе):

1) Чăваш сăмахĕсен кĕнеки – **Ч**

2) Ĕшен – **Ĕ**

3) Лексикологи – **Л**

4) Хăв пурăнас тенĕ пек ан пурăн – **Х**

5) Евĕрлев сăмахĕ – **Е**

**6. Ыйту.**

Сăнарлă шухăш аталанăвне çак мелсемпе йĕркелени хăш литература жанрĕнче тĕл пулать?

*Çĕкленӳлĕхпе паттăрлăх туйăмĕ, çирĕп виçеллĕ темп, сулăмлă кĕвĕлĕх.*

Çав жанрăн пĕрремĕш сас паллийĕпе пуçланакан тепĕр литература терминĕ аса илĕр, пĕлтерĕшне ăнлантарса çырăр.

**Хурав.**

Марш жанрĕнче.

Метафора, метоними, монолог, мыскара т.ыт.те.

**7. Ыйту (ĕç).**

Çак сăнлăхсем хăш хайлава кăшăлласа тăраççĕ? Хайлав ятне, жанрне тата авторне палăртăр.

*Документлă поэтика, Мăн кĕрӳ такмакĕ, чăваш халăх шăпишĕн çуннă икĕ гени.*

**Хурав.**

Ухсай Яккăвĕн «Хура элчел», жанрĕ – трагеди.

**8. Ыйту (ĕç).**

Произведени ятĕнче шута (хисепе) палăртакан сăмахлă проза тата драма хайлавĕсене аса илĕр, 3-рен кая мар çырăр, авторне те палăртăр.

**Хурав.**

Ачасен хуравĕнче пулма пултаракан хайлав ячĕсем:

Л. Агаков «Пĕрре, çуркунне…», Г. Тимофеев «Тăхăр ял», П. Осипов «Икĕ каччăн пĕр шухăш», Хв. Уяр «Пĕр сăмах», «Пĕр ача пурнăçĕпе вилĕмĕ», Илле Тăхти «Икĕ çыру», «Пĕр кĕтӳ кашкăр» т.ыт.те.

**9. Ыйту (ĕç).**

Текста чăвашла куçарăр:

*Тянется и тянется бесконечная нить воспоминаний...*

*Легок только вот этот прохладный лесной воздух, да и то дышать им почему-то трудно.*

*Жизнь – слово тяжелое.*

*Начнет разматываться клубок воспоминаний – и не остановишь его потом.*

*...Человек триста собралось их в Канаше – хрупких молоденьких девчонок и повзрослевших невеселых девушек. Они тоже едут на фронт, на фронт трудовой. Разбили их на бригады по тридцать человек, бригадиров выбрали из них же и повезли в город Е.*

*Сначала рыли блиндажи. Потом глубокие рвы. Работа неотложная, гнетущая и грязная. Не женское это дело – в два дня выкопать широченную глубокую яму.*

*В декабре ударили трескучие морозы. Дул промозглый ветер, то сухой, то влажный, он пробирал до костей, обжигал лицо, шею, шатал из стороны в сторону. Мела ледяная поземка, было холодно и голодно. И ходили девушки на студеном ветру бочком да рядком. Чтобы разогреться, сжимали пальцы в кулак, оставляя торчать в воздухе пустые варежки. Опускали озябшие руки в мерзлую воду, и с голых кистей сползали ледяные «перчатки».*

*С каждым днем тяжелели ломы и лопаты...*

*Многие болели.*

*Раньше работали днем, но после того, как попали под бомбежку, стали рыть ночью. Тогда же, в октябре, Угахви впервые услышала, как свищет бомба.*

**Хурав.**

Шухăш çăмхи сӳтĕлме тытăнсан – тытса та чараймăн.

Аса килет тата Укахви хăй ялтан окоп чавма тухса кайни те...

Канаша çитнĕ çĕре Укахви, Хĕветли пек хĕрсем пĕр виç çĕр çынна яхăн пухăнчĕç.

Е. хули çывăхне илсе кайрĕç вĕсене... Çитсенех бригадăн-бригадăн уйăрчĕç. Кашни бригадăра – вăтăршар хĕр. Бригадирĕсем те хăйсем хушшинченех.

Блиндажсем, танксене чармалли окопсем чавтарчĕç вĕсене. Кун пек окопа тăваттăн-пиллĕкĕн ик-виçшер кун чавма тиветчĕ, йывăрччĕ ĕç.

Чи йывăрри вара раштав, кăрлач сиввисем çитсен пуçланчĕ.

Пуринчен ытла çамрăк шăм-шаксене сивĕ хуçрĕ. Çил тумтир витĕр, ӳт-тир витĕр кастарса шăмăсенех çитсе кăтăклать, сулăнтарса ярать; çĕр çумĕпе, вирт кайнă пек, сăлпăран кустарать. Пите кăшт çиле хирĕç тытсанах тăм илсе ярать, çул çинче те хăяккăн çеç, минутсерен çил енне çурăмпа çаврăна-çаврăна утатăн. Алла алса ăшĕнчех чăмăртаса тытатăн та – алса пӳрнескисем пушăллах сулланса пыраççĕ. Тăм илтерсе янă аллисене хĕрсем сивĕ шыва чикеççĕ те, çара алăранах пăр «перчетки» шăнкăлт! хывăнса ӳкет.

Кунсерен лум-кĕреçе йывăрланса пырать алăра, хĕрсем чирлеççĕ, вĕсем вырăнне урăххисем килеççĕ...

Вĕсем малтан кăнтăрла ĕçлетчĕç пулсан, кайран ытларах çĕрле ĕçлеме тытăнчĕç. Ку вăл пĕр-икĕ хут тăшман самолечĕсем тылах вĕçсе кĕрсе бомба пăрахса хăварнă хыççăн пуçланчĕ. Укахви малтанхи хут юпа уйăхĕнче илтрĕ бомба шăхăрса аннине.

**10. Ыйту (ĕç).**

*Ахальтен мар халăхра «Пилĕкне хытă çых, ăсна хытă тыт», – тесе калаççĕ* каларăшпа вĕçленекен сочинени-шухăшлав çырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2022-мĕш çул***

***9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Чĕлхе терминĕсене вырăсла куçарса çырăр:

тӳнтер словарь, çармăс чĕлхи, хурăнташ чĕлхе, официаллă ĕç стилĕ, шут хисеп ячĕ.

**Хурав.**

тӳнтер словарь – обратный словарь
çармăс чĕлхи – марийский язык
хурăнташ чĕлхе – родственный язык
официаллă ĕç стилĕ – официально-деловой стиль
шут хисеп ячĕ – количественное числительное

**2. Ыйту (ĕç).**

Сăвăра миçе омоним? Вĕсене çырса илĕр те мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр.

Шур чечеклĕ шурă май
Васкаварлăн çитнĕ май
Савăнмашкăн тĕрлĕ май
Халĕ ĕнтĕ пит нумай.

**Хурав.**

Виçĕ омоним: май – япала ячĕ, май – хыç сăмах, май – япала ячĕ.

**3. Ыйту (ĕç).**

Чăваш чĕлхине тĕпченĕ ют çĕршыв çыннисен хушамачĕсене çырăр.

**Хурав.**

Ачасен хуравĕнче тĕл пулма пултаракан ют çĕршыв тĕпчевçисен хушамачĕсем:

Й. Бенцинг, Й. Буденц, З. Гомбоц, Г.Ф. Миллер, Н. Поппе, О. Прицак, Х. Паасонен, В. Шотт, В. Радлов, Г. Рамстедт, Ф. Страленберг.

**4. Ыйту.**

Хăшĕ хутсăр предложени?

1) Мĕн акатăн, çав шăтать.

2) Аслати кĕмсĕртетнĕ сасă илтĕнсе кайрĕ.

3) Эпир çӳлевĕç килнĕ йĕрпе вăрмана кĕтĕмĕр.

4) Кам хĕвне пытарнă чул, унпалан эс сыхă пул.

5) Александров, çурри таран юр кĕрчĕсемпе витĕннĕ йăмрасем патĕнчи кĕпер урлă каçса, тăйлăк-тайлăк ларакан мунчасем çумĕпе иртрĕ те Анаткаса тухрĕ.

6) Машинăра тепĕр икĕ çын лармалăх вырăн пур.

7) Ĕç тирпейлĕ пулни пурне те килĕшет.

8) Шăл пур чух аш çисе юл.

**Хурав.**

Хутсăр предложени:

5) Александров, çурри таран юр кĕрчĕсемпе витĕннĕ йăмрасем патĕнчи кĕпер урлă каçса, тăйлăк-тайлăк ларакан мунчасем çумĕпе иртрĕ те Анаткаса тухрĕ.

**5. Ыйту (ĕç).**

Ку текстра чăваш чĕлхинчи мĕнле закон пирки сăмах пырать?

*Çак закон тăрăх, сăмахри тата сыпăкри уçă сасăсемпе хупă сасăсем хытăлăхпа çемçелĕх енчен килĕшсе тăраççĕ. Тĕслĕхрен, сăмах сыпăкĕнчи сасăсем е пурте хыттисем, е пурте çемçисем пулаççĕ. Çавăнпа та хытă сасăсенчен çеç тăракан сăмаха хытă сăмах, çемçе*

*сасăсенчен тăраканнине çемçе сăмах теççĕ. Çак закона пула аффикссем те сăмахсем çумне хытăлăхпа çемçелĕх тĕлĕшĕнчен килĕшсе хушăнаççĕ.*

**Хурав.** Ку текстра чăваш чĕлхинчи сингармонизм законĕ пирки сăмах пырать (урăхла ăна сасăсен юнашарлăх килĕшĕвĕ теççĕ).

**6. Ыйту (ĕç).**

Паллă поэтăмăрăн сăвă çаврине онлайн куçарупа усă курса ют чĕлхене куçарнă хыççăн каялла чăвашла куçарсан çапла тĕслĕх пулать:

*Çĕршер çулсем иртеççĕ,*
*Хал хушса этем чунне.*
*Çыруçăсем шыраççĕ*
*Чăваш енĕн ĕмĕрне.*
*Малалла эпир пăхатпăр,*
*Хыçала та халь сăнатпăр,*
*Ман шутпа, эпир пурнатпăр –*
*Халĕ те, ыран, ялан.*

Онлайн куçарура паллă поэтăмăрăн мĕнле сăвă йĕркисене усă курнă-ши? Çав сакăр йĕркеллĕ çаврана аса илсе çырăр.

**Хурав.**

Ĕмĕрсем иртсе пыраççĕ
Ӳстерсе ăс-хал мулне.
Кĕнекеçĕсем шыраççĕ
Чăвашсен кунне-çулне.
Тинкеретпĕр малалла,
Кайрине те халь куратпăр...
Манăн шухăшăмпала –
Эпир пулнă, пур, пулатпăр.

**7. Ыйту (ĕç).**

6-мĕш ыйту хуравĕнчи сăвă йĕркисен авторĕ кам?

**Хурав.**

Петĕр Хусанкай.

**8. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах тупăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр, хуравĕсене çырăр.

1) Николай Шелепин пĕр хайлавĕнче Турă сăмах каласа çĕртен çынна пултарнă хыççăн çĕр çине мĕн тухса выртать? Çав сăмахăн пĕрремĕш сас паллине илĕр.

2) Паласахун Юсупĕ кĕнекинчи пĕлӳ мĕнле? Ăна пĕлме поэма ятне аса илĕр, иккĕмĕш сас паллине çырăр.

3) Хире-хирĕçле шухăшсен, кăмăл-туйăмпа тĕллевсен, ĕçсемпе çынсен çивĕч тĕркешĕвне, кĕрешĕвне сăнарлă çутатса панине мĕнле терминпа палăртаççĕ? Пĕрремĕш сас паллине илĕр.

4) А. Алка «Июнĕн 22-мĕшĕ» хайлавне мĕнле жанрпа çырнă? Жанр ятĕнче икĕ хут тĕл пулкан сас паллине çырăр.

5) Ухсай Яккăвĕн «Мана ________ сăнарлă теççĕ» йĕркинче мĕнле сăмах сиксе юлнă? Çав сăмахăн юлашки сас паллийĕ епле?

**Хурав.**

ÇĂКĂР (çăкăр):

1) Çĕлен – **Ç**

2) Хăтлă – **Ă**

3) Конфликт – **К**

4) Сăвă – **Ă**

5) Тутар – **Р**

**9. Ыйту (ĕç).**

8-мĕш ыйтура тупнă сăмах илемлĕ хайлав ячĕсенче те тĕл пулать. Пысăк калăпăшлă хайлав тĕслĕхĕсене икĕрен кая мар çырăр, авторĕсене те палăртăр.

**Хурав.**

Илпек Микулайĕ «Хура çăкăр», Ева Лисина «Çăкăр чĕлли».

**10. Ыйту (ĕç).**

Константин Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн сцени çинче «Нарспи» спектаклеултă хут лартнă, куракансем патне ăна пĕрремĕш хут çитернĕренпе кăçал 100 çул çитрĕ.

Эсир артист пулнă пулсан сцена çинче хайлаври хăш сăнара вылянă пулăттăр? Мĕншĕн? Хăвăр шухăшăрсене сочинени евĕр çырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2022-мĕш çул***

***10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш ĕçсене пурнăçлăр:

*Ĕçчен калайçăн аллинчи мăлатукăн кĕвви кăвак çутăллах пуçланатчĕ те, мĕн каç пуличченех янăратчĕ* (В. Ахун).

**1. Ыйту.**

Кам (е мĕн) вăл калайçă?

**Хурав.** Калайçă вăл – шăвăçпа ĕçлеме пĕлекен çын (урăхла каласан, шăвăç ăсти е шăвăççă).

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстра орфографи е пунктуаци йăнăшĕ пур-и? Пур пулсан, правилăна ăнлантарăр.

**Хурав.**

Текстра пунктуаци йăнăшĕ пур.

Правило: *пуçланатчĕ, янăратчĕ* пĕр йышши членсем (пĕр йышши глаголсем е сказуемăйсем) *те* союзпа çыхăннă, çавăнпа вĕсем хушшине запятой лартмалла мар.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстра вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă сăмаха (сăмахсене) тупăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

*Мăлатук*, япала ячĕ пулать.

**4. Ыйту (ĕç).**

Предложени хутсăр-и, хутлă-и? Хутлă пулсан, тĕсне тата пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре палăртăр.

**Хурав.** Предложени – хутлă; пăхăнуллă хутлă предложени, çыхăну хатĕрĕ – -*иччен* аффикс.

**5. Ыйту (ĕç).** Ку текстра чăваш чĕлхинчи мĕнле закон пирки сăмах пырать?

*Çак закон тăрăх, сăмахри тата сыпăкри уçă сасăсемпе хупă сасăсем хытăлăхпа çемçелĕх енчен килĕшсе тăраççĕ. Тĕслĕхрен, сăмах сыпăкĕнчи сасăсем е пурте хыттисем, е пурте çемçисем пулаççĕ. Çавăнпа та хытă сасăсенчен çеç тăракан сăмаха хытă сăмах, çемçе сасăсенчен тăраканнине çемçе сăмах теççĕ. Çак закона пула аффикссем те сăмахсем çумне хытăлăхпа çемçелĕх тĕлĕшĕнчен килĕшсе хушăнаççĕ.*

**Хурав.** Ку текстра чăваш чĕлхинчи сингармонизм законĕ пирки сăмах пырать (урăхла ăна сасăсен юнашарлăх килĕшĕвĕ теççĕ).

**6. Ыйту (ĕç).**

Мĕн вăл реминисценци?

**Хурав.**

Автор пĕр-пĕр хайлава хăй маларах çырнă е урăх автор çырнă произведенирен илнĕ сăнар, сăмах çаврăнăшĕ, сăвă йĕрки е проза сыпăкĕ; евĕрлесе çырни.

**7. Ыйту (ĕç).**

Петĕр Яккусен çырнă «Юман хуравĕнчи» йĕркесене реминисценцилесе сăвă шăрçалăр:

*Чăваш хули шур Шупашкар,*
*Эс – халăхăн пуласлăхĕ;*
*Ачу-пăчу сан чăваш мар:*
*Салхуллă ман хаваслăхăм.*

*Лере – уйра – çаплах ӳсет*
*Лаштра юман – ăсчахăмçăм.*
*– Юман! Чăваш хăçан пĕтет?*
*– Тĕнче пĕтсессĕн, – тавăрчĕ.*

**8. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах тупăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр, хуравĕсене çырăр.

1) «Чăваш халăхĕ малалла кайĕ-ши, каймĕ-ши?» ĕçĕн авторĕ. Ун хушамачĕн виççĕмĕш сас паллине илĕр.

2) С. Ялавинăн çул мотивне сăнарланă хайлав ятне аса илĕр, вĕçĕнчи сас паллине çырăр.

3) «… пĕркенчĕк», «… элчел», «… кăрăç» хайлав ячĕсенче мĕнле сăмах сиксе юлнă? Çав сăмахăн пĕрремĕш сас паллине илĕр.

4) Çак сăмахсене кам каланă? *«Хăвăртан малтан йывăр тертпе çул хывнă тăванăрсене сума сăвăр. Пĕр-пĕрне хисеплĕр, туслă пурăнăр. Мал ĕмĕт ячĕпе, ăсталăх ячĕпе сиксе тавлашăр, тупăшăр, ăмăртăр, çухаран çавăрса тытасса çитĕр, анчах урăр çĕре лексенех пĕрне-пĕри ал парăр. Ан манăр, эсир пĕр аслă самана çыннисем, пĕр халăх йышĕ...»* Çыравçă ячĕн иккĕмĕш сас паллине илĕр.

5) «Çуйлану» термина вырăсла куçарăр, малтанхи сас паллине çырăр.

**Хурав.**

МЕХЕЛ (мехел):

1) Гурий Комиссаров – **М**
2) «Çул çинче» – **Е**
3) Хура – **Х**
4) Петĕр Хусанкай – **Е**
5) Лирика – **Л**

**9. Ыйту (ĕç).**

8-мĕш ыйтура тупнă сăмах мĕне пĕлтернине ăнлантарăр. Çак сăмах пĕлтерĕшĕ пирки шухăша ӳкни литература хайлавĕнче те тĕл пулать. Авторĕ кам-ши?

**Хурав.**

Мехел – философиллĕ ăнлав. Çутçанталăкра кашни пулăмăн, япалан хăйĕн вăхăчĕ пур тени. Авторĕ – Петĕр Хусанкай.

**10. Ыйту (ĕç).**

Константин Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн сцени çинче «Нарспи» спектакле ултă хут лартнă, куракансем патне ăна пĕрремĕш хут çитернĕренпе кăçал 100 çул çитрĕ.

Эсир артист пулнă пулсан сцена çинче хайлаври хăш сăнара вылянă пулăттăр? Мĕншĕн? Хăвăр шухăшăрсене сочинени евĕр çырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере ирттекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2022-мĕш çул***

***11-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш ĕçсене пурнăçлăр:

*Ĕçчен калайçăн аллинчи мăлатукăн кĕвви кăвак çутăллах пуçланатчĕ те, мĕн каç пуличченех янăратчĕ* (В. Ахун).

**1. Ыйту (ĕç).**

Кам (е мĕн) вăл калайçă?

**Хурав.** Калайçă вăл – шăвăçпа ĕçлеме пĕлекен çын (урăхла каласан, шăвăç ăсти е шăвăççă).

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстра орфографи е пунктуаци йăнăшĕ пур-и? Пур пулсан, правилăна ăнлантарăр.

**Хурав.**

Текстра пунктуаци йăнăшĕ пур.

Правило: *пуçланатчĕ, янăратчĕ* пĕр йышши членсем (пĕр йышши сказуемăйсем) *те* союзпа çыхăннă, çавăнпа вĕсем хушшине запятой лартмалла мар.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстра евĕрлев сăмахĕнчен пулăннă иккĕмĕшле сăмаха (сăмахсене) тупăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

*Янăратчĕ*, глагол пулать.

**4. Ыйту (ĕç).**

Предложени хутсăр-и, хутлă-и? Хутлă пулсан, тĕсне тата пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре палăртăр.

**Хурав.** Предложени – хутлă; пăхăнуллă хутлă предложени, çыхăну хатĕрĕ – -*иччен* аффикс.

**5. Ыйту (ĕç).** Ку текстра чăваш чĕлхинчи мĕнле закон пирки сăмах пырать?

*Çак закон тăрăх, сăмахри тата сыпăкри уçă сасăсемпе хупă сасăсем хытăлăхпа çемçелĕх енчен килĕшсе тăраççĕ. Тĕслĕхрен, сăмах сыпăкĕнчи сасăсем е пурте хыттисем, е пурте çемçисем пулаççĕ. Çавăнпа та хытă сасăсенчен çеç тăракан сăмаха хытă сăмах, çемçе сасăсенчен тăраканнине çемçе сăмах теççĕ. Çак закона пула аффикссем те сăмахсем çумне хытăлăхпа çемçелĕх тĕлĕшĕнчен килĕшсе хушăнаççĕ.*

**Хурав.** Ку текстра чăваш чĕлхинчи сингармонизм законĕ пирки сăмах пырать (урăхла ăна сасăсен юнашарлăх килĕшĕвĕ теççĕ).

**6. Ыйту.**

Мĕн вăл реминисценци?

**Хурав.**

Автор пĕр-пĕр хайлава хăй маларах çырнă е урăх автор çырнă произведенирен илнĕ сăнар, сăмах çаврăнăшĕ, сăвă йĕрки е проза сыпăкĕ; евĕрлесе çырни.

**7. Ыйту (ĕç).**

Петĕр Яккусен çырнă «Юман хуравĕнчи» йĕркесене реминисценцилесе сăвă шăрçалăр:

*Чăваш хули шур Шупашкар,*
*Эс – халăхăн пуласлăхĕ;*
*Ачу-пăчу сан чăваш мар:*
*Салхуллă ман хаваслăхăм.*

*Лере – уйра – çаплах ӳсет*
*Лаштра юман – ăсчахăмçăм.*
*– Юман! Чăваш хăçан пĕтет?*
*– Тĕнче пĕтсессĕн, – тавăрчĕ.*

**8. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах тупăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр, хуравĕсене çырăр.

1) Илемлĕ хайлав çинчен каласа ăнлантарнине, унăн шухăшне, содержанине, принципĕсене уçса панине литература пĕлĕвĕнче мĕнле терминпа палăртаççĕ? Пĕрремĕш сас паллине илĕр.

2) Ухсай Яккăвĕн тĕсе палăртакан сăмахлă трагеди ятне аса илĕр. Хайлав ячĕ вĕçĕнчи сас паллине çырăр.

3) Лаврентий Таллеровăн икĕ сăмахран тăракан хайлав ятне аса илĕр. Хайлав ятĕнчи сăмахсем пĕр пек сас паллирен пуçланаççĕ. Çав сăмахсен пĕрремĕш сас паллине илĕр.

4) Публицистикăллă прозăн чи пысăк ăстисенчен пĕри, район пуçлăхĕнче, республикăри культура министрĕнче ĕçленĕ çыравçă хушамачĕ, ун пĕрремĕш сас паллине илĕр.

5) «Стопа» термина чăвашла куçарăр, малтанхи сас паллине çырăр.

**Хурав.**

ИЛПЕК (илпек):

1) Интерпретаци – **И**
2) «Хура элчел» – **Л**
3) «Пĕчĕкçеç путене» – **П**
4) Емельянов – **Е**
5) Карт – **К**

**9. Ыйту (ĕç).**

8-мĕш ыйтура тупнă сăмахăн пĕлтерĕшĕсем чылай. Вĕсене пилĕк сăмахран кая мар çырăр.

**Хурав.**

Илпек сăмахăн пĕлтерĕшĕсем – арçын ячĕ, псевдоним, тулăх, тухăçлă, ытлă-çитлĕ, нумай т.ыт.те.

**10. Ыйту (ĕç).**

Константин Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн сцени çинче «Нарспи» спектакле ултă хут лартнă, куракансем патне ăна пĕрремĕш хут çитернĕренпе кăçал 100 çул çитрĕ.

Эсир артист пулнă пулсан сцена çинче хайлаври хăш сăнара вылянă пулăттăр? Мĕншĕн? Хăвăр шухăшăрсене сочинени евĕр çырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2023-мĕш çул***

***9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.

*Пухусем урттерекен пӳлĕме халăх йышлă пухăннă. Мал енне йĕтĕн сухаллă ватăсем ларса тухнă. Вĕсем сăпайлăн пăшăлтатса калаçни аякран пит килĕшӳллĕ курăнать.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш сăмахра (е хăш сăмахсенче) сасăсен шучĕ саспаллисен шутĕнчен нумайрах? Çав сăмаха (сăмахсене) çырăр.

**Хурав.**

Аякран.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстри хутлă предложение (хутлă предложенисене) çырса илĕр, тĕсне тата пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре палăртăр.

**Хурав.**

*Вĕсем сăпайлăн пăшăлтатса калаçни аякран пит килĕшӳллĕ курăнать.* Ку пăхăнуллă хутлă предложени, пайĕсене çыхăнтаракан хатĕр – -*и* аффикс.

**3. Ыйту (ĕç).**

Пĕрремĕш юпари чĕлхе терминĕсене тата иккĕмĕш юпари тĕслĕхсене вулăр.

| | |
|---|---|
| 1. Антонимсем | А. ача-пăча, выльăх-чĕрлĕх |
| 2. Синонимсем | Ă. япала ячĕ, паллă ячĕ, глагол |
| 3. Фразеологизм | Б. аван, лайăх |
| 4. Мăшăр сăмахсем | В. шатăрт, кăлтăрт |
| 5. Омонимсем | Г. усал, ырă |
| 6. Пуплев пайĕсем | Д. сехре хăпрĕ |
| 7. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем | Е. хăлха (çын хăлхи, витре хăлхи, çĕлĕк хăлхи) |
| 8. Евĕрлев сăмахĕсем | Ё. тутар, пушкăрт, чăваш |
| 9. Пайăр ятсем | Ж. пыр (глагол), пыр (япала ячĕ) |
| 10. Хурăнташ чĕлхесем | З. Атăл, Шупашкар |

Терминсене тата тĕслĕхсене шайлаштарăр. Хăш термин патне хăш тĕслĕх килĕшӳллĕ? Хуравсене таблицăра пысăк сас паллипе кăтартса çырăр.

**Хурав.**

| **Терминсем** | **Сас палли** |
|---|---|
| 1. Антонимсем | Г |
| 2. Синонимсем | Б |
| 3. Фразеологизм | Д |
| 4. Мăшăр сăмахсем | А |
| 5. Омонимсем | Ж |
| 6. Пуплев пайĕсем | Ă |
| 7. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем | Е |
| 8. Евĕрлев сăмахĕсем | В |
| 9. Пайăр ятсем | З |
| 10. Хурăнташ чĕлхесем | Ё |

**4. Ыйту (ěç).**

Алфавитсăр пуçне, саспаллисене палăртмалли тепĕр çыру системи пур – Морзе азбуки. Çав азбукăпа килĕшӳллĕн, кашни саспаллин ятарлă код пур, ăна «тире» е «точка» символсенчен йĕркелеççĕ, саспаллисене палăртма кĕске е вăрăм сигналсемпе усă кураççĕ. Таблицăри Морзе азбукипе паллашăр та таблица хыççăн çырса панă ыйтăва хуравлăр.

| Саспалли | Морзе азбукинчи код |
|---|---|
| А | •— |
| Б | —••• |
| В | •— — |
| Г | — —• |
| Д | —•• |
| Е, Ё | • |
| Ж | •••— |
| З | — —•• |
| И | •• |
| Й | •— — — |
| К | —•— |
| Л | •—•• |
| М | — — |
| Н | —• |
| О | — — — |
| П | •— —• |
| Р | •—• |
| С | ••• |
| Т | — |
| У | ••— |
| Ф | ••—• |
| Х | •••• |
| Ц | —•—• |

| | |
|---|---|
| Ч | — — —• |
| Ш | — — — — |
| Щ | — —•— |
| Ъ | — —•— — |
| Ы | —•— — |
| Ь | —••— |
| Э | ••—•• |
| Ю | ••— — |
| Я | •—•— |
| . | •••••• |
| , | •—•—•— |

Морзе азбукипе усӑ курса ҫырнӑ ваттисен сӑмахне вулӑр та ӑна чӑваш алфавитӗнчи сас паллисемпе ҫырса парӑр:

•— •—•• •— — •— •—• •— •—•• •— —• —• •• _ •— ••• •— •—•• •— _ —••— •—•—•— — — —• ••— —• •— — •— •—• •— •—•• •— —• —• •• _ •— ••• •— •—•• — — •— ••• _ —••— ••••••

**Хурав.**

Ал вараланни тасалать, чун вараланни тасалмасть.

**5. Ыйту (ӗҫ).**

*Пуҫ, алӑ, чӗлхе, кӑкӑр, хырӑм, шӑл, чӗре, ҫӑвар, ура, хӑлха* – ҫак сӑмахсемпе кашнинпе икшер фразеологизм ҫырӑр.

**Хурав.**

| **Ӳт-пӳ пайӗ** | **Ачасен хуравӗсенче тӗл пулма пултаракан фразеологизм тӗслӗхӗсем** |
|---|---|
| пуҫ | пуҫ ҫине хӑпарса лар, пуҫ ҫурӑлса тухать, пуҫа ҫухат, пуҫ ҫап т.ыт.те |
| алӑ | алӑ пырать, алла ил, алла ус, алла пар, алла вӗрент т.ыт.те |

| | |
|---|---|
| чĕлхе | пуклак чĕлхе, чĕлхе кĕçĕтет, чĕлхе çаврăнмасть, чĕлхе çыхланать т.ыт.те |
| кăкăр | кăкăр çап, кăкăртан юлашки сывлăш тухиччен т.ыт.те |
| хырăм | хырăм хыр тăрне кайрĕ, хырăм тытса кул т.ыт.те |
| шăл | шăл хайра, шăл витмест, шăл çырт, шăл шакка, шăл йĕр т.ыт.те |
| чĕре | чĕрене тив, чĕрене уç, чĕрене хытар, чĕререн тух, чĕрене ыраттар, чĕрене çемçет, чĕрене ил, чĕрене çунтар, чĕрене çур, чĕре сикет т.ыт.те |
| çăвар | çăвар кар, çăвар уç, çăварне хупла, çăвара шыв сып, çăвар вылят т.ыт.те |
| ура | урараан ура иртмест, ура çине тăр, ура ярса пус, урараан ӳк т.ыт.те |
| хăлха | хăлхана чик, хăлхана кĕр т.ыт.те |

**6. Ыйту (ĕç).**

Çеçпĕл Мишши сăввинчи сиктерсе хăварнă сăмахсене тĕрĕс суйласа çырăр:

Кăвар … (*чĕлхе, чĕре*)! Кăвар … (*чĕлхеллĕ, чĕреллĕ, чунлă*)

Чăваш ... (*каччи, ачи, чĕлхи*), сассуна пар!

Тухсам кунта. Сана ... (*чĕнеççĕ, кĕтеççĕ, итлеççĕ*).

Килсем! … (*Иртсем, килсем, шансам*)! Эс пур, – çук мар.

**Хурав.**

Чĕре, чĕлхеллĕ, ачи, кĕтеççĕ, килсем.

**7. Ыйту.**

Кушлавăш уйĕсем çинчен халăха пĕлтернĕ поэт.

**Хурав.**

Çемен Элкер.

**8. Ыйту (ĕç).**
Сăн ӳкерчĕкре камсене паллатăр?



**Хурав.**
Митта Ваçлейĕ тата Петĕр Хусанкай.

**9. Ыйту (ĕç).**
Чăвашла куçарăр:
*Здравствуй, мама, возвратились мы не все…*
*Босиком бы пробежаться по росе!*
*Пол-Европы прошагали, полземли –*
*Этот день мы приближали как могли.*
**Хурав.**
*Ах, аннемĕр, таврăнайрĕç пурте мар…*
*Паттăрсен ятне ялан асра тытар.*
*Сăртсем урлă, шывсем урлă талпăнса,*
*Сан пата эпир çывхарнă ăнтăлса.*

**10. Ыйту (ĕç).**
«С» сас паллирен кăна пуçланакан сăмахсенчен хайлав çырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2023-мĕш çул***

***10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.

*Тул çутăлать. Хурăнвар ялĕ çине кĕçех хĕвел тĕрри ӳкрĕ, пӳрт тăррисем çийĕн илĕртӳллĕ тĕссемпе ташлама пуçларĕ. Тавралăх ерипен ыйхăран вăранса пырать. Алăк-хапха уçăлса хупăнни илтĕнет. Инçетре мотор кĕрлевĕ саланчĕ.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш сăмахра (е хăш сăмахсенче) сасăсен шучĕ саспаллисен шутĕнчен нумайрах? Çав сăмаха (сăмахсене) çырăр.

**Хурав.**

Ялĕ, ерипен.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстри хутлă предложение (хутлă предложенисене) çырса илĕр, тĕсне тата пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре палăртăр.

**Хурав.** *Алăк-хапха уçăлса хупăнни илтĕнет.* Ку пăхăнуллă хутлă предложени, пайĕсене çыхăнтаракан хатĕр – -*и* аффикс.

**3. Ыйту (ĕç).**

Пĕрремĕш юпари чĕлхе терминĕсене тата иккĕмĕш юпари тĕслĕхсене вулăр.

| | |
|---|---|
| 1. Антонимсем | А. кайăк-кĕшĕк, сĕтел-пукан |
| 2. Синонимсем | Ă. евĕрлев сăмахĕ, глагол, наречи |
| 3. Фразеологизм | Б. аван, лайăх |
| 4. Мăшăр сăмахсем | В. палт, шалтăрт |
| 5. Омонимсем | Г. аялта, çӳлте |
| 6. Пуплев пайĕсем | Д. хуп турттар |
| 7. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем | Е. хăлха (çын хăлхи, витре хăлхи, çĕлĕк хăлхи) |
| 8. Евĕрлев сăмахĕсем | Ĕ. удмурт, мари, мăкшă |
| 9. Пайăр ятсем | Ж. çĕр (глагол), çĕр (япала ячĕ) |
| 10. Хурăнташ чĕлхесем | З. Андриян, Шупашкар |

Терминсене тата тĕслĕхсене шайлаштарăр. Хăш термин патне хăш тĕслĕх килĕшӳллĕ? Хуравсене таблицăра пысăк сас паллипе кăтартса çырăр.

**Хурав.**

| **Терминсем** | **Сас палли** |
|---|---|
| 1. Антонимсем | Г |
| 2. Синонимсем | Б |
| 3. Фразеологизм | Д |
| 4. Мăшăр сăмахсем | А |
| 5. Омонимсем | Ж |
| 6. Пуплев пайĕсем | Ă |
| 7. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем | Е |
| 8. Евĕрлев сăмахĕсем | В |
| 9. Пайăр ятсем | З |
| 10. Хурăнташ чĕлхесем | Ĕ |

**4. Ыйту (ĕç).**

Алфавитсăр пуçне, саспаллисене палăртмалли тепĕр çыру системи пур – Морзе азбуки. Çав азбукăпа килĕшӳллĕн, кашни саспаллин ятарлă код пур, ăна «тире» е «точка» символсенчен йĕркелеççĕ, саспаллисене палăртма кĕске е вăрăм сигналсемпе усă кураççĕ. Таблицăри Морзе азбукипе паллашăр та таблица хыççăн çырса панă ыйтăва хуравлăр.

| Саспалли | Морзе азбукинчи код |
|---|---|
| А | •— |
| Б | —••• |
| В | •— — |
| Г | — —• |
| Д | —•• |
| Е, Ё | • |
| Ж | •••— |
| З | — —•• |
| И | •• |
| Й | •— — — |
| К | —•— |
| Л | •—•• |
| М | — — |
| Н | —• |
| О | — — — |
| П | •— —• |
| Р | •—• |
| С | ••• |
| Т | — |
| У | ••— |
| Ф | ••—• |
| Х | •••• |
| Ц | —•—• |
| Ч | — — —• |
| Ш | — — — — |
| Щ | — —•— |
| Ъ | — —•— — |

| | |
|---|---|
| Ы | —•— — |
| Ь | —••— |
| Э | ••—•• |
| Ю | ••— — |
| Я | •—•— |
| . | •••••• |
| , | •—•—•— |

Морзе азбукипе усă курса çырнă ваттисен сăмахне вулăр та ăна чăваш алфавитĕнчи сас паллисемпе çырса парăр:

•— •—•• •— — •— •—• •— •—•• •— —• —• •• _
•— ••• •— •—•• •— _ —••— •—•—•— — — —• ••—
—• •— — •— •—• •— •—•• •— —• —• •• _ •— •••
•— •—•• — — •— ••• _ —••— ••••••

**Хурав.**

Ал вараланни тасалать, чун вараланни тасалмасть.

**5. Ыйту (ĕç).**

*Пуç, алă, чĕлхе, кăкăр, хырăм, шăл, чĕре, çăвар, ура, хăлха* – çак сăмахсемпе кашнинпе икшер фразеологизм çырăр.

**Хурав.**

| **Ӳт-пӳ пайĕ** | **Ачасен хуравĕсенче тĕл пулма пултаракан фразеологизм тĕслĕхĕсем** |
|---|---|
| пуç | пуç çине хăпарса лар, пуç çурăлса тухать, пуçа çухат, пуç çап т.ыт.те |
| алă | алă пырать, алла ил, алла ус, алла пар, алла вĕрент т.ыт.те |
| чĕлхе | пуклак чĕлхе, чĕлхе кĕçĕтет, чĕлхе çаврăнмасть, чĕлхе çыхланать т.ыт.те |
| кăкăр | кăкăр çап, кăкăртан юлашки сывлăш тухиччен т.ыт.те |
| хырăм | хырăм хыр тăрне кайрĕ, хырăм тытса кул т.ыт.те |
| шăл | шăл хайра, шăл витмест, шăл çырт, шăл шакка, шăл йĕр т.ыт.те |

| | |
|---|---|
| чĕре | чĕрене тив, чĕрене уç, чĕрене хытар, чĕререн тух, чĕрене ыраттар, чĕрене çемçет, чĕрене ил, чĕрене çунтар, чĕрене çур, чĕре сикет т.ыт.те |
| çăвар | çăвар кар, çăвар уç, çăварне хупла, çăвара шыв сып, çăвар вылят т.ыт.те |
| ура | урараи ура иртмест, ура çине тăр, ура ярса пус, урараи ӳк т.ыт.те |
| хăлха | хăлхана чик, хăлхана кĕр т.ыт.те |

**6. Ыйту (ĕç).**

Çеçпĕл Мишши сăввинчи сиктерсе хăварнă сăмахсене тĕрĕс суйласа çырăр:

Тĕнчене тасатрĕ … (*туйăм, ирĕк, çулăм*) вут-кăварĕ,

Çут тĕнче … (*çĕнелчĕ, тасалчĕ, çуталчĕ*), иртрĕ авалхи.

… (*Тĕтĕмĕ, тĕттĕмĕ, çулăмĕ*) тĕп пулчĕ, мăшкăл иртсе кайрĕ –

… (*Çут, халь, тин*) ирĕке тухрăн, … (*ман, эс, тĕп*) чăваш чĕлхи!

**Хурав.**

Ирĕк, çуталчĕ, тĕттĕмĕ, тин, тĕп.

**7. Ыйту (ĕç).**

Сăн ӳкерчĕкре камсем-ши? Эсир вĕсем çинчен мĕн пĕлетĕр? Паллă ĕçĕсене асăнăр.



**Хурав.**

Митта Ваçлейĕ тата Петĕр Хусанкай. Митта Ваçлейĕ – сăвăç, куçаруçă. Паллă хайлавĕсем: «Пит маттур-çке Иванов бульварĕ…», «Тăван чĕлхем! Таса хĕлхем…», «Анатри юрă» т.ыт.те. «Петĕр Хусакай – Чăваш халăх поэчĕ, куçаруçă, критик. Паллă хайлавĕсем: «Тилли юррисем», «Аптарман тавраш», «Таня» т.ыт.те.

**8. Ыйту (ĕç).**

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн, «Хыпар» хаçатăн Хусанти редакцийĕн ĕçĕ-хĕлне сăнлакан эпика хайлавĕн ятне тата авторне асăнăр.

**Хурав.**

Константин Петровăн «Тайăр» романĕ.

**9. Ыйту (ĕç).**

Чăвашла куçарăр:

*Мне кажется порою, что солдаты,*
*С кровавых не пришедшие полей,*
*Не в землю эту полегли когда-то,*
*А превратились в белых журавлей.*

**Хурав.**

*Хăш чух мана ылханлă вăрçă хирĕ*
*Тĕп тунă çамрăк паттăр салтаксем*
*Çĕрсе выртман пек туйăнать каç-ирĕн,*
*Вĕçеççĕ пек пулса шур тăрнасем.*

**10. Ыйту (ĕç).**

«С» сас паллирен кăна пуçланакан сăмахсенчен хайлав çырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2023-мĕш çул***

***11-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.

*Вăрман çывăххи урамра та лайăх сисĕнет. Таса та уçă, сиплĕ сывлăш сăмсана техĕмлĕн пырса çапать. Юмах евĕр сарă кун тăрать. Вăл, хаваслантарса та çĕклентерсе, кирек кама та ачалăхри ырă тĕлĕке аса илтерет.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш сăмахра (е хăш сăмахсенче) сасăсен шучĕ саспаллисен шутĕнчен нумайрах? Çав сăмаха (сăмахсене) çырăр.

**Хурав.**

Юмах, евĕр.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстри хутлă предложение (хутлă предложенисене) çырса илĕр, тĕсне тата пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре палăртăр.

**Хурав.** *Вăрман çывăххи урамра та лайăх сисĕнет.* Ку пăхăнуллă хутлă предложени, пайĕсене çыхăнтаракан хатĕр – ***-и*** аффикс.

**3. Ыйту (ĕç).**

Пĕрремĕш юпари чĕлхе терминĕсене тата иккĕмĕш юпари тĕслĕхсене вулăр.

| | |
|---|---|
| 1. Антонимсем | А. çил-тăвăл, çырма-çатра |
| 2. Синонимсем | Ă. паллă ячĕ, хисеп ячĕ, глагол |
| 3. Фразеологизм | Б. наян, кахал |
| 4. Мăшăр сăмахсем | В. шăнкăр, шатăрт |
| 5. Омонимсем | Г. пысăк, пĕчĕк |
| 6. Пуплев пайĕсем | Д. хуп турттар |
| 7. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем | Е. сăмса (çын сăмси, çăкăр сăмси, карап сăмси) |
| 8. Евĕрлев сăмахĕсем | Ĕ. чăваш, узбек, тутар |
| 9. Пайăр ятсем | Ж. çу (глагол), çу (япала ячĕ) |
| 10. Хурăнташ чĕлхесем | З. Атăл, Шупашкар |

Терминсене тата тĕслĕхсене шайлаштарăр. Хăш термин патне хăш тĕслĕх килĕшӳллĕ? Хуравсене таблицăра пысăк сас паллипе кăтартса çырăр.

**Хурав.**

| **Терминсем** | **Сас палли** |
|---|---|
| 1. Антонимсем | Г |
| 2. Синонимсем | Б |
| 3. Фразеологизм | Д |
| 4. Мăшăр сăмахсем | А |
| 5. Омонимсем | Ж |
| 6. Пуплев пайĕсем | Ă |
| 7. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем | Е |
| 8. Евĕрлев сăмахĕсем | В |
| 9. Пайăр ятсем | З |
| 10. Хурăнташ чĕлхесем | Ĕ |

**4. Ыйту (ĕç).**

Алфавитсăр пуçне, саспаллисене палăртмалли тепĕр çыру системи пур – Морзе азбуки. Çав азбукăпа килĕшӳллĕн, кашни саспаллин ятарлă код пур, ăна «тире» е «точка» символсенчен йĕркелеççĕ, саспаллисене палăртма кĕске е вăрăм сигналсемпе усă кураççĕ. Таблицăри Морзе азбукипе паллашăр та таблица хыççăн çырса панă ыйтăва хуравлăр.

| **Саспалли** | **Морзе азбукинчи код** |
|---|---|
| А | •– |
| Б | –••• |
| В | •– – |
| Г | – –• |
| Д | –•• |
| Е, Ё | • |
| Ж | •••– |
| З | – –•• |
| И | •• |
| Й | •– – – |
| К | –•– |
| Л | •–•• |
| М | – – |
| Н | –• |
| О | – – – |
| П | •– –• |
| Р | •–• |
| С | ••• |
| Т | – |
| У | ••– |
| Ф | ••–• |
| Х | •••• |
| Ц | –•–• |
| Ч | – – –• |
| Ш | – – – – |

| | |
|---|---|
| Щ | – –•– |
| Ъ | – –•– – |
| Ы | –•– – |
| Ь | –••– |
| Э | ••–•• |
| Ю | ••– – |
| Я | •–•– |
| . | •••••• |
| , | •–•–•– |

Морзе азбукипе усă курса çырнă ваттисен сăмахне вулăр та ăна чăваш алфавитĕнчи сас паллисемпе çырса парăр:

•– •–•• •– – •– •–• •– •–•• •– –• –• •• _ •– ••• •– •–•• •– _ –••– •–•–•– – – –• ••– –• •– – •– •–• •– •–•• •– –• –• •• _ •– ••• •– •–•• – – •– ••• _ –••– ••••••

**Хурав.**

Ал вараланни тасалать, чун вараланни тасалмасть.

**5. Ыйту (ĕç).**

*Пуç, алă, чĕлхе, кăкăр, хырăм, шăл, чĕре, çăвар, ура, хăлха* – çак сăмахсемпе кашнинпе икшер фразеологизм çырăр.

**Хурав.**

| Ӳт-пӳ пайĕ | Ачасен хуравĕсенче тĕл пулма пултаракан фразеологизм тĕслĕхĕсем |
|---|---|
| пуç | пуç çине хăпарса лар, пуç çурăлса тухать, пуçа çухат, пуç çап т.ыт.те |
| алă | алă пырать, алла ил, алла ус, алла пар, алла вĕрент т.ыт.те |
| чĕлхе | пуклак чĕлхе, чĕлхе кĕçĕтет, чĕлхе çаврăнмасть, чĕлхе çыхланать т.ыт.те |
| кăкăр | кăкăр çап, кăкăртан юлашки сывлăш тухиччен т.ыт.те |

| | |
|---|---|
| хырăм | хырăм хыр тăрне кайрĕ, хырăм тытса кул т.ыт.те |
| шăл | шăл хайра, шăл витмест, шăл çырт, шăл шакка, шăл йĕр т.ыт.те |
| чĕре | чĕрене тив, чĕрене уç, чĕрене хытар, чĕререн тух, чĕрене ыраттар, чĕрене çемçет, чĕрене ил, чĕрене çунтар, чĕрене çур, чĕре сикет т.ыт.те |
| çăвар | çăвар кар, çăвар уç, çăварне хупла, çăвара шыв сып, çăвар вылят т.ыт.те |
| ура | ураран ура иртмест, ура çине тăр, ура ярса пус, ураран ӳк т.ыт.те |
| хăлха | хăлхана чик, хăлхана кĕр т.ыт.те |

**6. Ыйту (ĕç).**

Ухсай Яккăвĕ сăввинчи сиктерсе хăварнă сăмахсене тĕрĕс суйласа çырăр:

… (*Ял-йышăм, уй-хирĕм, вăрманăм*) пачĕ хăй … (*вăйне, хупне, халне*)

Хăй … (*сăпкинче, чунĕнче, чĕринче*) мана сикме,

… (*Кĕрхи, хирти, уйри*) ыраш хăй сĕткенне

Тултарчĕ манăн … (*чĕреме, кĕввĕме, пĕвĕме*).

**Хурав.**

Вăрманăм, хупне, сăпкинче, хирти, пĕвĕме.

**7. Ыйту (ĕç).**

Ку хайлавра 52 пус укçа, 3 алтăр шыв, тислĕк муклашки çинчен калани пур. Хайлав ятне тата авторне палăртăр.

**Хурав.**

Ф. Павловăн «Судра» хайлавĕнче.

**8. Ыйту (ĕç).**

Ӳкерчĕкри икĕ паллă çынна асăрхăр. Камсем-ши вĕсем? Художник ăçти ĕç-пуçа ӳкерсе кăтартнă?



**Хурав.**

И.Н. Ульянов тата И.Я. Яковлев. Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче.

**9. Ыйту (ĕç).**

Чăвашла куçарăр:

*День Победы, как он был от нас далек,*
*Как в костре потухшем таял уголек.*
*Были версты, обгорелые в пыли, –*
*Этот день мы приближали, как могли.*

**Хурав.**

*Çĕнтерӳçĕм, пит инçеччĕ эс пиртен,*
*Кĕл кăварĕ пек сӳнеттĕнччĕ хуллен.*
*Çулăм витĕр, çумăр витĕр талпăнса,*
*Сан пата эпир çывхарнă шăвăнса.*

**10. Ыйту (ĕç).**

«С» сас паллирен кăна пуçланакан сăмахсенчен хайлав çырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2024-мĕш çул***

***9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1–5 ыйтусене (ĕçсене) пурнăçлăр.**

Иртнĕ ĕмĕр варриччен хăнтăрсем Раççейĕн кашни пысăк е пĕчĕк юхан шывĕ тăрăхĕнче питĕ йышлă пурăннă, имĕш. Каярахпа вĕсене паха та хаклă тирĕшĕн чылай çĕрте тытса пĕтернĕ. Хăнтăр апачĕ – ӳсентăран. Вăл уйрăмах йывăç турачĕсене, тĕрлĕ курăк çиме кăмăллать. Сивĕсем çитиччен хăйне хĕл каçмалăх апат хатĕрлеме те ĕлкĕрет вăл. Хăш-пĕр хăнтăр çемйи шывра вăтăр кубометр таранах апат хатĕрлесе тултарать.

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă сăмаха (сăмахсене) тупса пуçламăш формăра çырăр, вырăсла тӳркилĕвне кăтартăр.

**Хурав.**

Раççей (Россия), апат (обед), çемье (семья).

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстра мĕнле чĕрчун пирки сăмах пырать? Ăна вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

хăнтăр – бобр.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстран хутлă предложение (хутлă предложенисене) тупса çырса илĕр, тĕсне палăртăр, пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре кăтартăр.

**Хурав.**

Сивӗсем ҫитиччен хӑйне хӗл каҫмалӑх апат хатӗрлеме те ӗлкӗрет вӑл.

Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени, ҫыхӑну хатӗрӗ – -*иччен* аффикс (деепричасти аффиксӗ).

**4. Ыйту (ӗҫ).**

Текстра пунктуаци тӗлӗшӗнчен йӑнӑш ҫырнӑ предложение тупӑр та тӳрлетсе ҫырса илӗр, правилӑна ӑнлантарӑр.

**Хурав.**

Иртнӗ ӗмӗр варриччен хӑнтӑрсем Раҫҫейӗн кашни пысӑк е пӗчӗк юхан шывӗ тӑрӑхӗнче питӗ йышлӑ пурӑннӑ имӗш (сказуемӑй хыҫҫӑн унпа юнашар вырнаҫнӑ кӳртӗм сӑмаха запятойпа уйӑрмалла мар).

**5. Ыйту (ӗҫ).**

Текстра пӗр йышши членсене тупса ҫырӑр. Вӗсем предложенин мӗнле членӗ пулаҫҫӗ?

**Хурав.**

пысӑк, пӗчӗк – определени пулаҫҫӗ.

паха, хаклӑ – определени пулаҫҫӗ.

йывӑҫ турачӗсене, курӑк – дополнени пулаҫҫӗ.

**6. Ыйту (ӗҫ).**

Пилӗк сас паллирен тӑракан сӑмах тупӑр. Ҫав сӑмаха тума ыйтусене хуравлӑр, хуравӗсене ҫырӑр.

1) Кам ҫинчен сӑмах пырать-ши? «Вӑл Пушкӑрстанри Слакпуҫ ялӗнче ҫуралса ӳснӗ, ӑна унтах Кӗслету ҫинче пытарнӑ». Сӑвӑҫ ячӗн пӗрремӗш сас паллине илӗр.

2) С. Михайлов ҫырнӑ «Ах, эсӗ, ______ , ман тӑван кӗтес» сӑвӑ йӗркинче мӗнле сӑмах сиксе юлнӑ? Ҫав сӑмахӑн иккӗмӗш сас паллине илӗр.

3) Пьесăри герой пысăк та усал вăя хирĕç кĕрешсе вилнине сăнлакан хайлав мĕнле жанр шутне кĕрет? Çав сăмахăн пĕрремĕш сас паллийĕ епле?

4) Ф. Павловăн паллă комедийĕ. Хайлав ятĕнчи иккĕмĕш сас паллине илĕр.

5) «Натали кĕпе тĕрлет» сыпăк хăш хайлавран? Ăна пĕлме П. Хусанкайăн сăвăлла романĕн ятне аса илĕр, хайлав ячĕн юлашки сас паллине çырăр.

**Хурав.**

**ЯНТУШ**.

1) Яков – **Я**

2) Юнкă – **Н**

3) трагеди – **Т**

4) «Судра» – **У**

5) «Аптраман тавраш» – **Ш**

**7. Ыйту (ĕç).**

6-мĕш ыйтура тупнă сăмах – чăваш çыравçи псевдонимĕ. Кам-ши вăл?

**Хурав.**

Спиридон Михайлов.

**8. Ыйту (ĕç).**

Панă сăмахсен кирлĕ вариантне суйласа илĕр, клоуз-теста пурнăçлăр.

*Туй пуçĕ Прамун лашисене ерипен уттарма пуçларĕ. Пирĕнпе пĕрле урам тулли халăх (а) _____ . Пурте шап-шурă тумтир тăхăннă. Хĕрсен, арăмсен кăкăр тулли (ă) ______ хĕвел çутипе ялтăртатать. Вĕт-шак ачи-пăчи çăварĕсене (б) _______ пирĕн çине пăхать. Мĕлĕшри Алтан Васли шăпăрне калама чарăнса кӳме çине тăрать те аллисемпе хăлаçланса, автан пек: (в) «______ !» – тесе пит хытă авăтса ярать. Васли хыççăн ялти автансем те*

*авӑтаççӗ. Тата кӳме тӑррине лапчӑнса ларать те, çӑмарта туса аннӑ чӑх пек, пуçне каçӑртса (г) ______.*

(И. Тӑхтин «Шерхулла» калавӗнчен)

Суйламалли вариантсем:

а) утаççӗ, утать;

ӑ) ылтӑн, кӗмӗл, пӑхӑр;

б) уçса, карса, шыв сыпнӑн хупса;

в) «Кик-ки-рик!», «Ку-ка-ре-ку!»;

г) юрлать, кӑткӑтлатать, кӑтиклет.

**Хурав.**

а) утать;

ӑ) кӗмӗл;

б) карса;

в) «Кик-ки-рик!»;

г) кӑтиклет.

**9. Ыйту (ӗç).**

Текста чӑвашла куçарӑр.

*Молодые люди говорят на чувашском языке! Я слышала, что в Москве живет пятьдесят тысяч чувашей, но до сих пор не слышала, чтобы в кафе разговаривали по-чувашски. Сама я не могу говорить по-чувашски, если только несколько слов невпопад, и понимаю немного. В те времена, хоть и была я по крови чувашкой, душой, мыслями была очень далека от родного народа. Вон моя подруга Фатима не только как ручеек складно говорит по-татарски, но и читает, и пишет, а я, как бы сказать, в чувашском языке как немая.*

*Хорошо еще, в то время неожиданно в книжном магазине попался на глаза большой словарь в темно-красном переплете, и, увидев надпись позолоченными буквами «ЧУВАШСКО-РУССКИЙ СЛОВАРЬ», я обрадовалась, купила его, дойдя домой, поспешно открыла, и в этот миг*

*меня охватило такое чувство, как будто заново родилась. Тогда я стала ежедневно заучивать десятки слов, но, оказалось, лишь с помощью словаря язык не выучить.*

*(Борис Чиндыков)*

**Хурав.**

Çамрăксем чăвашла калаçаççĕ! Мускавра алă пин чăваш пурăнать тенине илтнĕ те, çак тарана çити кафере чăвашла калаçнине илтменччĕ. Эпĕ хам чăвашла пачах та калаçаймастăп, ун-кун пĕр-икĕ сăмах çаврăнăшĕ кăна, ăнланасси те кăшт çеç манăн. Юнпа чăваш хĕрĕ пулсан та, чунпа, шухăшăмпа эпĕ тăван халăхран питĕ аякраччĕ вăл вăхăтра. Ман юлташ хĕр ача Фатима ав тутарла шыв юхнă пек калаçать кăна мар, вулать те, çырать те, эпĕ вара, мĕнле калас, чĕлхесĕр пекех чăвашла.

Юрать-ха, çав вăхăталла пĕрре ăнсăртран кĕнеке лавккинче куç тĕлне тĕксĕм хĕрлĕ хуплашкаллă пысăк словарь курăнса кайрĕ, ылтăнланă сас паллисемпе «ЧĂВАШЛА-ВЫРĂСЛА СЛОВАРЬ» тенине курсан эпĕ савăнсах кайрăм, часрах туянтăм, киле çитсе хыпаланса уçса лартăм, хама темле çĕнĕрен çуралнă евĕр туйăм çупăрласа илчĕ çав самантра. Вара куллен вуншар сăмах вĕренме тытăнтăм, анчах словарь хальлĕн кăна пулмасть иккен чĕлхе вĕренесси.

(Борис Чиндыков)

**10. Ыйту (ĕç).**

«Хăв Çулна шыра, пĕртен-пĕр Çулна», – тенĕ Валери Туркай пĕр сăввинче. Мĕнле Çул пирки çырать-ши вăл? Хăвăр шухăшăра сочинени-шухăшлав евĕр çырса пĕлтерĕр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2024-мĕш çул***

***10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1–5 ыйтусене (ĕçсене) пурнăçлăр.**

Çирĕк – питĕ усăллă йывăç. Вăл çырма-çатрана типесрен сыхлать, çĕнĕ çăлкуçсем кăларать. Çирĕк пуснă çырмасенче ĕлĕк уланкă йышлă ĕрченĕ. Çирĕк вутта та лайăх. Ун вуттинчен сĕрĕм тухмасть. Çирĕкрен тунă сĕтелпукан вара çăмăл, илемлĕ те çирĕп пулать. Кайăк-кĕшĕк те иленет çирĕклĕхе. Çирĕк вăррине юратса çиекен кайăка чăвашсем ахальтен мар çирĕктăрри тенĕ.

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă сăмаха (сăмахсене) тупса çырăр, вырăсла тӳркилĕвне кăтартăр.

**Хурав.**

Сĕтел (стол).

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстра «япала ячĕ + аффикс = япала ячĕ» схемăпа пулăннă иккĕмĕшле сăмаха (сăмахсене) çырса илĕр, çав модельпе тепĕр тĕслĕх шутласа тупăр.

**Хурав.**

Çирĕклĕх (хуравра тĕл пулма пултаракан тĕслĕхсем: çĕмĕртлĕх, çырулăх т.ыт.те).

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстран хутлă предложение (хутлă предложенисене) тупса çырса илĕр, тĕсне палăртăр, пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре кăтартăр.

**Хурав.**

Çирĕк пуснă çырмасенче ĕлĕк уланкă йышлă ĕрченĕ.

Пăхăнуллă хутлă предложени, çыхăну хатĕрĕ – -*нă* аффикс (иртнĕ причасти аффиксĕ).

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстра мĕнле пулă ячĕ тĕл пулать? Ăна вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Уланкă – окунь.

**5. Ыйту (ĕç).**

Текстра пĕр йышши членсене тупса çырăр. Вĕсем предложенин мĕнле членĕ пулаççĕ?

**Хурав.**

сыхлать, кăларать – сказуемăй пулаççĕ.

çăмăл, илемлĕ те çирĕп – обстоятельство пулаççĕ.

**6. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах тупăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр, хуравĕсене çырăр.

1) К. Иванов «Шуйттан чури» хайлавне мĕнле жанрпа çырнă? Малтанхи сас паллине илĕр.

2) Германи вăрçи вăхăтĕнчи ĕçсене, 1914–1916 çулсене, сăнлакан драма. Хайлав ятĕнчи юлашки сас паллине илĕр.

3) «Сăхман айĕнчи ача амăшĕ» хайлав авторĕ кам? Ун хушамачĕн юлашки сас паллине çырăр.

4) Çумăр витĕр ик çунатти тăрăх шыв юхтарса вĕçекен чĕкеç çинчен юрлакан чăваш халăх юрри мĕнле сăмахпа пуçланать? Пĕрремĕш сас паллине илĕр.

5) 1, 2, 4-мĕш йĕркесем рифмăланни, 3-мĕш састашсăр пулни, философиллĕ тĕшĕ мала тухни хăш литература жанрĕшĕн кăтартуллă? Пĕрремĕш сас паллине çырăр.

**Хурав.**
**ТАЙĂР.**
1) трагеди – **Т**
2) «Ялта» – **А**
3) Рсай – **Й**
4) ăçта – **Ă**
5) рубаи – **Р**

**7. Ыйту (ĕç).**

6-мĕш ыйтура тупнă сăмахлă хайлав ячĕ аса илĕр, авторне палăртăр.

**Хурав.**

Митта Ваçлейĕ; Константин Петров.

**8. Ыйту (ĕç).**

Панă сăмахсен кирлĕ вариантне суйласа илĕр, клоуз-теста пурнăçлăр.

*Йăван Яккăльч пулкаланă кунта. (а)______ ку енчи шкулсене тĕрĕслеме килсе çӳренĕ. Халăхра икĕ (ă) ______ çӳрет ун пирки... Пĕрре, шăпах (б) ______ эрнинче, каччăсемпе хĕрсем укăлчара вăйă карти çавăрса юрă юрланă. Сасартăк вĕсен умне (в) ______ лашаллă кӳмепе чаплă улпут килнĕ тухнă. Çамрăксем хăраса ӳкнĕ, вăйă карти чăл-пар саланнă. «Мĕнтен хăратăр, ма манран таратăр? Эпĕ те сирĕн пекех çынах, чăвашах-çке!» – тенĕ вара улпут. Чăвашлах чип-чипер каланă. Çавалкас çамрăкĕсем тĕлĕнсе хытнă: вĕсем çак мăн сухаллă, ылтăн пакунлă генерала, патша пекскерне, ниепле те чăваш тесе шутлама хăяйман. Анчах улпут вĕсене ăшăн калаçса ӳкĕте (г) ______ , каллех юрлама ыйтнă.*

(А. Артемьевăн «Алтăр çăлтăр» хайлавĕнчен)

Суйламалли вариантсем:

а) Хусантан, Шупашкартан, Чĕмпĕртен;

ă) юмах, халап, баллада;

б) Сурхури, Çăварни, Çимĕк;
в) мăшăр, пар;
г) лартнă, тăратнă, кĕртнĕ.

**Хурав.**

а) Чĕмпĕртен;
ă) халап;
б) Çимĕк;
в) пар;
г) кĕртнĕ.

**9. Ыйту (ĕç).**

Текста чăвашла куçарăр.

*Молодые люди говорят на чувашском языке! Я слышала, что в Москве живет пятьдесят тысяч чувашей, но до сих пор не слышала, чтобы в кафе разговаривали по-чувашски. Сама я не могу говорить по-чувашски, если только несколько слов невпопад, и понимаю немного. В те времена, хоть и была я по крови чувашкой, душой, мыслями была очень далека от родного народа. Вон моя подруга Фатима не только как ручеек складно говорит по-татарски, но и читает, и пишет, а я, как бы сказать, в чувашском языке как немая.*

*Хорошо еще, в то время неожиданно в книжном магазине попался на глаза большой словарь в темно-красном переплете, и, увидев надпись позолоченными буквами «ЧУВАШСКО-РУССКИЙ СЛОВАРЬ», я обрадовалась, купила его, дойдя домой, поспешно открыла, и в этот миг меня охватило такое чувство, как будто заново родилась. Тогда я стала ежедневно заучивать десятки слов, но, оказалось, лишь с помощью словаря язык не выучить.*

*С Хуначи мы встретились в первое воскресенье мая на Ваганьковском кладбище. Там ежегодно в этот день собираются московские чуваши у могилы выдающегося ученого чувашского народа. До этого дня я ни разу там не*

*бывала, а весной этого года мать с намеком сказала: выросла уже, должна знать родной народ.*

*(Борис Чиндыков)*

**Хурав.**

Çамрăксем чăвашла калаçаççĕ! Мускавра алă пин чăваш пурăнать тенине илтнĕ те, çак тарана çити кафере чăвашла калаçнине илтменччĕ. Эпĕ хам чăвашла пачах та калаçаймастăп, ун-кун пĕр-икĕ сăмах çаврăнăшĕ кăна, ăнланасси те кăшт çеç манăн. Юнпа чăваш хĕрĕ пулсан та, чунпа, шухăшăмпа эпĕ тăван халăхран питĕ аякраччĕ вăл вăхăтра. Ман юлташ хĕр ача Фатима ав тутарла шыв юхнă пек калаçать кăна мар, вулать те, çырать те, эпĕ вара, мĕнле калас, чĕлхесĕр пекех чăвашла.

Юрать-ха, çав вăхăталла пĕрре ăнсăртран кĕнеке лавккинче куç тĕлне тĕксĕм хĕрлĕ хуплашкаллă пысăк словарь курăнса кайрĕ, ылтăнланă сас паллисемпе «ЧĂВАШЛА-ВЫРĂСЛА СЛОВАРЬ» тенине курсан эпĕ савăнсах кайрăм, часрах туянтăм, киле çитсе хыпаланса уçса лартăм, хама темле çĕнĕрен çуралнă евĕр туйăм çупăрласа илчĕ çав самантра. Вара куллен вуншар сăмах вĕренме тытăнтăм, анчах словарь хальлĕн кăна пулмасть иккен чĕлхе вĕренесси.

Хуначипе эпир çу уйăхĕн пĕрремĕш вырсарни кунĕнче Ваганьково масарĕнче тĕл пултăмăр. Унта çак кун çулсеренех чăваш халăхĕн паллă ăсчахĕн вил тăпри патĕнче Мускав чăвашĕсем пуçтарăнаççĕ. Çав кунччен эпĕ пĕрре те пулса курманччĕ унта, кăçал вара çуркунне çитнĕ-çитмен систерчĕ анне: ӳссе çитрĕн ĕнтĕ, тăван халăха пĕлес пулать терĕ.

(Борис Чиндыков)

**10. Ыйту (ĕç).**

Çемье çинчен ***ç*** сас паллирен кăна пуçланакан сăмахсенчен хайлав çырăр.

## *Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада 2024-мĕш çул*

### *11-мĕш класс (чăваш шкулĕ)*
### *Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем*

**Текста вулăр та 1–5 ыйтусене (ĕçсене) пурнăçлăр.**

Пирĕн тăрăхра мулкач чылай тĕл пулать. Вăл хĕлле шап-шурă, çулла кăвак-хăмăр-сăрă. Хăлхи вĕçĕ çеç кирек хăш вăхăтра та хура. Пурăнасса вăрманта ытларах пурăнать, çулçăллă йывăççене кăмăллать. Унта пытанма лайăххах. Апат та нумай. Каç пулсассăн пахчасене кĕре-кĕре каять: купăста, çарăк-кишĕр çулçисене, утă тăккаланчăкĕсене шырать. Мулкач питĕ сисĕмлĕ теççĕ. Çывăрнă чухне те сас-чĕве вăл таçтанах илтет, имĕш.

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă сăмаха (сăмахсене) тупса çырăр, вырăсла тӳркилĕвне кăтартăр.

**Хурав.**

Сăрă (серый), апат (обед), купăста (капуста).

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстра «глагол + аффикс = япала ячĕ» схемăпа пулăннă сăмаха (сăмахсене) çырса илĕр, çав модельпе тепĕр тĕслĕх шутласа тупăр.

**Хурав.**

Тăккаланчăкĕсене (хуравра тĕл пулма пултаракан тĕслĕхсем: сапаланчăк, ванчăк, çапкаланчăк т.ыт.те).

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстран хутлă предложение (хутлă предложенисене) тупса çырса илĕр, тĕсне палăртăр, пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре кăтартăр.

**Хурав.**

Каç пулсассăн пахчасене кĕре-кĕре каять: купăста, çарăк-кишĕр çулçисене, утă тăккаланчăкĕсене шырать.

Пăхăнуллă хутлă предложени, çыхăну хатĕрĕ – *-сассăн* аффикс (деепричасти аффиксĕ).

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстра пунктуаци тĕлĕшĕнчен йăнăш çырнă предложение тупăр та тӳрлетсе çырса илĕр, правилăна ăнлантарăр.

**Хурав.**

Çывăрнă чухне те сас-чĕве вăл таçтанах илтет имĕш (сказуемăй хыççăн унпа юнашар вырнаçнă кӳртĕм сăмаха запятойпа уйăрмалла мар).

**5. Ыйту (ĕç).**

Текстра пĕр йышши членсене тупса çырăр. Вĕсем предложенин мĕнле членĕ пулаççĕ?

**Хурав.**

шап-шурă, кăвак-хăмăр-сăрă – сказуемăй пулаççĕ.

хĕлле, çулла – обстоятельство пулаççĕ.

пурăнать, кăмăллать – сказуемăй пулаççĕ.

кĕре-кĕре каять, шырать – сказуемăй пулаççĕ.

купăста, çарăк-кишĕр çулçисене, утă тăккаланчăкĕсене – дополнени пулаççĕ.

**6. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах тупăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр, хуравĕсене çырăр.

1) Виçĕ уйрăм кĕнекерен тăракан, анчах сюжет пĕрлĕхĕпе, тĕп шухăшпа, сăнарсен аталанăвĕпе уйрăлми çыхăннă эпика е драма хайлавне литература пĕлĕвĕнче мĕнле терминпа палăртаççĕ? Пĕрремĕш сас паллине илĕр.

2) «Пуçламăшĕ» поэма авторĕ кам? Ун псевдонимĕн юлашки сас паллине çырăр.

3) Ф. Павловăн «Ялта» драминчи юрату виçкĕтеслĕхĕ: Ванюк – Елюк – _____». Сиктерсе хăварнă сăнар ячĕн юлашки сас паллине çырăр.

4) Юхма Мишшин хайлав ятне малалла çырăр: «Кăвак ____». Сиксе юлнă сăмахăн иккĕмĕш сас паллине илĕр.

5) «Карт» термин вырăсла мĕнле терминпа тӳр килет? Малтанхи сас паллине çырăр.

**Хурав.**

**ТИНĔС.**

1) трилоги – **Т**

2) Айхи – **И**

3) Çтаппан – **Н**

4) çĕмрен – **Ĕ**

5) стопа – **С**

**7. Ыйту (ĕç).**

Хв. Уярпа Çеçпĕл Мишшин 6-мĕш ыйтура тупнă сăмахлă хайлав ячĕсем пур, вĕсене туллин çырăр.

**Хурав.**

«Ăçта эс, тинĕс?», «Тинĕсе».

**8. Ыйту (ĕç).**

Панă сăмахсен кирлĕ вариантне суйласа илĕр, клоуз-теста пурнăçлăр.

*Тухтар чупса ансассăнах кашкăрсем аякалла (а)_______ сикрĕç. Каччă çавапа (ă) ______ вĕсем хыççăн чупса та пăхрĕ, кашкăрсем Тарăнвар хĕрринчи ыраш (б) ______ вăшт кĕрсе кайрĕç те çухалчĕç. Тухтар каялла таврăнчĕ. Вăл килнĕ çĕре Селиме (в)_____ кĕре пуçланăччĕ.*

*Селимен тути чĕтрет, пит çăмарти хăрах енчен кăрт-кăрт туртăнса илет, (г) ______ унăн, ывăнса çитнĕ чухнехи пек, çурма уçă, хăй вăл, темĕн çухатнă пек, темĕн ӳкерсе хăварнă пек, чăл-чал пăхать, тем шырать, тем сăнать.*

*(Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» хайлавĕнчен)*

Суйламалли вариантсем:

а) чупса, тапса, васкаса;

ă) кăшкăрса, çĕклесе, хăмсарса;

б) картине, пуссине, варне;

в) тăна, ăса, шухăша;

г) куçĕсем, куçĕ.

**Хурав.**

а) тапса;

ă) хăмсарса;

б) пуссине;

в) тăна;

г) куçĕ.

**9. Ыйту (ĕç).**

Текста чăвашла куçарăр.

*Сердце любит только раз...*

*Мне тоже хотелось запеть. Полная луна скользнула по ветвям и приблизилась к окну, зацепилась за раскрытую раму, ее светлые блики вздрогнули, качнулись, словно не решаясь заглянуть в комнату. Но вот она бесшумно вспрыгнула на подоконник, осторожно продвинулась к моей подушке, осветила ее. Луна обнимала, ласкала меня, но я не чувствовала тепла. Вдруг под окном раздались негромкие шаги. Я прислушалась, затаив дыхание. Шаги становились все ближе, с шумом качнулась и хрустнула ветка сирени. Я осторожно поднялась, стараясь ступать как можно тише, подошла к окну, раздвинула краешек занавески. Под кустом сирени стоял Гена. Уже и луна скатилась за сад, восток окрасился в светло-серый цвет, а Гена все стоял под сиренью. На повети в сарае прокукарекал петух, и он вздрогнул, словно очнувшись. Мне захотелось окликнуть его, я едва сдержала себя. Вот он подошел к окну, приблизил букет к лицу, словно уткнулся в него, потом положил на подоконник и большими шагами вышел*

*из сада. Я взяла тяжелые цветы в руки. Они были живые, влажные. Осторожно прижав их к груди, я закрыла окно, упала на кровать и тут же уснула.*

*(Нелли Петровская)*

**Хурав.**

Чĕре пĕр хут çеç сават...

Ман чунра юрă сăмахĕсем пуçтарăнса пычĕç, эпĕ сасăсăр юрларăм. Тулса çитнĕ уйăх сирень çеçкисемпе выляса тăчĕ-тăчĕ те майĕпен уçă чӳречерен пырса уртăнчĕ, пĕр авăк пӳлĕме кĕме хăраса чĕтренсе тăнă хыççăн чӳрече сакки çине сиксе ӳкрĕ, вара, асăрхануллăн шуса, ман минтере çутатрĕ. Вăл мана çупăрларĕ, ачашларĕ, анчах эпĕ унăн ăшшине те, çепĕçлĕхне те туймарăм. Çак вăхăтра чӳрече умĕнче хуллен, асăрханса пусакан ура сасси илтĕнсе кайрĕ. Эпĕ пĕр самант сывлама чарăнса итлерĕм. Ура сасси çывхарса-çывхарса пычĕ те, чӳрече еннелле тăсăлса ӳсекен сирень турачĕ лăстăртатса силленчĕ. Эпĕ, вырăн çинчен çĕкленсе, пĕр самант хытса тăтăм, унтан, чĕрне вĕççĕн утса, чӳрече патне пытăм, шурă чаршава сирсе, пахчаналла тинкертĕм. Сирень тĕмĕ айĕнче Гена тăрать. Ĕнтĕ уйăх та пахча хыçнелле шуса анчĕ, тухăçа кăвак сăн çапрĕ, Гена çаплах сирень тĕмми айĕнче тăрать-ха. Аслăк айĕнчи автан хăйĕн хăрăлтирех сассипе хыттăн авăтса ярсан, вăл ыйхăран вăраннă çын пек шартах сикрĕ. «Гена!» – чутах кăшкăрса ямарăм эпĕ. Акă вăл кантăк патнех пычĕ, аллинчи чечекне пичĕ çумне тытрĕ, унтан уçă кантăк витĕр чӳрече сакки çине хучĕ те пысăк утăмсемпе пахчаран тухса çухалчĕ. Эпĕ чечек çыххине алла илтĕм. Вĕсем чĕрĕ, нӳрĕ. Эпĕ вĕсене асăрханса чĕре çумне тытса чăмăртарăм, унтан кантăка хупрăм та, пите чечек çыххипе хупласа, кĕçех ăшă ыйхă ытамне кĕрсе ӳкрĕм.

(Нелли Петровская)

**10. Ыйту (ĕç).**

Çемье çинчен ***ç*** сас паллирен кăна пуçланакан сăмахсенчен хайлав çырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен
«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада
2019-мĕш çул***

***9-мĕш класс (вырăс шкулĕ)
Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Пĕрремĕш юпари чĕлхе терминĕсене тата иккĕмĕш юпари тĕслĕхсене вулăр.

| | |
|---|---|
| 1. Антонимсем | А. калем, пăтавкка |
| 2. Синонимсем | Ă. пит (хĕвел пичĕ, çын пичĕ, минтер пичĕ, кĕнеке пичĕ) |
| 3. Фразеологизмсем | Б. вĕлкĕш, варкăш |
| 4. Мăшăр сăмахсем | В. Сĕве, Калайкасси, Макçăм |
| 5. Омонимсем | Г. тие, пушат |
| 6. Кивелнĕ сăмахсем (архаизмсем, историзмсем) | Д. пите кĕççе çĕле, пит пиçет |
| 7. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем | Е. сăн-пит, ирĕн-каçăн |
| 8. Евĕрлев сăмахĕсем | Ĕ. çармăс, мăкшă, удмурт |
| 9. Пайăр ятсем | Ж. пит (лицо), пит (очень) |
| 10. Хурăнташ чĕлхесем | З. шăнкăр-шăнкăр, пăт-пăт |

Терминсене тата тĕслĕхсене шайлаштарăр.

Хăш термин патне хăш тĕслĕх килĕшӳллĕ?

Хуравсене таблицăра пысăк сас паллипе кăтартса çырăр.

**Хурав.**

| Терминсем | Сас палли |
|---|---|
| 1. Антонимсем | Г |
| 2. Синонимсем | Б |
| 3. Фразеологизмсем | Д |
| 4. Мӑшӑр сӑмахсем | Е |
| 5. Омонимсем | Ж |
| 6. Кивелнӗ сӑмахсем (архаизмсем, историзмсем) | А |
| 7. Нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем | Ӑ |
| 8. Евӗрлев сӑмахӗсем | З |
| 9. Пайӑр ятсем | В |
| 10. Хурӑнташ чӗлхесем | Ӗ |

**2. Ыйту (ӗҫ).**

*Пуҫ, алӑ, чӗлхе, кӑкӑр, хырӑм, шӑл, чӗре, ҫӑвар, ура, хӑлха* – ҫак сӑмахсемпе кашнинпе икшер фразеологизм ҫырӑр.

**Хурав.**

| Ӳт-пӳ пайӗ | Ачасен хуравӗсенче тӗл пулма пултаракан фразеологизм тӗслӗхӗсем |
|---|---|
| пуҫ | пуҫ ҫине хӑпарса лар, пуҫ ҫурӑлса тухать, пуҫа ҫухат, пуҫ ҫап т.ыт.те |
| алӑ | алӑ пырать, алла ил, алла ус, алла пар, алла вӗрент т.ыт.те |
| чӗлхе | пуклак чӗлхе, чӗлхе кӗҫӗтет, чӗлхе ҫаврӑнмасть, чӗлхе ҫыхланать т.ыт.те |
| кӑкӑр | кӑкӑр ҫап, кӑкӑртан юлашки сывлӑш тухиччен т.ыт.те |
| хырӑм | хырӑм хыр тӑрне кайрӗ, хырӑм тытса кул т.ыт.те |

| | |
|---|---|
| шăл | шăл хайра, шăл витмест, шăл çырт, шăл шакка, шăл йĕр т.ыт.те |
| чĕре | чĕрене тив, чĕрене уç, чĕрене хытар, чĕререн тух, чĕрене ыраттар, чĕрене çемçет, чĕрене ил, чĕрене çунтар, чĕрене çур, чĕре сикет т.ыт.те |
| çăвар | çăвар кар, çăвар уç, çăварне хупла, çăвара шыв сып, çăвар вылят т.ыт.те |
| ура | урараан ура иртмест, ура çине тăр, ура ярса пус, урараан ӳк т.ыт.те |
| хăлха | хăлхана чик, хăлхана кĕр т.ыт.те |

**3. Ыйту (ĕç).**

Ултă сас паллирен тăракан сăмах тăвăр. Çав сăмаха тума:

1) *«авăн уйăхĕ»* сăмаха вырăсла куçарăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр;

2) *Наум Андреевич, Иван Андреевич, Василий Алексеевич* – чăваш чĕлхеçисем; вĕсен хушамачĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр;

3) çулнă утă ретне (йĕркине) чăвашла мĕн теççĕ? Çав сăмахăн пуçламăш сас паллине илĕр;

4) *туять* сăмахри тăваттăмĕш сасса илĕр;

5) чăваш алфавитĕнчи вун тăваттăмĕш сас паллине çырăр;

6) пĕр-пĕр ĕçе е пулăма ытлашши пысăклатса кăтартни вăл мĕн ятлă сăнарлăх мелĕ? Чи юлашки сас паллине илĕр.

Мĕнле сăмах пулнине, унăн синонимне çырăр.

**Хурав.**

1) *«авăн уйăхĕ»* сăмаха вырăсла куçарăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр – **С** (сентябрь);

2) *Наум Андреевич, Иван Андреевич, Василий Алексеевич* – чăваш чĕлхеçисем; вĕсен хушамачĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр – **А** (Андреев);

3) çулнӑ утӑ ретне (йӗркине) чӑвашла мӗн теççӗ? Çав сӑмахӑн пуçламӑш сас паллине илӗр – **П** (паккус);

4) *туять* сӑмахри тӑваттӑмӗш сасса илӗр – **А**;

5) чӑваш алфавитӗнчи вун тӑваттӑмӗш сас паллине çырӑр – **К**;

6) пӗр-пӗр ӗçе е пулӑма ытлашши пысӑклатса кӑтартни вӑл мӗн ятлӑ сӑнарлӑх мелӗ? Чи юлашки сас паллине илӗр – **А** (гипербола).

САПАКА (сапака), синонимӗ – *çупкӑм.*

**4. Ыйту (ӗç).**

*Çумӑр шӑпӑр-шӑпӑр çуса иртрӗ* предложенири евӗрлев сӑмахӗн пӗлтерӗшне палӑртӑр. Панӑ вариантсенчен хӑшӗ тӗрӗс, çавна çырса илӗр:

çумӑр тумламӗсем шултра та йӑвӑ;

çумӑр тумламӗсем шултра, анчах сайра;

çумӑр тикӗс те кӗске хушӑ çурӗ;

çумӑр тумламӗсем вӗтӗ, анчах çӑра.

**Хурав.**

çумӑр тикӗс те кӗске хушӑ çурӗ.

**5. Ыйту (ӗç).**

Пӗр тымартан пулӑннӑ иккӗмӗшле сӑмахсене çырса илӗр:

*ӑскӑч, ӑслӑ, пуйӑс, ӑслӑн, ӑславçӑ, ӑсат, парӑс, ӑс-тӑн, ӑса, ӑстрӑм, ӑсма, ӑслаккай.*

**Хурав.**

Пӗр тымартан пулӑннӑ иккӗмӗшле сӑмахсем:

*ӑслӑ, ӑслӑн, ӑславçӑ, ӑс-тӑн, ӑслаккай.*

**6. Ыйту.**

Миçе *кӗт* тесен кайӑк ячӗ пулать? Кайӑк ятне çырӑр, вырӑсла куçарӑр.

**Хурав.**

Пӗр.

Пӗркӗт – беркут.

**7. Ыйту (ĕç).**

Чăваш чĕлхине тĕпченĕ нимĕç çыннисен ятне тата хушаматне çырăр.

**Хурав.**

Ачасен хуравĕнче пулма пултаракан ятсем:
Йоханнес Бенцинг;
Вильгельм Шотт;
Герард Фридрих Миллер;
Василий Иванович Радлов.

**8. Ыйту (ĕç).**

Текстра йăнăш çырнă сăмаха (сăмахсене) тупăр та тĕрĕс çырăр.

Теплицă патĕнчен пахча хĕррине утрăмăр. Унта тимĕр сетка тытнă: чăхсем йăрансене ан чавчăр. Мĕн кăна çук хуралтăсем хушшынче! Фанера, шифер, пралук çиххи, кислород баллонĕ... Пӳрт айкине, пахчана, крыльца тухать. Ун тăрăх хăпарса малти пӳрте кĕтĕмĕр. Кунта курмалли нимех те çук пек туйĕнчĕ: пысăк кăмака, холодильник, клейонка сарнă тăваткал сĕтел. Шалти пӳртре вара – ерешлĕ турилккесем, сервиссем. Çтаппан гардероп енчен те катăк мар: сăран костюмсем, виçĕ плащ, хĕллехи пальтосем.

**Хурав.**

| Йăнăш çырнă сăмах | Тĕрĕс çырнă сăмах |
|---|---|
| теплицă | теплица |
| чавчăр | чавччăр |
| хушшынче | хушшинче |
| çиххи | çыххи |
| айкине | айккине |

| | |
|---|---|
| туйĕнчĕ | туйăнчĕ |
| клейонка | клеенка |
| ерешлĕ | эрешлĕ |
| сервиссем | сервизсем |
| гардероп | гардероб |

**9. Ыйту (ĕç).**

Текста вырăсла куçарăр:

*Вăхăт çитĕ. Чăваш чĕлхи те тимĕр татĕ. Çивĕч пулĕ. Хĕртнĕ хурçă пек пулĕ. Вăхăт çитĕ – чăваш юрри те илтĕнсе кайĕ. Таса пĕлĕте, çут тĕнчене, хĕрлĕ хĕвеле савса юрлĕ вăл. Чăваш юрринче – таса пĕлĕт çумĕнчи тăри юрри илтĕнĕ. Чăваш юрринче тинĕс хумĕ шавлĕ, вăрман чашлĕ, вĕççи-хĕррисĕр улăхсем симĕсленсе выртĕç. Авалхи хуйхă сасси илтĕнĕ, телей куç умне тăрĕ. Атăл хĕрри тăрăх тĕнче кĕсле сассипе янраса тăрĕ – çакă чăваш юрри пулĕ, чăваш сăмахĕ, чăваш чĕлхи пулĕ. Чăваш чĕлхи кăвар пулĕ, хĕрнĕ хурçă пулĕ!*

*Авалранпа чăваш хĕсĕкре пурăннă. Мĕн асап курман, мĕн тӳсмен вăл хăй чĕлхине сыхланăшăн. Чăваш çапах та пур асапран, пур хурлăх айĕнчен чăваш ятне çĕртмесĕр ку тарана çитернĕ. Сывă пултăр малалла та!*

**Хурав.**

Настанет время. И чувашский язык будет разрубать железо. Станет острым, станет раскаленною сталью. Будет время – люди услышат и чувашскую песню. Ясное небо, простор белого света, красное солнце любовно воспоет он, чуваш. В чувашской песне зазвенит трель жаворонка в поднебесье. В чувашской песне зашумят морские волны, зашелестит листвою лес, зазеленеют бескрайние луга.

Донесется до слуха стон древнего горя, счастье откроется взору. Гуслями зазвенит природа вдоль берегов Волги – это будет звон чувашской песни, чувашского слова, чувашского языка. Чувашский язык станет жаром горящих углей, раскаленною сталью станет.

Издревле жил чуваш в угнетении. Каких страданий, каких мук он не вынес, защищая свой язык. Все же чуваш под всеми невзгодами, под горем огромным не уронил своего достоинства и донес свою честь, свое доброе имя до наших дней. Пусть здравствует и в грядущем!

**10. Ыйту (ĕç).**

*Театр, сцена, артист, чун, телей, тивĕç, пурнăç, шăпа, илем* сăмахсемпе усă курса 1-2 çавраллă сăвă çырăр.

## *Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада 2019-мĕш çул*

## *10-мĕш класс (вырăс шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем*

**1. Ыйту (ĕç).**

Пĕрремĕш юпари чĕлхе терминĕсене тата иккĕмĕш юпари тĕслĕхсене вулăр.

| | |
|---|---|
| 1. Пайăр ятсем | А. пăт, вулăс |
| 2. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем | Ă. Сăр, Сетнер, Муркаш |
| 3. Фразеологизмсем | Б. вăтан, имен |
| 4. Антонимсем | В. шăл (ыхра шăлĕ, сӳре шăлĕ, выльăх шăлĕ, кĕрепле шăлĕ) |
| 5. Омонимсем | Г. çутăл, тĕттĕмлен |
| 6. Кивелнĕ сăмахсем (архаизмсем, историзмсем) | Д. кăмăла хуç, пăлахая пер |
| 7. Синонимсем | Е. сăн-сăпат, кунĕн-çĕрĕн |
| 8. Евĕрлев сăмахĕсем | Ĕ. пушкăрт, тутар, турккă |
| 9. Мăшăр сăмахсем | Ж. çĕр (сто), çĕр (гнить) |
| 10. Хурăнташ чĕлхесем | З. вĕлтĕр-вĕлтĕр, çăт-çăт |

Терминсене тата тĕслĕхсене шайлаштарăр.

Хăш термин патне хăш тĕслĕх килĕшӳллĕ?

Хуравсене таблицăра пысăк сас паллипе кăтартса çырăр.

**Хурав.**

| Терминсем | Сас палли |
|---|---|
| 1. Пайӑр ятсем | Ӑ |
| 2. Нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем | В |
| 3. Фразеологизмсем | Д |
| 4. Антонимсем | Г |
| 5. Омонимсем | Ж |
| 6. Кивелнӗ сӑмахсем (архаизмсем, историзмсем) | А |
| 7. Синонимсем | Б |
| 8. Евӗрлев сӑмахӗсем | З |
| 9. Мӑшӑр сӑмахсем | Е |
| 10. Хурӑнташ чӗлхесем | Ӗ |

**2. Ыйту (ӗҫ).**

*Пуҫ, алӑ, чӗлхе, кӑкӑр, хырӑм, шӑл, чӗре, ҫӑвар, ура, хӑлха* – ҫак сӑмахсемпе кашнинпе икшер фразеологизм ҫырӑр.

**Хурав.**

| Ӳт-пӳ пайӗ | Ачасен хуравӗсенче тӗл пулма пултаракан фразеологизм тӗслӗхӗсем |
|---|---|
| пуҫ | пуҫ ҫине хӑпарса лар, пуҫ ҫурӑлса тухать, пуҫа ҫухат, пуҫ ҫап т.ыт.те |
| алӑ | алӑ пырать, алла ил, алла ус, алла пар, алла вӗрент т.ыт.те |
| чӗлхе | пуклак чӗлхе, чӗлхе кӗҫӗтет, чӗлхе ҫаврӑнмасть, чӗлхе ҫыхланать т.ыт.те |
| кӑкӑр | кӑкӑр ҫап, кӑкӑртан юлашки сывлӑш тухиччен т.ыт.те |
| хырӑм | хырӑм хыр тӑрне кайрӗ, хырӑм тытса кул т.ыт.те |

| | |
|---|---|
| шăл | шăл хайра, шăл витмест, шăл çырт, шăл шакка, шăл йĕр т.ыт.те |
| чĕре | чĕрене тив, чĕрене уç, чĕрене хытар, чĕререн тух, чĕрене ыраттар, чĕрене çемçет, чĕрене ил, чĕрене çунтар, чĕрене çур, чĕре сикет т.ыт.те |
| çăвар | çăвар кар, çăвар уç, çăварне хупла, çăвара шыв сып, çăвар вылят т.ыт.те |
| ура | урараn ура иртмест, ура çине тăр, ура ярса пус, урараn ӳк т.ыт.те |
| хăлха | хăлхана чик, хăлхана кĕр т.ыт.те |

**3. Ыйту (ĕç).**

Ултă сас паллирен тăракан сăмах тăвăр. Çав сăмаха тума:

1) çулнă утă ретне (йĕркине) чăвашла мĕн теççĕ? Çав сăмахăн пуçламăш сас паллине илĕр;

2) чăваш алфавитĕнчи çирĕм тăваттăмĕш сас паллине çырăр;

3) *йăвă* «густой» сăмахăн синонимне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр;

4) «Обратный словарь» тенине чăвашла мĕнле куçаратпăр? Чи пĕрремĕш сас паллине илĕр;

5) *Наум Андреевич, Иван Андреевич, Василий Алексеевич* – чăваш чĕлхеçисем; вĕсен хушамачĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр;

6) сонорлă (ялан янăравлă) хупă сасăсенчен хăшĕ чăваш сăмахĕн пуçламăшĕнче тĕл пулмасть? Çав сасса палăртакан сас паллине çырăр.

Мĕнле сăмах пулнине, унăн синонимне çырăр.

**Хурав.**

1) çулнă утă ретне (йĕркине) чăвашла мĕн теççĕ? Çав сăмахăн пуçламăш сас паллине илĕр – **П** (паккус);

2) чăваш алфавитĕнчи çирĕм тăваттăмĕш сас паллине çырăр – **У**;

3) *йăвă* «густой» сăмахăн синонимне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр – **Ç** (çăра);

4) «Обратный словарь» тенине чăвашла мĕнле куçаратпăр? Чи пĕрремĕш сас паллине илĕр – **Т** (тӳнтер словарь);

5) *Наум Андреевич, Иван Андреевич, Василий Алексеевич* – чăваш чĕлхеçисем; вĕсен хушамачĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр – **А** (Андреев);

6) сонорлă (ялан янăравлă) хупă сасăсенчен хăшĕ чăваш сăмахĕн пуçламăшĕнче тĕл пулмасть? Çав сасса палăртакан сас паллине çырăр – **Р**.

ПУÇТАР (пуçтар), синонимĕ – *пух.*

**4. Ыйту (ĕç).**

Пĕр тымартан пулăннă иккĕмĕшле сăмахсене çырса илĕр:

*ăнлă, ăнать, ăнтăл, ăнлав, парăн, савăн, ăна-кăна, ăншăрт, ăнлан, ăнтăх, ăнкар, ăнлантаруллă, кавăн, пурăн.*

**Хурав.**

Пĕр тымартан пулăннă иккĕмĕшле сăмахсем:

*ăнлă, ăнлав, ăнлан, ăнкар, ăнлантаруллă.*

**5. Ыйту (ĕç).**

Чăваш чĕлхине тĕпченĕ венгр çыннисен ятне тата хушаматне çырăр.

**Хурав.**

Ачасен хуравĕнче пулма пултаракан ятсем:

Клара Адягаши;

Йожеф Буденц;

Золтан Гомбоц;

Антал Регули;

Андраш Рона-Таш.

**6. Ыйту.**

Сăнарлă шухăш аталанăвне çак мелсемпе йĕркелени хăш литература жанрĕнче тĕл пулать?

*Темăна палăртни, аталантарни, кульминаци, вĕçлев, катрен (тăватйĕркелĕх), терцина (виçйĕркелĕх).*

**Хурав.**

Сонет жанрĕнче.

**7. Ыйту (ĕç).**

Çак символ-сăнарсем хăш хайлава кăшăлласа тăраççĕ? Жанрне, хайлав авторне палăртăр.

*Кăвапа, сухал, асамлă çĕрĕ,сăсар çĕлĕк.*

**Хурав.**

«Кĕлпук мучи». Жанрĕ – поэма, авторĕ – Ухсай Яккăвĕ.

**8.** Çак йĕркесен авторĕ кам? Сăвва кама халалланă-ши? Сăвă виçине тата карт шутне палăртăр.

*Тунсăхларĕ Сире тăлăх Миша-упа,*

*Тертленсе çитрĕ чунĕ телейсĕрĕн.*

*Тем те парĕ курасшăн Сире вăл куçпа,*

*Кĕтнĕ çутă кунне çитерейнĕшĕн.*

**Хурав.**

Çеспĕл Мишши. Анастасия Червякована халалланă. Сăвă виçи – анапест, 4 тата 3 картлă.

**9. Ыйту (ĕç).**

Текста вырăсла куçарăр:

*Вăхăт çитĕ. Чăваш чĕлхи те тимĕр татĕ. Çивĕч пулĕ. Хĕртнĕ хурçă пек пулĕ. Вăхăт çитĕ – чăваш юрри те илтĕнсе кайĕ. Таса пĕлĕте, çут тĕнчене, хĕрлĕ хĕвеле савса юрлĕ вăл. Чăваш юрринче – таса пĕлĕт çумĕнчи тăри юрри илтĕнĕ. Чăваш юрринче тинĕс хумĕ шавлĕ, вăрман чашлĕ, вĕççи-хĕррисĕр улăхсем симĕсленсе выртĕç. Авалхи*

*хуйхă сасси илтĕнĕ, телей куç умне тăрĕ. Атăл хĕрри тăрăх тĕнче кĕсле сассипе янраса тăрĕ – çакă чăваш юрри пулĕ, чăваш сăмахĕ, чăваш чĕлхи пулĕ. Чăваш чĕлхи кăвар пулĕ, хĕрнĕ хурçă пулĕ!*

*Авалранпа чăваш хĕсĕкре пурăннă. Мĕн асап курман, мĕн тӳсмен вăл хăй чĕлхине сыхланăшăн. Чăваш çапах та пур асапран, пур хурлăх айĕнчен чăваш ятне çĕртмесĕр ку тарана çитернĕ. Терт хушшинче, ют халăх айĕнче чăваш чĕлхи çухалман. Ĕмĕрсем иртсе пынă. Чăваш шăппăн калаçнă. Чăваш чĕлхине пур тавраран тулантă. Вăл çавах та халь те чĕрĕ, халь те сывă. Пур мăшкăла пăхмасăр – халь те сывă. Сывă вăл! Сывă пултăр малалла та! Çак ĕç – чăваш малашне хăй чĕлхипе аслати алтса çиçĕм çиçтерессине палăртать. Çак ĕç пире шанчăк парать. Шанатпăр. Вăхăт çитĕ! Шанчăк пуррисем – телейлĕ.*

**Хурав.**

Настанет время. И чувашский язык будет разрубать железо. Станет острым, станет раскаленною сталью. Будет время – люди услышат и чувашскую песню. Ясное небо, простор белого света, красное солнце любовно воспоет он, чуваш. В чувашской песне зазвенит трель жаворонка в поднебесье. В чувашской песне зашумят морские волны, зашелестит листвою лес, зазеленеют бескрайние луга. Донесется до слуха стон древнего горя, счастье откроется взору. Гуслями зазвенит природа вдоль берегов Волги – это будет звон чувашской песни, чувашского слова, чувашского языка. Чувашский язык станет жаром горящих углей, раскаленною сталью станет.

Издревле жил чуваш в угнетении. Каких страданий, каких мук он не вынес, защищая свой язык. Все же чуваш под всеми невзгодами, под горем огромным не уронил

своего достоинства и донес свою честь, свое доброе имя до наших дней. В лишеньях и в муках, под чужими народами чувашский язык не пропал. Века проходили за веками. Чуваш разговаривал тихо. Чувашский язык травили со всех сторон. А он все такой же – живой, невредимый. Вопреки всем глумленьям – он жив и поныне. Жив он! Пусть здравствует и в грядущем! Это значит – чуваш своим словом заставит гром грохотать и вызовет молний огонь. Это нам дает уверенность. Верим! Настанет время! Кто верит – тот счастлив.

**10. Ыйту (ĕç).**

*Театр, сцена, артист, чун, телей, тивĕç, пурнăç, шăпа, илем* сăмахсемпе усă курса 1-2 çавраллă сăвă çырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2019-мĕш çул***

***11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Пĕрремĕш юпари чĕлхе терминĕсене тата иккĕмĕш юпари тĕслĕхсене вулăр.

| | |
|---|---|
| 1. Антонимсем | А. кĕрепенкке, пурмис |
| 2. Синонимсем | Ă. пуç (ял пуçĕ, выльăх пуçĕ, çемье пуçĕ, купăста пуçĕ) |
| 3. Фразеологизмсем | Б. ĕнен, шан |
| 4. Мăшăр сăмахсем | В. Урине, Хĕрлĕ Чутай, Сăр |
| 5. Омонимсем | Г. йăвă, сайра |
| 6. Кивелнĕ сăмахсем (архаизмсем, историзмсем) | Д. чапа кăлар, чыс ту, тăнран яр |
| 7. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем | Е. ир-каç, апла-капла |
| 8. Евĕрлев сăмахĕсем | Ĕ. туркмен, узбек, казах |
| 9. Пайăр ятсем | Ж. тар (пот), тар (убегать) |
| 10. Хурăнташ чĕлхесем | З. шĕпĕл-шĕпĕл, шăпăр-шăпăр |

Терминсене тата тĕслĕхсене шайлаштарăр.

Хăш термин патне хăш тĕслĕх килĕшӳллĕ?

Хуравсене таблицăра пысăк сас паллипе кăтартса çырăр.

**Хурав.**

| Терминсем | Сас палли |
|---|---|
| 1. Антонимсем | Г |
| 2. Синонимсем | Б |
| 3. Фразеологизмсем | Д |
| 4. Мăшăр сăмахсем | Е |
| 5. Омонимсем | Ж |
| 6. Кивелнĕ сăмахсем (архаизмсем, историзмсем) | А |
| 7. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем | Ă |
| 8. Евĕрлев сăмахĕсем | З |
| 9. Пайăр ятсем | В |
| 10. Хурăнташ чĕлхесем | Ĕ |

**2. Ыйту (ĕç).**

*Пуç, алă, чĕлхе, кăкăр, хырăм, шăл, чĕре, çăвар, ура, хăлха* – çак сăмахсемпе кашнинпе икшер фразеологизм çырăр.

**Хурав.**

| Ӳт-пӳ пайĕ | Ачасен хуравĕсенче тĕл пулма пултаракан фразеологизм тĕслĕхĕсем |
|---|---|
| пуç | пуç çине хăпарса лар, пуç çурăлса тухать, пуçа çухат, пуç çап т.ыт.те |
| алă | алă пырать, алла ил, алла ус, алла пар, алла вĕрент т.ыт.те |
| чĕлхе | пуклак чĕлхе, чĕлхе кĕçĕтет, чĕлхе çаврăнмасть, чĕлхе çыхланать т.ыт.те |
| кăкăр | кăкăр çап, кăкăртан юлашки сывлăш тухиччен т.ыт.те |
| хырăм | хырăм хыр тăрне кайрĕ, хырăм тытса кул т.ыт.те |

| | |
|---|---|
| шăл | шăл хайра, шăл витмест, шăл çырт, шăл шакка, шăл йĕр т.ыт.те |
| чĕре | чĕрене тив, чĕрене уç, чĕрене хытар, чĕререн тух, чĕрене ыраттар, чĕрене çемçет, чĕрене ил, чĕрене çунтар, чĕрене çур, чĕре сикет т.ыт.те |
| çăвар | çăвар кар, çăвар уç, çăварне хупла, çăвара шыв сып, çăвар вылят т.ыт.те |
| ура | урараn ура иртмест, ура çине тăр, ура ярса пус, урараn ӳк т.ыт.те |
| хăлха | хăлхана чик, хăлхана кĕр т.ыт.те |

**3. Ыйту (ĕç).**

Çичĕ сас паллирен тăракан сăмах тăвăр. Çав сăмаха тума:

1) çулнă утă ретне (йĕркине) чăвашла мĕн теççĕ? Çав сăмахăн пуçламăш сас паллине илĕр;

2) «училище» сăмах вĕçĕнче мĕнле сасă илтĕннине çырăр;

3) чăваш алфавитĕнчи вун пиллĕкмĕш сас паллине çырăр;

4) «Обратный словарь» тенине чăвашла мĕнле куçаратпăр? Чи пĕрремĕш сас паллине илĕр;

5) «хăвăрт» сăмахăн уçă сасăпа пуçланакан антонимне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр;

6) сонорлă (ялан янăравлă) хупă сасăсенчен хăшĕ чăваш сăмахĕн пуçламăшĕнче тĕл пулмасть? Çав сасса палăртакан сас паллине çырăр;

7) çемçе уçă сасă, кивĕ çырулăх палăкĕсенче ку сас паллипе усă курман, чăваш çырулăхне ăна чи малтан Н.И. Золотницкий кĕртнĕ; çав сас паллине çырăр.

Мĕнле сăмах пулнине, унăн синонимне çырăр.

**Хурав.**

1) çулнă утă ретне (йĕркине) чăвашла мĕн теççĕ? Çав сăмахăн пуçламăш сас паллине илĕр;

2) «училище» сăмах вĕçĕнче мĕнле сасă илтĕннине çырăр;

3) чăваш алфавитĕнчи вун пиллĕкмĕш сас паллине çырăр;

4) «Обратный словарь» тенине чăвашла мĕнле куçаратпăр? Чи пĕрремĕш сас паллине илĕр;

5) «хăвăрт» сăмахăн уçă сасăпа пуçланакан антонимне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр;

6) сонорлă (ялан янăравлă) хупă сасăсенчен хăшĕ чăваш сăмахĕн пуçламăшĕнче тĕл пулмасть? Çав сасса палăртакан сас паллине çырăр;

7) çемçе уçă сасă, кивĕ çырулăх палăкĕсенче ку сас паллипе усă курман, чăваш çырулăхне ăна чи малтан Н.И. Золотницкий кĕртнĕ; çав сас паллине çырăр.

ПĔЛТЕРӲ (пĕлтерӳ), синонимĕ – *хыпар.*

**4. Ыйту (ĕç).**

*Пăт-пат çумăр çуса иртрĕ* предложенири евĕрлев сăмахĕн пĕлтерĕшне палăртăр; панă вариантсенчен хăшĕ тĕрĕс, çавна çырса илĕр:

çумăр тумламĕсем шултра та йăвă;

çумăр тумламĕсем шултра, анчах сайра;

çумăр тикĕс те кĕске хушă çурĕ;

çумăр тумламĕсем вĕтĕ, анчах çăра.

**Хурав.**

çумăр тумламĕсем шултра, анчах сайра.

**5. Ыйту (ĕç).**

Текстра йăнăш çырнă сăмаха (сăмахсене) тупăр та тĕрĕс çырăр.

Теплицă патĕнчен пахча хĕррине утрăмăр. Унта тимĕр сетка тытнă: чăхсем йăрансене ан чавчăр. Мĕн кăна çук хуралтăсем хушшынче! Фанера, шифер, пралук çиххи, кислород баллонĕ... Пӳрт айкине, пахчана, крыльца тухать. Ун тăрăх хăпарса малти пӳрте кĕтĕмĕр. Кунта курмалли нимех те çук пек туйĕнчĕ: пысăк кăмака, холодильник, клейонка сарнă тăваткал сĕтел. Шалти пӳртре вара – ерешлĕ турилккесем, сервиссем. Çтаппан гардероп енчен те катăк мар: сăран костюмсем, виçĕ плащ, хĕллехи пальтосем.

**Хурав.**

| Йăнăш çырнă сăмах | Тĕрĕс çырнă сăмах |
|---|---|
| теплицă | теплица |
| чавчăр | чавччăр |
| хушшынче | хушшинче |
| çиххи | çыхxи |
| айкине | айккине |
| туйĕнчĕ | туйăнчĕ |
| клейонка | клеенка |
| ерешлĕ | эрешлĕ |
| сервиссем | сервизсем |
| гардероп | гардероб |

**6. Ыйту.**

Мĕн вăл плеоназм?

**Хурав.**

Калуçă нумай сăмахлăн калаçса айвана пенĕ пек пулни.

**7. Ыйту (ĕç).**

Çак сăнлăхсем хăш хайлава кăшăлласа тăраççĕ? Авторне те палăртăр.

*Хурама, пушар, ашшĕ-амăшĕпе ачи-пăчи хушшинчи çыхăнусем, пиччĕшĕпе шăллĕ, мул упраннă арча.*

**Хурав.**

«Хура çăкăр» романра. Авторĕ – Илпек Микулайĕ.

**8. Ыйту.**

«Кăвак хуппи» ятлă хайлав çырнă авторсене аса илĕр.

**Хурав.**

Н. Мартынов тата Ухсай Яккăвĕ.

**9. Ыйту (ĕç).**

Текста вырăсла куçарăр:

*Вăхăт çитĕ. Чăваш чĕлхи те тимĕр татĕ. Çивĕч пулĕ. Хĕртнĕ хурçă пек пулĕ. Вăхăт çитĕ – чăваш юрри те илтĕнсе кайĕ. Таса пĕлĕте, çут тĕнчене, хĕрлĕ хĕвеле савса юрлĕ вăл. Чăваш юрринче – таса пĕлĕт çумĕнчи тăри юрри илтĕнĕ. Чăваш юрринче тинĕс хумĕ шавлĕ, вăрман чашлĕ, вĕççи-хĕррисĕр улăхсем симĕсленсе выртĕç. Авалхи хуйхă сасси илтĕнĕ, телей куç умне тăрĕ. Атăл хĕрри тăрăх тĕнче кĕсле сассипе янраса тăрĕ – çакă чăваш юрри пулĕ, чăваш сăмахĕ, чăваш чĕлхи пулĕ. Чăваш чĕлхи кăвар пулĕ, хĕрнĕ хурçă пулĕ!*

*Авалранпа чăваш хĕсĕкре пурăннă. Мĕн асап курман, мĕн тӳсмен вăл хăй чĕлхине сыхланăшăн. Чăваш çапах та пур асапран, пур хурлăх айĕнчен чăваш ятне çĕртмесĕр ку тарана çитернĕ. Терт хушшинче, ют халăх айĕнче чăваш чĕлхи çухалман. Ĕмĕрсем иртсе пынă. Чăваш шăппăн калаçнă. Чăваш чĕлхине пур тавраран тулană. Вăл çавах та халь те чĕрĕ, халь те сывă. Пур мăшкăла пăхмасăр – халь те сывă. Сывă вăл! Сывă пултăр малалла та! Çак ĕç –*

*чăваш малашне хăй чĕлхипе аслати алтса çиçĕм çиçтерессине палăртать. Çак ĕç пире шанчăк парать. Шанатпăр. Вăхăт çитĕ! Шанчăк пуррисем – телейлĕ.*

*Мăшкăл айĕнчен чĕрĕ тухнă чĕлхе тĕнчере çухалмĕ. Ку таранччен чăваш сăмахĕ илтĕнмен, – халĕ чăваш юрри илтĕнĕ; чăваш сăвви, чăваш сăмахĕ Атăл хумĕ пек, вăрман сасси пек, кĕсле сасси вырăнне пулĕ. Чăваш чĕлхи тимĕр татĕ, çивĕч пулĕ.*

*Вăхăт çитĕ! Вăхăт çитĕ!*

**Хурав.**

Настанет время. И чувашский язык будет разрубать железо. Станет острым, станет раскаленною сталью. Будет время – люди услышат и чувашскую песню. Ясное небо, простор белого света, красное солнце любовно воспоет он, чуваш. В чувашской песне зазвенит трель жаворонка в поднебесье. В чувашской песне зашумят морские волны, зашелестит листвою лес, зазеленеют бескрайние луга. Донесется до слуха стон древнего горя, счастье откроется взору. Гуслями зазвенит природа вдоль берегов Волги – это будет звон чувашской песни, чувашского слова, чувашского языка. Чувашский язык станет жаром горящих углей, раскаленною сталью станет.

Издревле жил чуваш в угнетении. Каких страданий, каких мук он не вынес, защищая свой язык. Все же чуваш под всеми невзгодами, под горем огромным не уронил своего достоинства и донес свою честь, свое доброе имя до наших дней. В лишеньях и в муках, под чужими народами чувашский язык не пропал. Века проходили за веками. Чуваш разговаривал тихо. Чувашский язык травили со всех сторон. А он все такой же – живой, невредимый. Вопреки всем глумленьям – он жив и поныне. Жив он! Пусть здравствует и в грядущем! Это значит – чуваш своим словом заставит гром грохотать и вызовет молний огонь. Это нам

дает уверенность. Верим! Настанет время! Кто верит – тот счастлив.

Язык, уцелевший под гоненьем и травлей, не пропадет в мире бесследно. Доселе не слышно было чувашского слова, – ныне услышат чувашскую песню; чувашский стих, чувашская речь взыграют как волны Волги, зашумят как лес, зазвенят как струны гуслей. Чувашский язык разрубит железо, станет острой сталью.

Будет время! Настанет время!

**10. Ыйту (ĕç).**

*Театр, сцена, артист, чун, телей, тивĕç, пурнăç, шăпа, илем* сăмахсемпе усă курса 1-2 çавраллă сăвă çырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2021-мĕш çул***

***9-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш ĕçсене пурнăçлăр:

*Автобус Çирĕклĕхе çитнĕ çĕре тĕттĕм пулса ларчĕ. Анса юлтăм та васкаса килелле утрăм. Ял çумĕнчи раща-ран тăмана вăрăммăн сас пачĕ. Укăлча çывăхĕнче сасартăк хыçалтан такам яп! ыталаса илчĕ. Кучченеç чикнĕ чăматан çĕр çине шаплатсах ӳкрĕ. Хăраса кайнăскер, хăвăртрах кĕсьерен хунар кăларса çутатса пăхрăм. Кампур пулчĕ иккен! Мана кĕтме тухнă!*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă сăмаха (сăмахсене) тупса пуçламăш формăра çырăр, вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Раща (роща), укăлча (околица), кучченеç (гостинец), чăматан (чемодан), хунар (фонарь).

**2. Ыйту (ĕç).**

Автобус çитсе чарăннă ял ятĕнче мĕнле йывăç ячĕ пур? Çав йывăç ятне çырăр, вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Çирĕк – ольха.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш сăмахра (сăмахсенче) сас паллисен шучĕ сасăсен шутĕнчен нумайрах? Çав сăмаха (сăмахсене) çырăр.

**Хурав.**

Тĕттĕм, килелле, вăрăммăн, кучченеç, иккен.

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстра мĕнле чĕрчун çинчен сăмах пырать? Вăл мĕн ятлă? Ку ят хăш сăмахсенчен пулнă? Çав ятри иккĕмĕш сăмахĕн антонимне çырăр.

**Хурав.**

Йытă çинчен. Кампур ятлă. Кам, пур сăмахсенчен. Çук.

**5. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах çырăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр:

1) Н.И. Ашмарин словарĕн чăвашла ячĕ мĕнле? Пĕрремĕш сас паллине илĕр.

2) *Мечта* сăмаха чăвашла куçарăр та пуçламăш сас паллине çырăр.

3) Чĕлхери мĕн пур сăмах йышне тĕпчесе вĕрентекен пай, ун пĕрремĕш сас паллийĕ.

4) Хусанти пĕрремĕш чăваш театрĕ лартнă пĕрремĕш спектакль ятне аса илĕр. Çав спектакль ятĕнчи пĕрремĕш сас паллине çырăр.

5) Чăваш Республикинчи хула, Н.И. Ашмаринпа çыхăннă. Çав хулан чăвашла ятне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

**Хурав.**

1) Чăваш сăмахĕсен кĕнеки – **Ч**

2) Ĕмĕт – **Ĕ**

3) Лексикологи – **Л**

4) Хăв пурăнас тенĕ пек ан пурăн – **Х**

5) Етĕрне – **Е**

ЧĔЛХЕ (чĕлхе).

**6. Ыйту.**

Сăнарлă шухăш аталанăвне çак мелсемпе йĕркелени хăш литература жанрĕнче тĕл пулать?

*Пусăрăнчăк шухăш-туйăм, салху кĕвĕ-çемĕ.*

Çав жанрăн пĕрремĕш сас паллийĕпе пуçланакан тепĕр литература терминĕ аса илĕр, пĕлтерĕшне ăнлантарса çырăр.

**Хурав.**

Элеги жанрĕнче.

Экспромт, эпиграф, эпизод, эпилог, эпиграмма, эпитафи, этюд, эпифора т.ыт.те.

**7. Ыйту.**

Çак йĕркесен авторне тата хайлав ятне асăнăр:

*Сĕтел хушшинче ларса тухсан атте çăкăр касать. Çăкăр сăмсине вăл хăй валли хăварать. Сăмси хыççăнхи, ташă чĕлли, мана тивет, иккĕмĕшĕ – пиччене. Малалли – ытти çынсене. Хăш чухне эпĕ çăкăр сăмсине ыйтса пăхатăп та – мана памаççĕ. «Юрамасть, арăмун сăмси пысăк пулĕ», – теççĕ.*

**Хурав.**

Никифор Охотников «Сĕтел хушшинче».

**8. Ыйту (ĕç).**

Произведени ятĕнче тĕсе палăртакан сăмахлă проза тата драма хайлавĕсене аса илĕр, 5-рен кая мар çырăр, авторне те палăртăр.

**Хурав.**

Ачасен хуравĕнче тĕл пулма пултаракан хайлав ячĕсем:

А. Артемьев «Симĕс ылтăн», Çемен Элкер «Хурапа шурă», Илпек Микулайĕ «Хура çăкăр», Ю. Скворцов «Хĕрлĕ мăкăнь», Ухсай Яккăвĕ «Хура элчел», А. Емельянов

«Хура кăрăç», Н. Петровская «Шурă лили», Н. Петровская «Хура ангел», Юхма Мишши «Кăвак çĕмрен» т.ыт.те.

**9. Ыйту (ĕç).**

Текста вырăсла куçарăр:

*Шухăш çăмхи сӳтĕлме тытăнсан – тытса та чараймăн.*

*Аса килет тата Укахви хăй ялтан окоп чавма тухса кайни те...*

*Канаша çитнĕ çĕре Укахви, Хĕветли пек хĕрсем пĕр виç çĕр çынна яхăн пухăнчĕç.*

*Е. хули çывăхне илсе кайрĕç вĕсене... Çитсенех бригадăн-бригадăн уйăрчĕç. Кашни бригадăра – вăтăршар хĕр. Бригадирĕсем те хăйсем хушшинченех.*

*Блиндажсем, танксене чармалли окопсем чавтарчĕç вĕсене. Кун пек окопа тăваттăн-пиллĕкĕн ик-виçшер кун чавма тиветчĕ, йывăрччĕ ĕç.*

*Чи йывăрри вара раштав, кăрлач сиввисем çитсен пуçланчĕ.*

*Пуринчен ытла çамрăк шăм-шаксене сивĕ хуçрĕ. Çил туммир витĕр, ӳт-тир витĕр кастарса шăмăсенех çитсе кăтăклать, сулăнтарса ярать; çĕр çумĕпе, вирт кайнă пек, сăлпăран кустарать. Пите кăшт çиле хирĕç тытсанах тăм илсе ярать, çул çинче те хăяккăн çеç, минутсерен çил енне çурăмпа çаврăна-çаврăна утатăн. Алла алса ăшĕнчех чăмăртаса тытатăн та – алса пӳрнескисем пушăллах сулланса пыраççĕ.*

**Хурав.**

Тянется и тянется бесконечная нить воспоминаний...

Легок только вот этот прохладный лесной воздух, да и то дышать им почему-то трудно.

Жизнь – слово тяжелое.

Начнет разматываться клубок воспоминаний – и не остановишь его потом.

...Человек триста собралось их в Канаше – хрупких молоденьких девчонок и повзрослевших невеселых девушек. Они тоже едут на фронт, на фронт трудовой. Разбили их на бригады по тридцать человек, бригадиров выбрали из них же и повезли в город Е.

Сначала рыли блиндажи. Потом глубокие рвы. Работа неотложная, гнетущая и грязная. Не женское это дело – в два дня выкопать широченную глубокую яму.

В декабре ударили трескучие морозы. Дул промозглый ветер, то сухой, то влажный, он пробирал до костей, обжигал лицо, шею, шатал из стороны в сторону. Мела ледяная поземка, было холодно и голодно. И ходили девушки на студеном ветру бочком да рядком. Чтобы разогреться, сжимали пальцы в кулак, оставляя торчать в воздухе пустые варежки.

**10. Ыйту (ĕç).**

*Ахальтен мар халăхра «Пилĕкне хытă çых, ăсна хытă тыт», – тесе калаççĕ* каларăшпа вĕçленекен сочинени-шухăшлав çырăр (чăвашла).

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2021-мĕш çул***

***10-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш ĕçсене пурнăçлăр:

*Хваттер алăкĕн шăнкăравĕ сас пачĕ. Алăк умĕнче вăрăм та типшĕм питлĕ, пысăках мар чăматан йăтнă каччă тăрать. Ула карттусне пĕр вĕçĕм хуçлаткалать, унтан çамка çинчи вăрăм çӳçне пӳрнисемпе якатса илет. Карттус хуçи Петĕр ятлă иккен.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă сăмаха (сăмахсене) тупса пуçламăш формăра çырăр, вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Хваттер (квартира), чăматан (чемодан), карттус (картуз), хуçа (хозяин), Петĕр (Петр, Петя).

**2. Ыйту (ĕç).**

Каччăн карттусĕ мĕн тĕслĕ? Çав сăмаха çырăр та вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Ула – пёстрый, пятнистый.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстра пĕр йышши членсене çыхăнтаракан союза тупса çырăр.

**Хурав.**

Та.

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш сăмахра (сăмахсенче) сасăсен шучĕ сас паллисенчен нумайрах? Çав сăмаха (сăмахсене) çырăр.

**Хурав.**

Якатса, ятлă.

**5. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах çырăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр:

1) Н.И. Ашмарин словарĕн чăвашла ячĕ мĕнле? Пĕрремĕш сас паллине илĕр.

2) *Мечта* сăмаха чăвашла куçарăр та пуçламăш сас паллине çырăр.

3) Чĕлхери мĕн пур сăмах йышне тĕпчесе вĕрентекен пай, ун пĕрремĕш сас паллийĕ.

4) Хусанти пĕрремĕш чăваш театрĕ лартнă пĕрремĕш спектакль ятне аса илĕр. Çав спектакль ятĕнчи пĕрремĕш сас паллине çырăр.

5) Чăваш Республикинчи хула, Н.И. Ашмаринпа çыхăннă. Çав хулан чăвашла ятне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

**Хурав.**

1) Чăваш сăмахĕсен кĕнеки – **Ч**

2) Ĕмĕт – **Ĕ**

3) Лексикологи – **Л**

4) Хăв пурăнас тенĕ пек ан пурăн – **Х**

5) Етĕрне – **Е**

ЧĔЛХЕ (чĕлхе).

**6. Ыйту.**

Сăнарлă шухăш аталанăвне çак мелсемпе йĕркелени хăш литература жанрĕнче тĕл пулать?

*1, 2, 4-мĕш йĕркесем рифмăланни, 3-мĕш састашсăр пулни, философиллĕ тĕшĕ мала тухни.*

Ҫав жанрăн пĕрремĕш сас паллийĕпе пуҫланакан тепĕр литература терминĕ аса илĕр, пĕлтерĕшне ăнлантарса ҫырăр.

**Хурав.**

Рубаи жанрĕнче.

Ремарка, ретроспекци, ретрадаци, реквием, реминисценци, реализм, реплика т.ыт.те.

**7. Ыйту (ĕҫ).**

Ухсай Яккăвĕн пĕрремĕш сăвви мĕн ятлă? Пĕр ҫаврине аса илсе ҫырăр.

**Хурав.**

«Юратрăм эп хирсем, сире» ятлă.

Юратрăм эп, хирсем, сире,
Сана та, сĕм-хура вăрман!
Нихҫан та шухă чĕрере.
Ку юрату ҫухалмĕ ман.

**8. Ыйту (ĕҫ).**

Произведени ятĕнче тĕсе палăртакан сăмахлă проза тата драма хайлавĕсене аса илĕр, 5-рен кая мар ҫырăр, авторне те палăртăр.

**Хурав.**

Ачасен хуравĕнче тĕл пулма пултаракан хайлав ячĕсем:

А. Артемьев «Симĕс ылтăн», Ҫемен Элкер «Хурапа шурă», Илпек Микулайĕ «Хура ҫăкăр», Ю. Скворцов «Хĕрлĕ măкăнь», Ухсай Яккăвĕ «Хура элчел», А. Емельянов «Хура кăрăҫ», Н. Петровская «Шурă лили», Н. Петровская «Хура ангел», Юхма Мишши «Кăвак ҫĕмрен» т.ыт.те.

**9. Ыйту (ĕç).**

Текста вырăсла куçарăр:

*Шухăш çăмхи сӳтĕлме тытăнсан – тытса та чараймăн.*

*Аса килет тата Укахви хăй ялтан окоп чавма тухса кайни те...*

*Канаша çитнĕ çĕре Укахви, Хĕветли пек хĕрсем пĕр виç çĕр çынна яхăн пухăнчĕç.*

*Е. хули çывăхне илсе кайрĕç вĕсене... Çитсенех бригадăн-бригадăн уйăрчĕç. Кашни бригадăра – вăтăршар хĕр. Бригадирĕсем те хăйсем хушшинченех.*

*Блиндажсем, танксене чармалли окопсем чавтарчĕç вĕсене. Кун пек окопа тăваттăн-пиллĕкĕн ик-виçшер кун чавма тиветчĕ, йывăрччĕ ĕç.*

*Чи йывăрри вара раштав, кăрлач сиввисем çитсен пуçланчĕ.*

*Пуринчен ытла çамрăк шăм-шаксене сивĕ хуçрĕ. Çил туммтир витĕр, ӳт-тир витĕр кастарса шăмăсенех çитсе кăтăклать, сулăнтарса ярать; çĕр çумĕпе, вирт кайнă пек, сăлпăран кустарать. Пите кăшт çиле хирĕç тытсанах тăм илсе ярать, çул çинче те хăяккăн çеç, минутсерен çил енне çурăмпа çаврăна-çаврăна утатăн. Алла алса ăшĕнчех чăмăртаса тытатăн та – алса пӳрнескисем пушăллах сулланса пыраççĕ. Тăм илтерсе янă аллисене хĕрсем сивĕ шыва чикеççĕ те, çара алăранах пăр «перчет-ки» шăнкăлт! хывăнса ӳкет.*

*Кунсерен лум-кĕреçе йывăрланса пырать алăра, хĕрсем чирлеççĕ...*

**Хурав.**

Тянется и тянется бесконечная нить воспоминаний...

Легок только вот этот прохладный лесной воздух, да и то дышать им почему-то трудно.

Жизнь – слово тяжелое.

Начнет разматываться клубок воспоминаний – и не остановишь его потом.

...Человек триста собралось их в Канаше – хрупких молоденьких девчонок и повзрослевших невеселых девушек. Они тоже едут на фронт, на фронт трудовой. Разбили их на бригады по тридцать человек, бригадиров выбрали из них же и повезли в город Е.

Сначала рыли блиндажи. Потом глубокие рвы. Работа неотложная, гнетущая и грязная. Не женское это дело – в два дня выкопать широченную глубокую яму.

В декабре ударили трескучие морозы. Дул промозглый ветер, то сухой, то влажный, он пробирал до костей, обжигал лицо, шею, шатал из стороны в сторону. Мела ледяная поземка, было холодно и голодно. И ходили девушки на студеном ветру бочком да рядком. Чтобы разогреться, сжимали пальцы в кулак, оставляя торчать в воздухе пустые варежки. Опускали озябшие руки в мерзлую воду, и с голых кистей сползали ледяные «перчатки».

С каждым днем тяжелели ломы и лопаты...

Многие болели.

**10. Ыйту (ĕç).**

*Ахальтен мар халăхра «Пилĕкне хытă çых, ăсна хытă тыт», – тесе калаççĕ* каларăшпа вĕçленекен сочиненишухăшлав çырăр (чăвашла).

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2021-мĕш çул***

***11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш ĕçсене пурнăçлăр:

*Кăмака умĕнчи чăлан çутă. Шур тутăрлă, кăвак çитсă кĕпеллĕ хĕрарăм икерчĕ пĕçерет. Кĕçех чейникри шыв та вĕреме кĕчĕ. Хĕрарăм ăна сĕтел çине илсе лартрĕ те, тутлăн çывăракан пĕчĕк хĕрне вăратма хатĕрленчĕ. Шкула кайма тăрас пулать.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă сăмаха (сăмахсене) тупăр та пуçламăш формăра çырăр, вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Чăлан (чулан), çитсă (ситец, ситцевое), чейник (чайник), сĕтел (стол), шкул (школа).

**2. Ыйту (ĕç).**

Иккĕмĕш предложенири *шур* сăмахăн омонимне (омонимĕсене) тупса çырăр, вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Шур – белый, шур – болото, шур – белизна, шур – бледнеть, шур – выцветать.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстри пĕр предложенире пунктуаци йăнăшĕ пур. Çав предложение тупăр та тӳрлетсе çырса илĕр.

**Хурав.**

*Хĕрарăм ăна сĕтел çине илсе лартрĕ те тутлăн çывăракан пĕчĕк хĕрне вăратма хатĕрленчĕ* (предложенире запятой лартмалла мар).

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстра сказуемăй пулакан паллă ятне тупса çырăр, антонимне кăтартăр.

**Хурав.**

Çутă – тĕттĕм.

**5. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах çырăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр:

1) Н.И. Ашмарин словарĕн чăвашла ячĕ мĕнле? Пĕрремĕш сас паллине илĕр.

2) *Мечта* сăмаха чăвашла куçарăр та пуçламăш сас паллине çырăр.

3) Чĕлхери мĕн пур сăмах йышне тĕпчесе вĕрентекен пай, ун пĕрремĕш сас паллийĕ.

4) Хусанти пĕрремĕш чăваш театрĕ лартнă пĕрремĕш спектакль ятне аса илĕр. Çав спектакль ятĕнчи пĕрремĕш сас паллине çырăр.

5) Чăваш Республикинчи хула, Н.И. Ашмаринпа çыхăннă. Çав хулан чăвашла ятне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

**Хурав.**

1) Чăваш сăмахĕсен кĕнеки – **Ч**

2) Ĕмĕт – **Ĕ**

3) Лексикологи – **Л**

4) Хăв пурăнас тенĕ пек ан пурăн – **Х**

5) Етĕрне – **Е**

ЧĔЛХЕ (чĕлхе).

**6. Ыйту (ěç).**

Сăнарлă шухăш аталанăвне çак мелсемпе йěркелени хăш литература жанрěнче тěл пулать?

*Çěкленӳлěхпе паттăрлăх туйăмě, çирěп виçеллě темп, сулăмлă кěвěлěх.*

Çав жанрăн пěрремěш сас паллийěпе пуçланакан тепěр литература терминě аса илěр, пěлтерěшне ăнлантарса çырăр.

**Хурав.**

Марш жанрěнче.

Метафора, метоними, миф, мифологи, монолог, мыскара т.ыт.те.

**7. Ыйту.**

Анатолий Емельянов «Ят» повеçре Модест Мухтанкин килěнче «чăх авăтать» тесе калать. Çак ытарлă сăмах çаврăнăшě мěне пěлтерет-ши?

**Хурав.**

Ку вăлтмăша Модест амăшě пирки калана, çемьере вăл хăй пуç пулса тăрать, упăшкине картмасть, хуçалăхне хăй тытса пырать.

**8. Ыйту (ěç).**

Произведени ятěнче шута (хисепе) палăртакан сăмахлă проза тата драма хайлавěсене аса илěр, 3-рен кая мар çырăр, авторне те палăртăр.

**Хурав.**

Ачасен хуравěнче пулма пултаркан хайлавсен ячěсем:

Л. Агаков «Пěрре, çуркунне…», Г. Тимофеев «Тăхăр ял», П. Осипов «Икě каччăн пěр шухăш», Хв. Уяр «Пěр сăмах», «Пěр ача пурнăçěпе вилěмě», Илле Тăхти «Икě çыру», «Пěр кěтӳ кашкăр» т.ыт.те.

**9. Ыйту (ĕç).**

Текста вырăсла куçарăр:

*Шухăш çăмхи сӳтĕлме тытăнсан – тытса та чараймăн.*

*Аса килет тата Укахви хăй ялтан окоп чавма тухса кайни те...*

*Канаша çитнĕ çĕре Укахви, Хĕветли пек хĕрсем пĕр виç çĕр çынна яхăн пухăнчĕç.*

*Е. хули çывăхне илсе кайрĕç вĕсене... Çитсенех бригадăн-бригадăн уйăрчĕç. Кашни бригадăра – вăтăршар хĕр. Бригадирĕсем те хăйсем хушшинченех.*

*Блиндажсем, танксене чармалли окопсем чавтарчĕç вĕсене. Кун пек окопа тăваттăн-пиллĕкĕн ик-виçшер кун чавма тиветчĕ, йывăрччĕ ĕç.*

*Чи йывăрри вара раштав, кăрлач сиввисем çитсен пуçланчĕ.*

*Пуринчен ытла çамрăк шăм-шаксене сивĕ хуçрĕ. Çил тумтир витĕр, ӳт-тир витĕр кастарса шăмăсенех çитсе кăтăклать, сулăнтарса ярать; çĕр çумĕпе, вирт кайнă пек, сăлпăран кустарать. Пите кăшт çиле хирĕç тытсанах тăм илсе ярать, çул çинче те хăяккăн çеç, минутсерен çил енне çурăмпа çаврăна-çаврăна утатăн. Алла алса ăшĕнчех чăмăртаса тытатăн та – алса пӳрнескисем пушăллах сулланса пыраççĕ. Тăм илтерсе янă аллисене хĕрсем сивĕ шыва чикеççĕ те, çара алăранах пăр «перчетки» шăнкăлт! хывăнса ӳкет.*

*Кунсерен лум-кĕреçе йывăрланса пырать алăра, хĕрсем чирлеççĕ, вĕсем вырăнне урăххисем килеççĕ...*

*Вĕсем малтан кăнтăрла ĕçлетчĕç пулсан, кайран ытларах çĕрле ĕçлеме тытăнчĕç. Ку вăл пĕр-икĕ хут тăшман самолечĕсем тылах вĕçсе кĕрсе бомба пăрахса хăварнă хыççăн пуçланчĕ. Укахви малтанхи хут юпа уйăхĕнче илтрĕ бомба шăхăрса аннине.*

**Хурав.**

Тянется и тянется бесконечная нить воспоминаний...

Легок только вот этот прохладный лесной воздух, да и то дышать им почему-то трудно.

Жизнь – слово тяжелое.

Начнет разматываться клубок воспоминаний – и не остановишь его потом.

...Человек триста собралось их в Канаше – хрупких молоденьких девчонок и повзрослевших невеселых девушек. Они тоже едут на фронт, на фронт трудовой. Разбили их на бригады по тридцать человек, бригадиров выбрали из них же и повезли в город Е.

Сначала рыли блиндажи. Потом глубокие рвы. Работа неотложная, гнетущая и грязная. Не женское это дело – в два дня выкопать широченную глубокую яму.

В декабре ударили трескучие морозы. Дул промозглый ветер, то сухой, то влажный, он пробирал до костей, обжигал лицо, шею, шатал из стороны в сторону. Мела ледяная поземка, было холодно и голодно. И ходили девушки на студеном ветру бочком да рядком. Чтобы разогреться, сжимали пальцы в кулак, оставляя торчать в воздухе пустые варежки. Опускали озябшие руки в мерзлую воду, и с голых кистей сползали ледяные «перчатки».

С каждым днем тяжелели ломы и лопаты...

Многие болели.

Раньше работали днем, но после того, как попали под бомбежку, стали рыть ночью. Тогда же, в октябре, Угахви впервые услышала, как свищет бомба.

**10. Ыйту (ĕç).**

*Ахальтен мар халăхра «Пилĕкне хытă çых, ăсна хытă тыт», – тесе калаççĕ* каларăшпа вĕçленекен сочинени-шухăшлав çырăр (чăвашла).

## *Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада 2022-мĕш çул*

## *9-мĕш класс (вырăс шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра чăваш чĕлхинчи мĕнле закон пирки сăмах пырать?

*Çак закон тăрăх, сăмахри тата сыпăкри уçă сасăсемпе хупă сасăсем хытăлăхпа çемçелĕх енчен килĕшсе тăраççĕ. Тĕслĕхрен, сăмах сыпăкĕнчи сасăсем е пурте хыттисем, е пурте çемçисем пулаççĕ. Çавăнпа та хытă сасăсенчен çеç тăракан сăмаха хытă сăмах, çемçе сасăсенчен тăраканнине çемçе сăмах теççĕ. Çак закона пула аффикссем те сăмахсем çумне хытăлăхпа çемçелĕх тĕлĕшĕнчен килĕшсе хушăнаççĕ.*

**Хурав.**

Ку текстра чăваш чĕлхинчи сингармонизм законĕ пирки сăмах пырать (урăхла ăна сасăсен юнашарлăх килĕшĕвĕ теççĕ).

**2. Ыйту (ĕç).**

Кирлĕ çĕрте чарăну паллисем лартса çырса илĕр.

*Карпатăн çӳллĕ тăвĕсем те Крымăн кипарисĕсемпе пальмисем те Карелин çап-çутă кӳллисем те çук кунта тăван кĕтесĕм çапах та сан Атăлпа Сăр хушшинче вырнаçнă çĕнĕ хулусем ешĕл вăрманусем те анлă хирӳсем тунсăхланă чĕремшĕн виçесĕр хаклă.*

**Хурав.**

Карпатăн çӳллĕ тăвĕсем те, Крымăн кипарисĕсемпе пальмисем те, Карелин çап-çутă кӳллисем те çук кунта, тăван кĕтесĕм, çапах та сан Атăлпа Сăр хушшинче вырнаçнă çĕнĕ хулусем, ешĕл вăрманусем те анлă хирӳсем тунсăхланă чĕремшĕн виçесĕр хаклă.

**3. Ыйту.**

Хăш ушкăнри сăмахсенче *ă, ĕ* сасăсем тухса ӳкмеççĕ?

1) вĕлтĕрен, çĕмĕрĕл, пичĕке

2) кăвас, алăпа, пурăнăç

3) тĕлĕк, кĕнеке, пулăш

4) кĕлентĕр, шултăра, темĕскер

**Хурав.**

3-мĕш ушкăнри сăмахсенче *ă, ĕ* сасăсем тухса ӳкмеççĕ:

3) тĕлĕк, кĕнеке, пулăш.

**4. Ыйту (ĕç).**

Çанталăк мĕнле пулассине пĕлтерекен 5 сăнав çырăр.

**Хурав.**

Ачасен хуравĕсенче тĕл пулма пултаракан сăнавсен тĕслĕхĕсем:

*Йытă юр çине выртсан сивĕтет. Çĕнĕ уйăхла çумăр пулсан эрнипех çумăр пулать. Сывлăм ӳксен – уяра* т. ыт.те.

**5. Ыйту (ĕç).**

Хăш тĕслĕхре йăнăш çук?

1) Машина патĕнче кăткă пек халăх хĕвĕшет.

2) Эпĕ те сан пек чĕрчунсене юрататăп.

3) Андриян Николаев – пĕрремĕш чăвашсен космонавчĕ.

4) Кӳршĕри улмуççи пахчинче шăпчăк юрлать.

**Хурав.**

4) Кӳршĕри улмуççи пахчинче шăпчăк юрлать.

**6. Ыйту (ĕç).**

Паллă поэтăмăрăн сăвă çаврине онлайн куçарупа усă курса ют чĕлхене куçарнă хыççăн каялла чăвашла куçарсан çапла тĕслĕх пулать:

*Çĕршер çулсем иртеççĕ,*
*Хал хушса этем чунне.*
*Çыруçăсем шыраççĕ*
*Чăваш енĕн ĕмĕрне.*
*Малалла эпир пăхатпăр,*
*Хыçала та халь сăнатпăр,*
*Ман шутпа, эпир пурнатпăр –*
*Халĕ те, ыран, ялан.*

Онлайн куçарура паллă поэтăмăрăн мĕнле сăвă йĕркисемпе усă курнă-ши? Çав сакăр йĕркеллĕ çаврана аса илсе çырăр.

**Хурав.**

Ĕмĕрсем иртсе пыраççĕ
Ӳстерсе ăс-хал мулне.
Кĕнекеçĕсем шыраççĕ
Чăвашсен кунне-çулне.
Тинкеретпĕр малалла,
Кайрине те халь куратпăр...
Манăн шухăшăмпала –
Эпир пулнă, пур, пулатпăр.

**7. Ыйту (ĕç).**

6-мĕш ыйту хуравĕнчи сăвă йĕркисен авторĕ кам? Виçине те палăртăр.

**Хурав.**

Петĕр Хусанкай. Виçи – хорей.

**8. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах тупăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр, хуравĕсене çырăр.

1) Математикăпа, историпе, чăваш этнографипе, чăваш фольклорĕпе кăсăкланнă çыравçă. Ун хушамачĕн иккĕмĕш сас паллийĕ мĕнле?

2) И.Я. Яковлев хайлавӗнче «Ӗҫлесе ҫисен ҫăкăр та тутлă, тăрансан … та йӳҫӗ» текен шухăш пур. Сиктерсе хăварнă сăмахăн иккӗмӗш сас паллийӗ.

3) Мăнлату термина вырăсла мӗнле калаççӗ? Виççӗмӗш сас паллине илӗр.

4) Аслă ҫын кӗҫӗннисене, ятлă-сумлă ҫын тăван халăха ырлăх-сывлăх сунса, малашлăхра йӗркеллӗ пурăнма пиллесе каланă сăмаха мӗнле терминпа палăртаççӗ? Иккӗмӗш сас паллине илӗр.

5) Митта Ваҫлейӗн «Тăван чӗлхем! Таса хӗлхем» сăвви мӗн ятлă ярăма кӗрет? Ярăм ячӗн юлашки сас паллине ҫырăр.

**Хурав.**

ХЫПАР (хыпар):

1) Охотников – **Х**

2) Пыл – **Ы**

3) Гипербола – **П**

4) Халал – **А**

5) Тайăр – **Р**

**9. Ыйту (ӗç).**

8-мӗш ыйтура тупнă сăмах ячӗллӗ чăваш хаҫачӗ пур. Вăл миҫемӗш ҫултанпа тухать? Ăҫта тухма пуҫланă? Хаҫата никӗслекенӗ кам?

**Хурав.**

1906 ҫултанпа тухать. Хусан хулинче. Никӗслекенӗ – Н.В. Никольский.

**10. Ыйту (ӗç).**

Константин Иванов ячӗллӗ Чăваш патшалăх академи драма театрӗн сцени ҫинче «Нарспи» спектакле ултă хут лартнă, куракансем патне ăна пӗрремӗш хут ҫитернӗренпе кăҫал 100 ҫул ҫитрӗ.

Эсир артист пулнă пулсан сцена ҫинче хайлаври хăш сăнара выляна пулăттăр? Мӗншӗн? Хăвăр шухăшăрсене сочинени евӗр ҫырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2022-мĕш çул***

***10-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**
Хăш тĕслĕхре йăнăш çук?
1) Машина патĕнче кăткă пек халăх хĕвĕшет.
2) Эпĕ те сан пек чĕрчунсене юрататăп.
3) Андриян Николаев – пĕрремĕш чăвашсен космонавчĕ.
4) Кӳршĕри улмуççи пахчинче шăпчăк юрлать.
**Хурав.**
4) Кӳршĕри улмуççи пахчинче шăпчăк юрлать.

**2. Ыйту (ĕç).**
Кирлĕ çĕрте чарăну паллисем лартса çырса илĕр.

*Карпатăн çӳллĕ тăвĕсем те Крымăн кипарисĕсемпе пальмисем те Карелин çап-çутă кӳллисем те çук кунта тăван кĕтесĕм çапах та сан Атăлпа Сăр хушшинче вырнаçнă çĕнĕ хулусем ешĕл вăрманусем те анлă хирӳсем тунсăхланă чĕремшĕн виçесĕр хаклă.*

**Хурав.**
Карпатăн çӳллĕ тăвĕсем те, Крымăн кипарисĕсемпе пальмисем те, Карелин çап-çутă кӳллисем те çук кунта, тăван кĕтесĕм, çапах та сан Атăлпа Сăр хушшинче вырнаçнă çĕнĕ хулусем, ешĕл вăрманусем те анлă хирӳсем тунсăхланă чĕремшĕн виçесĕр хаклă.

**3. Ыйту (ĕç).**
*Кантăкран кăвак шуçăм çути курăнать пулин те пӳлĕмри çынсем хĕрсех хуп турттараççĕ* предложенире фразеологизм тупăр, пĕлтерĕшне ăнлантарăр, синонимне (синонимĕсене) çырăр.

**Хурав.**

Фразеологизм – *хуп турттар*, пĕлтерĕшĕ – *çывăр*. Синонимĕсем – *çывăр (тĕлĕр), ыйха пут, ыйха çап*.

**4. Ыйту.**

Текстра чăваш чĕлхинчи мĕнле закон пирки сăмах пырать?

*Çак закон тăрăх, сăмахри тата сыпăкри уçă сасăсемпе хупă сасăсем хытăлăхпа çемçелĕх енчен килĕшсе тăраççĕ. Тĕслĕхрен, сăмах сыпăкĕнчи сасăсем е пурте хыттисем, е пурте çемçисем пулаççĕ. Çавăнпа та хытă сасăсенчен çеç тăракан сăмаха хытă сăмах, çемçе сасăсенчен тăраканнине çемçе сăмах теççĕ. Çак закона пула аффикссем те сăмахсем çумне хытăлăхпа çемçелĕх тĕлĕшĕнчен килĕшсе хушăнаççĕ.*

**Хурав.**

Ку текстра чăваш чĕлхинчи сингармонизм законĕ пирки сăмах пырать (урăхла ăна сасăсен юнашарлăх килĕшĕвĕ теççĕ).

**5. Ыйту (ĕç).**

Çанталăк мĕнле пулассине пĕлтерекен 5 сăнав çырăр.

**Хурав.**

Ачасен хуравĕсенче тĕл пулма пултаракан сăнавсен тĕслĕхĕсем:

*Йытă юр çине выртсан сивĕтет. Çĕнĕ уйăхла çумăр пулсан эрнипех çумăр пулать. Сывлăм ӳксен – уяра* т. ыт.те.

**6. Ыйту (ĕç).**

Паллă поэтăмăрăн сăвă çаврине онлайн куçарупа усă курса ют чĕлхене куçарнă хыççăн каялла чăвашла куçарсан çапла тĕслĕх пулать:

*Çĕршер çулсем иртеççĕ,*
*Хал хушса этем чунне.*
*Çыруçăсем шыраççĕ*
*Чăваш енĕн ĕмĕрне.*
*Малалла эпир пăхатпăр,*
*Хыçала та халь сăнатпăр,*
*Ман шутпа, эпир пурнатпăр –*
*Халĕ те, ыран, ялан.*

Онлайн куçарура паллă поэтăмăрăн мĕнле сăвă йĕркисене усă курнă-ши? Çав сакăр йĕркеллĕ çаврана аса илсе çырăр.

**Хурав.**

Ĕмĕрсем иртсе пыраççĕ
Ӳстерсе ăс-хал мулне.
Кĕнекеçĕсем шыраççĕ
Чăвашсен кунне-çулне.
Тинкеретпĕр малалла,
Кайрине те халь куратпăр...
Манăн шухăшăмпала –
Эпир пулнă, пур, пулатпăр.

**7. Ыйту (ĕç).**

6-мĕш ыйту хуравĕнчи сăвă йĕркисен авторĕ кам? Виçине те палăртăр.

**Хурав.**

Петĕр Хусанкай. Виçи – хорей.

**8. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах тупăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр, хуравĕсене çырăр.

1) Ритм термина чăвашла мĕнле калаççĕ? Пĕрремĕш сас паллине илĕр.

2) Константин Иванован Чĕкеç сăнарĕ хăш хайлавра ӳкерĕннĕ? Хайлав ячĕн юлашки сас паллийĕ.

3) Хире-хирĕçле шухăшсен, кăмăл-туйăмпа тĕллевсен, ĕççемпе çынсен çивĕч тĕркешĕвне, кĕрешĕвне сăнарлă çутатса панине мĕнле терминпа палăртаççĕ? Пĕрремĕш сас паллине илĕр.

4) А. Алка «Июнĕн 22-мĕшĕ» хайлавне мĕнле жанрпа çырнă? Жанр ятĕнче икĕ хут тĕл пулкан сас паллине çырăр.

5) Илле Тăхтин ачаранах кĕтӳ пăхакан геройĕ мĕн ятлă? Çав сăмахăн виççĕмĕш  сас паллийĕ епле?

**Хурав.**

ÇĂКĂР (çăкăр):

1) Çемĕ – **Ç**

2) «Тимĕр тылă» – **Ă**

3) Конфликт – **К**

4) Сăвă – **Ă**

5) Шерхулла – Р

**9. Ыйту (ĕç).**

8-мĕш ыйтура тупнă сăмах илемлĕ хайлав ячĕсенче те тĕл пулать. Пысăк калăпăшлă хайлав тĕслĕхĕсене 2-рен кая мар тупăр, авторĕсене те палăртăр.

**Хурав.**

Илпек Микулайĕ «Хура çăкăр», Ева Лисина «Çăкăр чĕлли».

**10. Ыйту (ĕç).**

Константин Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн сцени çинче «Нарспи» спектакле ултă хут лартнă, куракансем патне ăна пĕрремĕш хут çитернĕренпе кăçал 100 çул çитрĕ.

Эсир артист пулнă пулсан сцена çинче хайлаври хăш сăнара выляна пулăттăр? Мĕншĕн? Хăвăр шухăшăрсене сочинени евĕр çырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2022-мĕш çул***

***11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Çанталăк мĕнле пулассине пĕлтерекен 5 сăнав çырăр.

**Хурав.**

Ачасен хуравĕсенче тĕл пулма пултаракан сăнавсен тĕслĕхĕсем:

*Йытă юр çине выртсан сивĕтет. Çĕнĕ уйăхла çумăр пулсан эрнипех çумăр пулать. Сывлăм ӳксен – уяра* т. ыт.те.

**2. Ыйту (ĕç).**

Кирлĕ çĕрте чарăну паллисем лартса çырса илĕр.

*Карпатăн çӳллĕ тăвĕсем те Крымăн кипарисĕсемпе пальмисем те Карелин çап-çутă кӳллисем те çук кунта тăван кĕтесĕм çапах та сан Атăлпа Сăр хушшинче вырнаçнă çĕнĕ хулусем ешĕл вăрманусем те анлă хирӳсем тунсăхланă чĕремшĕн виçесĕр хаклă.*

**Хурав.**

Карпатăн çӳллĕ тăвĕсем те, Крымăн кипарисĕсемпе пальмисем те, Карелин çап-çутă кӳллисем те çук кунта, тăван кĕтесĕм, çапах та сан Атăлпа Сăр хушшинче вырнаçнă çĕнĕ хулусем, ешĕл вăрманусем те анлă хирӳсем тунсăхланă чĕремшĕн виçесĕр хаклă.

**3. Ыйту (ĕç).**

*Хреççи, калаçса ларнă май, кăтăш пулсах кайнă* предложенире фразеологизм тупăр, пĕлтерĕшне ăнлантарăр, синонимне (синонимĕсене) çырăр.

**Хурав.**

Фразеологизм – *кăтăш пул*. Пĕлтерĕшĕ – *çывăрса кай* е *тĕлĕрсе кай*. Синонимĕсем – *çывăр (тĕлĕр), ыйха пут, ыйхă çапма пуçла, сĕнк пул*.

**4. Ыйту (ĕç).**

Хăш ушкăн йăнăш пĕлтерĕшлĕ?

1) ăраскал – телей, шăпа

2) капмар – пысăк, çӳллĕ

3) илемлĕ – хитре, чипер

4) хăвăл – çырма, кӳлленчĕк

**Хурав.**

Йăнăш пĕлтерĕшлĕ ушкăн:

4) хăвăл – çырма, кӳлленчĕк.

**5. Ыйту (ĕç).**

Чăваш Республикин тулашĕнче çуралса ӳснĕ чăваш çыравçисене (поэтсене) камсене пĕлетĕр? Вĕсем хăш республикăран е хăш облаçрен пулнине палăртăр.

**Хурав.**

Ачасен хуравĕсенче тĕл пулма пултаракан ятсем:

Петĕр Хусанкай – Тутарстанран, Ухсай Яккăвĕ – Пушкăртстанран, Константин Иванов – Пушкăртстанран, Хветĕр Уяр – Самар тăрăхĕнчен тата ытти те.

**6. Ыйту (ĕç).**

Мĕн вăл реминисценци?

**Хурав.**

Автор пĕр-пĕр хайлава хăй маларах çырнă е урăх автор çырнă произведенирен илнĕ сăнар, сăмах çаврăнăшĕ, сăвă йĕрки е проза сыпăкĕ; евĕрлесе çырни.

**7. Ыйту (ĕç).**

Петĕр Яккусен çырнă «Юман хуравĕнчи» йĕркесене реминисценцилесе сăвă шăрçалăр (вырăсла сăвăласан та юрать):

*Чăваш хули шур Шупашкар,*
*Эс – халăхăн пуласлăхĕ;*
*Ачу-пăчу сан чăваш мар:*
*Салхуллă ман хаваслăхăм.*

*Лере – уйра – çаплах ӳсет*
*Лаштра юман – ăсчахăмçăм.*
*– Юман! Чăваш хăçан пĕтет?*
*– Тĕнче пĕтсессĕн, – тавăрчĕ.*

**8. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах тупăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр, хуравĕсене çырăр.

1) Хусанти пĕрремĕш чăваш театрĕ лартнă пĕрремĕш спектакле чăвашла кам куçарнă? Куçаруçă ячĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр.

2) Ухсай Яккăвĕн тĕсе палăртакан сăмахлă трагеди ятне аса илĕр. Хайлав ячĕ вĕçĕнчи сас паллине çырăр.

3) Чăваш литературинче япала ячĕ çумне *пике* сăмахăн кĕскетнĕ формине хушса йĕркеленĕ çын ячĕллĕ хайлавсем пур. Вĕсене асăнăр. Юлашкинчен иккĕмĕш сас паллийĕ епле-ши?

4) Публицистикăллă прозăн чи пысăк ăстисенчен пĕри, район пуçлăхĕнче, республикăри культура министрĕнче ĕçленĕ çыравçă хушамачĕ, ун пĕрремĕш сас паллине илĕр.

5) Хайлав тытăмĕнче ĕç хĕрсе çитнĕ вăхăта палăртакан термин, ун малтанхи сас паллине çырăр.

**Хурав.**

ИЛПЕК (илпек):

1) Иоаким Максимов-Кошкинский – **И**

2) «Хура элчел» – **Л**

3) «Нарспи», «Салампи» – **П**

4) Емельянов – **Е**

5) Кульминаци – **К**

**9. Ыйту.**

8-мĕш ыйтура тупнă сăмах чăваш çыравçипе те çыхăннă. Кам-ши вăл? Унăн пысăк калăпăшлă хайлавĕ мĕн ятлă?

**Хурав.**

Илпек Микулайĕ «Хура çăкăр».

**10. Ыйту (ĕç).**

Константин Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн сцени çинче «Нарспи» спектакле 6 хут лартнă, куракансем патне ăна пĕрремĕш хут çитернĕренпе кăçал 100 çул çитрĕ.

Эсир артист пулнă пулсан сцена çинче хайлаври хăш сăнара выляна пулăттăр? Мĕншĕн? Хăвăр шухăшăрсене сочинени евĕр çырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2023-мĕш çул***

***9-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.

*Ĕçчен халăх пурăнать Хурăнварта. Çулла пахчара ĕçлеççĕ, утарта хурт-хăмăр тытаççĕ, вăрманта кăмпа-çырла пуçтараççĕ. Хĕлле вара ăшă пӳртре каçсерен тĕрĕ тĕрлеççĕ, çăм арлаççĕ, хăшĕ-пĕри аякри хулана ĕçлеме тухса çӳрет.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстри ял ятĕнче мĕнле йывăç ячĕ пур? Çав йывăç ятне çырăр, вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Хурăн – береза.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш сăмахра (е хăш сăмахсенче) сасăсен шучĕ саспаллисен шутĕнчен нумайрах? Çав сăмаха (е сăмахсене) çырăр.

**Хурав.**

Аякри.

**3. Ыйту.**

Текстри хăш сăмах(сем) вырăн падежĕнче?

**Хурав.**

Хурăнварта, пахчара, утарта, вăрманта, пӳртре.

**4. Ыйту (ĕç).**

Пĕрремĕш юпари чĕлхе терминĕсене тата иккĕмĕш юпари тĕслĕхсене вулăр.

| | |
|---|---|
| 1. Антонимсем | А. япала ячĕ, паллă ячĕ, глагол |
| 2. Синонимсем | Ă. сехре хăпрĕ |
| 3. Пуплев пайĕсем | Б. аван, лайăх |
| 4. Хурăнташ чĕлхесем | В. усал, ырă |
| 5. Фразеологизм | Г. тутар, пушкăрт, чăваш |

Терминсене тата тĕслĕхсене шайлаштарăр. Хăш термин патне хăш тĕслĕх килĕшӳллĕ? Хуравсене таблицăра пысăк сас паллипе кăтартса çырăр:

**Хурав.**

| | |
|---|---|
| 1. Антонимсем | В |
| 2. Синонимсем | Б |
| 3. Пуплев пайĕсем | А |
| 4. Хурăнташ чĕлхесем | Г |
| 5. Фразеологизм | Ă |

**5. Ыйту (ĕç).**

Алфавитсăр пуçне, саспаллисене палăртмалли тепĕр çыру системи пур – Морзе азбуки. Çав азбукăпа килĕшӳллĕн, кашни саспаллин ятарлă код пур, ăна «тире» е «точка» символсенчен йĕркелеççĕ, саспаллисене палăртма кĕске е вăрăм сигналсемпе усă кураççĕ. Таблицăри Морзе азбукипе паллашăр та таблица хыççăн çырса панă ыйтăва хуравлăр.

| **Саспалли** | **Морзе азбукинчи код** |
|---|---|
| А | •– |
| Б | –••• |
| В | •– – |
| Г | – –• |
| Д | –•• |

| | |
|---|---|
| Е, Ё | • |
| Ж | •••— |
| З | — —•• |
| И | •• |
| Й | •— — — |
| К | —•— |
| Л | •—•• |
| М | — — |
| Н | —• |
| О | — — — |
| П | •— —• |
| Р | •—• |
| С | ••• |
| Т | — |
| У | ••— |
| Ф | ••—• |
| Х | •••• |
| Ц | —•—• |
| Ч | — — —• |
| Ш | — — — — |
| Щ | — —•— |
| Ъ | — —•— — |
| Ы | —•— — |
| Ь | —••— |
| Э | ••—•• |
| Ю | ••— — |
| Я | •—•— |
| . | •••••• |
| , | •—•—•— |

Морзе азбукипе усӑ курса ҫырнӑ ваттисен сӑмахне вулӑр, ӑна чӑваш алфавитӗнчи сас паллисемпе ҫырӑр:

•— •—•• •— — •— •—• •— •—•• •— —• —• •• _ •— ••• •— •—•• •— _ —••— •—•—•— — — —• ••— —• •— — •— •—• •— •—•• •— —• —• •• _ •— ••• •— •—•• — — •— ••• _ —••— ••••••

**Хурав.**

Ал вараланни тасалать, чун вараланни тасалмасть.

**6. Ыйту (ĕç).**

Константин Иванов хайлавĕнчи сиктерсе хăварнă сăмахсене тĕрĕс суйласа çырăр:

Куçĕсемпе пăхнă чух
Каччăн чĕри … (*çĕкленет, ирĕлет, хĕпĕртет*).
… (*Пылак, çӳхе, хĕрлĕ*) тути кулнă чух
Каччăн чунĕ …(*çемçелет, ирĕлет, хĕпĕртет*).
… (*Уйри, хирти, хитре*) сарă чечеке
… (*Ырă, ăшă, тулли*) куçпа кам пăхмĕ?

**Хурав.**

Çĕкленет, çӳхе, çемçелет, хирти, ăшă.

**7. Ыйту.**

Сăн ӳкерчĕкре – чăваш халăхĕн паллă çынни. Кам-ши вăл?



**Хурав.**

Тани Юн.

**8. Ыйту.**

Кӗрепле пуҫран ҫапсан тин чӑваш сӑмахӗсене аса илекен литература геройӗ. Вӑл мӗн ятлӑ, хайлав авторӗ кам?

**Хурав.**

Ваҫҫа, авторӗ – Стихван Шавли.

**9. Ыйту (ӗҫ).**

Вырӑсла куҫарӑр:

*Ах, аннемӗр, таврӑнайрӗҫ пурте мар…*
*Паттӑрсен ятне ялан асра тытар.*
*Сӑртсем урлӑ, шывсем урлӑ талпӑнса,*
*Сан пата эпир ҫывхарнӑ ӑнтӑлса.*

**Хурав.**

Здравствуй, мама, возвратились мы не все…
Босиком бы пробежаться по росе!
Пол-Европы прошагали, полземли –
Этот день мы приближали как могли.

**10. Ыйту (ӗҫ).**

«В» сас паллирен кӑна пуҫланакан сӑмахсенчен хайлав ҫырӑр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2023-мĕш çул***

***10-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.

*Июнь уйăхĕн вĕçĕнче эпĕ Хыркассине таврăнтăм. Аван çулла ялта. Ĕç нумай пулсан та ывăнни сисĕнмест. Сывлăш уçă та таса, сиплĕ курăк шăрши кĕрет.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстри ял ятĕнче мĕнле йывăç ячĕ пур? Çав йывăç ятне çырăр, вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Хыр – сосна.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш сăмахра (е хăш сăмахсенче) сасăсен шучĕ саспаллисен шутĕнчен нумайрах? Çав сăмаха (сăмахсене) çырăр.

**Хурав.**

Ялта.

**3. Ыйту.**

Текстри хăш сăмах(сем) вырăн падежĕнче?

**Хурав.**

Вĕçĕнче, ялта.

**4. Ыйту (ĕç).**

Пĕрремĕш юпари чĕлхе терминĕсене тата иккĕмĕш юпари тĕслĕхсене вулăр.

| | |
|---|---|
| 1. Антонимсем | А. глагол, хисеп ячĕ |
| 2. Синонимсем | Ă. хуп турттар |
| 3. Пуплев пайĕсем | Б. кахал, наян |
| 4. Хурăнташ чĕлхесем | В. аялта, çӳлте |
| 5. Фразеологизм | Г. мăкшă, çармăс, удмурт |

Терминсене тата тĕслĕхсене шайлаштарăр. Хăш термин патне хăш тĕслĕх килĕшӳллĕ? Хуравсене таблицăра пысăк сас паллипе кăтартса çырăр:

**Хурав.**

| | |
|---|---|
| 1. Антонимсем | В |
| 2. Синонимсем | Б |
| 3. Пуплев пайĕсем | А |
| 4. Хурăнташ чĕлхесем | Г |
| 5. Фразеологизм | Ă |

**5. Ыйту (ĕç).**

Алфавитсăр пуçне, саспаллисене палăртмалли тепĕр çыру системи пур – Морзе азбуки. Çав азбукăпа килĕшӳллĕн, кашни саспаллин ятарлă код пур, ăна «тире» е «точка» символсенчен йĕркелеççĕ, саспаллисене палăртма кĕске е вăрăм сигналсемпе усă кураççĕ. Таблицăри Морзе азбукипе паллашăр та таблица хыççăн çырса панă ыйтăва хуравлăр.

| **Саспалли** | **Морзе азбукинчи код** |
|---|---|
| А | •– |
| Б | –••• |
| В | •– – |
| Г | – –• |
| Д | –•• |
| Е, Ё | • |
| Ж | •••– |
| З | – –•• |
| И | •• |

| | |
|---|---|
| Й | •— — — |
| К | —•— |
| Л | •—•• |
| М | — — |
| Н | —• |
| О | — — — |
| П | •— —• |
| Р | •—• |
| С | ••• |
| Т | — |
| У | ••— |
| Ф | ••—• |
| Х | •••• |
| Ц | —•—• |
| Ч | — — —• |
| Ш | — — — — |
| Щ | — —•— |
| Ъ | — —•— — |
| Ы | —•— — |
| Ь | —••— |
| Э | ••—•• |
| Ю | ••— — |
| Я | •—•— |
| . | •••••• |
| , | •—•—•— |

Морзе азбукипе усӑ курса ҫырнӑ ваттисен сӑмахне вулӑр, ӑна чӑваш алфавитӗнчи сас паллисемпе ҫырӑр:

•— •—•• •— — •— •—• •— •—•• •— —• —• •• _ •— ••• •— •—•• •— _ —••— •—•—•— — — —• ••— —• •— — •— •—• •— •—•• •— —• —• •• _ •— ••• •— •—•• — — •— ••• _ —••— ••••••

**Хурав.**

Ал вараланни тасалать, чун вараланни тасалмасть.

**6. Ыйту (ĕç).**

Петĕр Хусанкай сăввинчи сиктерсе хăварнă сăмахсене тĕрĕс суйласа çырăр:

… (*Кун-çулсем, ĕмĕрсем, вăхăтсем*) иртсе пыраççĕ
Ӳстерсе ăс-хал … (*хакне, вăйне, мулне*).
Кĕнекеçĕсем … (*шыраççĕ, çыраççĕ, тĕпчеççĕ*)
Чăвашсен … (*кунне-çулне, эткерлĕхне, малашлăхне*).
… (*Ăнтăлатпăр, тинкеретпĕр*) малалла,
Кайрине те халь куратпăр…

**Хурав.**

Ĕмĕрсем, мулне, шыраççĕ, кунне-çулне, тинкеретпĕр.

**7. Ыйту.**

Сăн ӳкерчĕкре – чăваш халăхĕн паллă çынни. Кам-ши вăл? Эсир ун çинчен мĕн пĕлетĕр?



**Хурав.**

Тани Юн. Вăл – чăвашсен пĕрремĕш киноактрисисенчен пĕри, тăлмачă, драматург, И.С. Максимов-Кошкинский мăшăрĕ.

**8. Ыйту.**

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ миçемĕш çулта уçăлнă?

**Хурав.**

1868 çулта.

**9. Ыйту (ĕç).**

Вырăсла куçарăр:

*Хăш чух мана ылханлă вăрçă хирĕ*
*Тĕп тунă çамрăк паттăр салтаксем*
*Çĕрсе выртман пек туйăнать каç-ирĕн,*
*Вĕçеççĕ пек пулса шур тăрнасем.*

**Хурав.**

Мне кажется порою, что солдаты,
С кровавых не пришедшие полей,
Не в землю эту полегли когда-то,
А превратились в белых журавлей.

**10. Ыйту (ĕç).**

«В» сас паллирен кăна пуçланакан сăмахсенчен хайлав çырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2023-мĕш çул***

***11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.

*Тул çутăлать. Чăрăшкасси ялĕ çине кĕçех хĕвел тĕрри ӳкрĕ. Тавралăх ерипен ыйхăран вăранса пырать. Алăк-хапха уçăлса хупăнни, йытă вĕрни, автансем авăтни илтĕнет. Инçетре мотор кĕрлет.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстри ял ятĕнче мĕнле йывăç ячĕ пур? Çав йывăç ятне çырăр, вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Чăрăш – ель.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш сăмахра (е хăш сăмахсенче) сасăсен шучĕ саспаллисен шутĕнчен нумайрах? Çав сăмаха (сăмахсене) çырăр.

**Хурав.**

Ялĕ, ерипен.

**3. Ыйту.**

Текстри хăш сăмах(сем) вырăн падежĕнче?

**Хурав.**

Инçетре.

**4. Ыйту (ĕç).**

Пĕрремĕш юпари чĕлхе терминĕсене тата иккĕмĕш юпари тĕслĕхсене вулăр.

| | |
|---|---|
| 1. Антонимсем | А. местоимени, япала ячĕ |
| 2. Синонимсем | Ă. сехре хăпрĕ |
| 3. Пуплев пайĕсем | Б. ачаш, çепĕç |
| 4. Хурăнташ чĕлхесем | В. пĕчĕк, пысăк |
| 5. Фразеологизм | Г. азербайджан, чăваш, пушкăрт |

Терминсене тата тĕслĕхсене шайлаштарăр. Хăш термин патне хăш тĕслĕх килĕшӳллĕ? Хуравсене таблицăра пысăк сас паллипе кăтартса çырăр:

**Хурав.**

| | |
|---|---|
| 1. Антонимсем | В |
| 2. Синонимсем | Б |
| 3. Пуплев пайĕсем | А |
| 4. Хурăнташ чĕлхесем | Г |
| 5. Фразеологизм | Ă |

**5. Ыйту (ĕç).**

Алфавитсăр пуçне, саспаллисене палăртмалли тепĕр çыру системи пур – Морзе азбуки. Çав азбукăпа килĕшӳллĕн, кашни саспаллин ятарлă код пур, ăна «тире» е «точка» символсенчен йĕркелеççĕ, саспаллисене палăртма кĕске е вăрăм сигналсемпе усă кураççĕ. Таблицăри Морзе азбукипе паллашăр та таблица хыççăн çырса панă ыйтăва хуравлăр.

| **Саспалли** | **Морзе азбукинчи код** |
|---|---|
| А | •– |
| Б | –••• |
| В | •– – |
| Г | – –• |
| Д | –•• |
| Е, Ё | • |
| Ж | •••– |
| З | – –•• |

| | |
|---|---|
| И | •• |
| Й | •— — — |
| К | —•— |
| Л | •—•• |
| М | — — |
| Н | —• |
| О | — — — |
| П | •— —• |
| Р | •—• |
| С | ••• |
| Т | — |
| У | ••— |
| Ф | ••—• |
| Х | •••• |
| Ц | —•—• |
| Ч | — — —• |
| Ш | — — — — |
| Щ | — —•— |
| Ъ | — —•— — |
| Ы | —•— — |
| Ь | —••— |
| Э | ••—•• |
| Ю | ••— — |
| Я | •—•— |
| . | •••••• |
| , | •—•—•— |

Морзе азбукипе усӑ курса ҫырнӑ ваттисен сӑмахне вулӑр, ӑна чӑваш алфавитӗнчи сас паллисемпе ҫырӑр:

•— •—•• •— — •— •—• •— •—•• •— —• —• •• _ •— ••• •— •—•• •— _ —••— •—•—•— — — —• ••— —• •— — •— •—• •— •—•• •— —• —• •• _ •— ••• •— •—•• — — •— ••• _ —••— ••••••

**Хурав.**

Ал вараланни тасалать, чун вараланни тасалмасть.

**6. Ыйту (ĕç).**

Çеçпĕл Мишши сăввинчи сиктерсе хăварнă сăмахсене тĕрĕс суйласа çырăр:

Кăвар … (*чĕлхе, чĕре*)! Кăвар … (*чĕлхеллĕ, чĕреллĕ*)
Чăваш … (*каччи, ачи, чĕлхи*), сассуна пар!
Тухсам кунта. Сана … (*чĕнеççĕ, кĕтеççĕ, итлеççĕ*).
Килсем! … (*Иртсем, килсем*)! Эс пур, – çук мар.

**Хурав.**

Чĕре, чĕлхеллĕ, ачи, кĕтеççĕ, килсем.

**7. Ыйту.**

Чăваш халăх поэчĕн хисеплĕ ятне чи малтан кам тивĕç пулнă?

**Хурав.**

Николай Полоруссов-Шелепи.

**8. Ыйту.**

Ӳкерчĕкри икĕ паллă çынна асăрхăр. Камсем-ши вĕсем? Художник ăçти ĕç-пуçа ӳкерсе кăтартнă?



**Хурав.**

И.Н. Ульянов тата И.Я. Яковлев. Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнче.

**9. Ыйту (ӗç).**

Вырӑсла куçарӑр:

*Хӑш чух мана ылханлӑ вӑрçӑ хирӗ*
*Тӗп тунӑ çамрӑк паттӑр салтаксем*
*Çӗрсе выртман пек туйӑнать каç-ирӗн,*
*Вӗçеççӗ пек пулса шур тӑрнасем.*

**Хурав.**

Мне кажется порою, что солдаты,
С кровавых не пришедшие полей,
Не в землю эту полегли когда-то,
А превратились в белых журавлей.

**10. Ыйту (ӗç).**

«В» сас паллирен кӑна пуçланакан сӑмахсенчен хайлав çырӑр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2024-мĕш çул***

***9-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1–5 ыйтусене (ĕçсене) пурнăçлăр.**

Иртнĕ ĕмĕр варриччен хăнтăрсем Раççейĕн кашни пысăк е пĕчĕк юхан шывĕ тăрăхĕнче питĕ йышлă пурăннă. Каярахпа вĕсене паха та хаклă тирĕшĕн чылай çĕрте тытса пĕтернĕ. Хăнтăр апачĕ – ўсентăран. Вăл уйрăмах йывăç турачĕсене, тĕрлĕ курăк çиме кăмăллать. Сивĕсем çитиччен хĕл каçмалăх апат хатĕрлеме те ĕлкĕрет вăл. Хăш-пĕр хăнтăр çемйи шывра вăтăр кубометр таранах апат хатĕрлесе тултарать.

**1. Ыйту (ĕç).**

Ыйтусене хуравлăр.

1) Хăнтăрсем хăçан питĕ йышлă пурăннă?
2) Хăнтăр мĕн çиме юратать?
3) Хăнтăрсем ăçта пурăнаççĕ?
4) Хăнтăрсем мĕншĕн сахалланса юлнă?
5) Хăнтăр тирĕ мĕнле?

**Хурав.**

1) иртнĕ ĕмĕр варриччен.
2) ўсентăран – тĕрлĕ курăк, йывăç турачĕсем.
3) пысăк е пĕчĕк юхан шыв тăрăхĕнче.
4) паха та хаклă тирĕшĕн чылай çĕрте тытса пĕтернĕ.
5) паха та хаклă.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстра мĕнле чĕрчун пирки сăмах пырать? Ăна вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

хăнтăр – бобр.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстран пару падежĕнчи сăмахсене çырса илĕр.

**Хурав.**

вĕсене, турачĕсене.

**4. Ыйту (ĕç).**

Хăш йĕркесем текст содержанийĕпе килĕшӳллĕ?

1) Хăнтăр ӳсентăран (йывăç турачĕсене, тĕрлĕ курăк) çиме юрататъ.

2) Раççейре ĕлĕк хăнтăр йышлă пурăннă.

3) Хăнтăр пулă çисе пурăнать.

4) Хăнтăр çемйипех апат хатĕрлет.

5) Хăнтăр ӳсентăран сахал çиет.

6) Хăнтăр пысăк е пĕчĕк тинĕсре хĕл каçать.

7) Хăнтăр хĕлле те апат çиет.

8) Хăнтăр тирĕ паха та хаклă.

9) Хăнтăр хĕлле апат çимест, çывăрать.

10) Хăнтăр çемйине хĕл каçма икĕ кубометр апат кирлĕ.

**Хурав.**

1) Хăнтăр ӳсентăран (йывăç турачĕсене, тĕрлĕ курăк) çиме юрататъ.

2) Раççейре ĕлĕк хăнтăр йышлă пурăннă.

4) Хăнтăр çемйипех апат хатĕрлет.

7) Хăнтăр хĕлле те апат çиет.

8) Хăнтăр тирĕ паха та хаклă.

**5. Ыйту (ĕç).**

Текстра пĕр йышши членсене тупса çырăр. Вĕсем предложенин мĕнле членĕ пулаççĕ?

**Хурав.**

пысăк, пĕчĕк – определени пулаççĕ.

паха, хаклă – определени пулаççĕ.

йывăç турачĕсене, курăк – дополнени пулаççĕ.

**6. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах тупăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр, хуравĕсене çырăр.

1) К. Иванов, Ф. Павлов, Трубина Мархви вĕреннĕ чăваш шкулĕ хăш хулара вырнаçнă пулнă? Пĕрремĕш сас паллине илĕр.

2) С. Шавли «Вĕçкĕн Ваçça» хайлавне мĕнле жанрпа çырнă? Жанр ятĕнче икĕ хут тĕл пулакан сас паллине çырăр.

3) «И мĕн пуян…» сăвă авторĕ. Поэт ячĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр.

4) Г. Айхи çырнă сăвă йĕркисемпе паллашăр. Мĕнле сăмах siксе юлнă-ши? Пĕрремĕш сас паллине илĕр.

*______ вăл – куçаруçă пек.*
*Пин тĕрлĕ çыннăн кăмăлне*
*Кĕртет вăл ĕмĕр тăршшĕпех*
*Хăй сăн-питне, ўтне, чунне.*

5) Хĕрринче выртасшăн пулман хресченсен тавлашăвне сăнлакан çыравçăн псевдонимĕ мĕнле? Çав сăмахăн юлашки сас паллине çырăр.

**Хурав.**

ЧĂВАШ (чăваш):

1) Чĕмпĕрте – **Ч**
2) сăвă – **Ă**
3) Ваçлей (Василий) – **В**
4) артист – **А**
5) Янтуш – **Ш**

**7. Ыйту (ĕç).**

Иван Ивник йĕркисене вулăр. Сăвăри сăнарлăх, пуплев çаврăмĕ, кĕвĕлĕх (ритм) чăваш литературинчи хăш хайлавпа пĕр евĕрлĕ?

*Аслă вăрман чĕрĕлет,*
*Илемĕпе илĕртет.*
*Ĕнтĕ аслă вăрманта*
*Куккук сасси илтĕнет.*

*Ешĕл улăх илемне*
*Кам-ши савмĕ çуркунне!..*

**Хурав.**

«Нарспи» поэмăпа.

**8. Ыйту (ĕç).**

«_____ ачине», «_____ арăмне».

Хайлав ячĕсенче мĕнле сăмах сиксе юлнă-ши? Авторĕ кам?

**Хурав.**

Чăваш. Авторĕ – Çеçпĕл Мишши.

**9. Ыйту (ĕç).**

Текста вырăсла куçарăр.

*Çамрăксем чăвашла калаçççĕ! Мускавра алă пин чăваш пурăнать тенине илтнĕ те, çак тарана çити кафе-ре чăвашла калаçнине илтменччĕ. Эпĕ хам чăвашла пачах та калаçаймастăп, ун-кун пĕр-икĕ сăмах çаврăнăшĕ кăна, ăнланасси те кăшт çеç манăн. Юнпа чăваш хĕрĕ пулсан та, чунпа, шухăшăмпа эпĕ тăван халăхран питĕ аякраччĕ вăл вăхăтра. Ман юлташ хĕр ача Фатима ав тутарла шыв юхнă пек калаçать кăна мар, вулать те, çырать те, эпĕ вара, мĕнле калас, чĕлхесĕр пекех чăвашла.*

*Юрать-ха, çав вăхăталла пĕрре ăнсăртран кĕнеке лав-ккинче куç тĕлне тĕксĕм хĕрлĕ хуплашкаллă пысăк словарь курăнса кайрĕ, ылтăнланă сас паллисемпе «ЧĂВАШЛА-ВЫРĂСЛА СЛОВАРЬ» тенине курсан эпĕ савăнсах кайрăм, часрах туянтăм, киле çитсе хыпаланса уçса лартăм, хама темле çĕнĕрен çуралнă евĕр туйăм*

*çупăрласа илчĕ çав самантра. Вара куллен вуншар сăмах вĕренме тытăнтăм, анчах словарь хальлĕн кăна пулмасть иккен чĕлхе вĕренесси.*

*(Борис Чиндыков)*

**Хурав.**

Молодые люди говорят на чувашском языке! Я слышала, что в Москве живет пятьдесят тысяч чувашей, но до сих пор не слышала, чтобы в кафе разговаривали по-чувашски. Сама я не могу говорить по-чувашски, если только несколько слов невпопад, и понимаю немного. В те времена, хоть и была я по крови чувашкой, душой, мыслями была очень далека от родного народа. Вон моя подруга Фатима не только как ручеек складно говорит по-татарски, но и читает, и пишет, а я, как бы сказать, в чувашском языке как немая.

Хорошо еще, в то время неожиданно в книжном магазине попался на глаза большой словарь в темно-красном переплете, и, увидев надпись позолоченными буквами «ЧУВАШСКО-РУССКИЙ СЛОВАРЬ», я обрадовалась, купила его, дойдя домой, поспешно открыла, и в этот миг меня охватило такое чувство, как будто заново родилась. Тогда я стала ежедневно заучивать десятки слов, но, оказалось, лишь с помощью словаря язык не выучить.

(Борис Чиндыков)

**10. Ыйту (ĕç).**

«Чăвашра вăрман та чăвашла кашлать…» темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

***Пĕтĕм тĕнчере иртекен***
***«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада***
***2024-мĕш çул***

***10-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1–5 ыйтусене (ĕçсене) пурнăçлăр.**

Çирĕк – питĕ усăллă йывăç. Вăл çырма-çатрана типесрен сыхлать, çĕнĕ çăлкуçсем кăларать. Çирĕк нумай çырмасенче ĕлĕк уланкă йышлă ĕрченĕ. Çирĕк вутта та лайăх. Ун вуттинчен сĕрĕм тухмасть. Çирĕкрен тунă сĕтел-пукан вара çăмăл, илемлĕ те çирĕп пулать. Кайăк-кĕшĕк те иленет çирĕклĕхе. Çирĕк вăррине юратса çиекен кайăка чăвашсем ахальтен мар çирĕктăрри тенĕ.

**1. Ыйту (ĕç).**
Ыйтусене хуравлăр.
1) Çирĕкрен мĕн тăваççĕ?
2) Çирĕк вăррине мĕнле кайăк юрататать?
3) Çирĕкрен тунă сĕтел-пукан мĕнле пулать?
4) Çирĕк вутти мĕншĕн лайăх?
5) Çирĕк йывăçĕн вăрри пур-и?
**Хурав.**
1) вутă, сĕтел-пукан.
2) çирĕктăрри.
3) çăмăл, илемлĕ те çирĕп.
4) сĕрĕм тухмасть.
5) пур.

**2. Ыйту (ĕç).**
Текстра мĕнле пулă ячĕ пур? Ăна вырăсла куçарăр.
**Хурав.**
уланкă – окунь.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстран пару падежĕнчи сăмахсене çырса илĕр.

**Хурав.**

çырма-çатрана, вутта, çирĕклĕхе, вăррине, кайăка.

**4. Ыйту (ĕç).**

Хăш йĕркесем текст содержанийĕпе килĕшӳллĕ?

1) Çирĕк йывăçĕн усси сахал.
2) Çирĕк нумай вырăнта пулăçăсем пурăннă.
3) Çирĕкрен сĕтел-пукан ăсталаççĕ.
4) Çирĕктăрри çирĕклĕхе юрататъ.
5) Уланкă çирĕк вăрри кăмăллать.
6) Çирĕк йывăçĕн усси питĕ пысăк.
7) Çирĕктăрри – чăваш сăмахĕ.
8) Çирĕк йывăçĕнчен лайăх вутă пулать.
9) Çирĕк йывăçĕ çырма-çатрана типĕтет.
10) Çирĕк йывăç сĕрĕм кăларать.

**Хурав.**

3) Çирĕкрен сĕтел-пукан ăсталаççĕ.
4) Çирĕктăрри çирĕклĕхе юрататъ.
6) Çирĕк йывăçĕн усси питĕ пысăк.
7) Çирĕктăрри – чăваш сăмахĕ.
8) Çирĕк йывăçĕнчен лайăх вутă пулать.

**5. Ыйту (ĕç).**

Текстра пĕр йышши членсене тупса çырăр. Вĕсем предложенин мĕнле членĕ пулаççĕ?

**Хурав.**

сыхлать, кăларать – сказуемăй пулаççĕ.

çăмăл, илемлĕ те çирĕп – обстоятельство пулаççĕ.

**6. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах тупăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр, хуравĕсене çырăр.

1) «Таната» роман авторĕ кам? Çыравçă ячĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр.

2) Чăвашсем хăмлана симĕс _______ танлаштараççĕ. Сиктерсе хăварнă сăмахăн пĕрремĕш сас паллине çырăр.

3) Литература хайлавĕн тĕп сюжетран уйрăлса тăракан тата ĕç тĕвĕленĕвĕ умĕнхи пайĕ. Çав сăмахăн пĕрремĕш сас паллине илĕр.

4) Пĕр-пĕр чаплă пулăма е паллă çынна мухтаса çырнă хĕрӳ туйăмлă, çĕкленӳллĕ кĕвĕллĕ хайлава мĕнле терминпа палăртаççĕ? Юлашки сас паллине илĕр.

5) Нарспи ашшĕн ятне аса илĕр. Юлашки сас паллине çырăр.

**Хурав.**

ХЫПАР (хыпар):

1) Хветĕр – **Х**

2) ылтăн – **Ы**

3) пролог – **П**

4) ода – **А**

5) Михетер – **Р**

**7. Ыйту (ĕç).**

6-мĕш ыйтура тупнă сăмахлă чăвашла тухса тăракан хаçат пур. Ăна пуçарса яраканĕ кам пулнă?

**Хурав.**

Никольский.

**8. Ыйту (ĕç).**

Панă сăмахсен кирлĕ вариантне суйласа илĕр, клоуз-теста пурнăçлăр.

*Тĕлĕнмелле лайăх вырăнта (а) _____ Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ. Умĕнчех (ă) ______ юхса (б)______. Хĕвел çутине вăл юриех кунталла тапса янă пек туйăнать – шкул çинче шевле вылять, куçа (в) _______. Кĕр пуçланас умĕн шкул картишĕнче ачасем уйрăмах йышлăн вара, вĕлле хурчĕсем евĕр (г) ______ тăраççĕ.*

(И. Тăхтин «Шерхулла» калавĕнчен)

Суйламалли вариантсем:
а) тăрать, ларать;
ă) Атăл, Сĕве, Сăр;
б) выртать, тăрать, илет;
в) шăтарать, йăмăхтарать;
г) сĕрлесе, кĕрлесе, сĕрĕлтетсе.
**Хурав.**
а) тăрать;
ă) Сĕве;
б) выртать;
в) йăмăхтарать;
г) сĕрлесе.

**9. Ыйту (ĕç).**
Текста вырăсла куçарăр.

*Çамрăксем чăвашла калаçаççĕ! Мускавра алă пин чăваш пурăнать тенине илтнĕ те, çак тарана çити кафе-ре чăвашла калаçнине илтменччĕ. Эпĕ хам чăвашла пачах та калаçаймастăп, ун-кун пĕр-икĕ сăмах çаврăнăшĕ кăна, ăнланасси те кăшт çеç манăн. Юнпа чăваш хĕрĕ пулсан та, чунпа, шухăшăмпа эпĕ тăван халăхран питĕ аякраччĕ вăл вăхăтра. Ман юлташ хĕр ача Фатима ав тутарла шыв юхнă пек калаçать кăна мар, вулать те, çырать те, эпĕ вара, мĕнле калас, чĕлхесĕр пекех чăвашла.*

*Юрать-ха, çав вăхăталла пĕрре ăнсăртран кĕнеке лавккинче куç тĕлне тĕксĕм хĕрлĕ хуплашкаллă пысăк словарь курăнса кайрĕ, ылтăнланă сас паллисемпе «ЧĂВАШЛА-ВЫРĂСЛА СЛОВАРЬ» тенине курсан эпĕ савăнсах кайрăм, часрах туянтăм, киле çитсе хыпаланса уçса лартăм, хама темле çĕнĕрен çуралнă евĕр туйăм çупăрласа илчĕ çав самантра. Вара куллен вуншар сăмах вĕренме тытăнтăм, анчах словарь хальлĕн кăна пулмасть иккен чĕлхе вĕренесси.*

*Хуначипе эпир çу уйăхĕн пĕрремĕш вырсарни кунĕнче Ваганьково масарĕнче тĕл пултăмăр. Унта çак кун çулсеренех чăваш халăхĕн паллă ăсчахĕн вил тăпри патĕнче Мускав чăвашĕсем пуçтарăнаççĕ. Çав кунччен эпĕ*

*пĕрре те пулса курманччĕ унта, кăçал вара çуркунне çитнĕ-çитмен систерчĕ анне: ӳссе çитрĕн ĕнтĕ, тăван халăха пĕлес пулать терĕ.*

*(Борис Чиндыков)*

**Хурав.**

Молодые люди говорят на чувашском языке! Я слышала, что в Москве живет пятьдесят тысяч чувашей, но до сих пор не слышала, чтобы в кафе разговаривали по-чувашски. Сама я не могу говорить по-чувашски, если только несколько слов невпопад, и понимаю немного. В те времена, хоть и была я по крови чувашкой, душой, мыслями была очень далека от родного народа. Вон моя подруга Фатима не только как ручеек складно говорит по-татарски, но и читает, и пишет, а я, как бы сказать, в чувашском языке как немая.

Хорошо еще, в то время неожиданно в книжном магазине попался на глаза большой словарь в темно-красном переплете, и, увидев надпись позолоченными буквами «ЧУВАШСКО-РУССКИЙ СЛОВАРЬ», я обрадовалась, купила его, дойдя домой, поспешно открыла, и в этот миг меня охватило такое чувство, как будто заново родилась. Тогда я стала ежедневно заучивать десятки слов, но, оказалось, лишь с помощью словаря язык не выучить.

С Хуначи мы встретились в первое воскресенье мая на Ваганьковском кладбище. Там ежегодно в этот день собираются московские чуваши у могилы выдающегося ученого чувашского народа. До этого дня я ни разу там не бывала, а весной этого года мать с намеком сказала: выросла уже, должна знать родной народ.

(Борис Чиндыков)

**10. Ыйту (ĕç).**

«Чăвашра вăрман та чăвашла кашлать…» темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

*Пĕтĕм тĕнчере иртекен*
*«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада*
*2024-мĕш çул*

*11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)*
*Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем*

**Текста вулăр та 1–5 ыйтусене (ĕçсене) пурнăçлăр.**

Пирĕн тăрăхра мулкач чылай тĕл пулать. Вăл хĕлле шурă, çулла кăвак-хăмăр-сăрă. Хăлхи вĕçĕ çеç кирек хăш вăхăтра та хура. Пурăнма вăрманта ытларах пурăнать, çулçăллă йывăççене кăмăллать. Унта пытанма лайăхрах. Апат та нумай. Каçхине пахчасене кĕре-кĕре каять: купăста, çарăк-кишĕр çулçисене, утă пĕрчисене шырать. Мулкач питĕ сисĕмлĕ теççĕ. Çывăрнă чухне те сас-чĕве вăл таçтанах илтет имĕш.

**1. Ыйту (ĕç).**

Ыйтусене хуравлăр.

1) Мулкач мĕншĕн çулçăллă йывăççене кăмăллать?
2) Мулкач мĕнле апат шырать?
3) Мулкач мĕн тĕслĕ?
4) Мулкач мĕнле йывăççене кăмăллать?
5) Мулкач ытларах ăçта пурăнать?

**Хурав.**

1) пытанма лайăхрах, апат та нумай.
2) купăста, çарăк-кишĕр çулçисене, утă пĕрчисене.
3) хĕлле шурă, çулла кăвак-хăмăр-сăрă.
4) çулçăллă.
5) вăрманта.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстра мĕнле чĕрчун пирки сăмах пырать? Çав сăмахăн синонимне тупăр.

**Хурав.**
мулкач – куян (катăк тута, кĕске хӳре, чалăш куç)

**3. Ыйту (ĕç).**
Текстран пару падежĕнчи сăмахсене çырса илĕр.
**Хурав.**
йывăçсене, пахчасене, çулçисене, пĕрчисене, сас-чĕве.

**4. Ыйту (ĕç).**
Хăш йĕркесем текст содержанийĕпе килĕшӳллĕ?
1) Хĕлле мулкач сăрă тĕслĕ.
2) Мулкача вăрманта пытанма çăмăл.
3) Мулкач нимĕнле сасса та илтмест.
4) Мулкач пахчара апат шырать.
5) Мулкач ӳсентăран çимест.
6) Мулкачăн хăлхи вĕçĕ кĕркунне хура, хĕлле вара шурă.
7) Мулкач купăста, çарăк-кишĕр çулçи, утă çиет.
8) Мулкач çывăрнă чухне те сисĕмлĕ.
9) Пирĕн тăрăхра мулкач сахал.
10) Мулкач пахчана каçхине кĕрсе каять.
**Хурав.**
2) Мулкача вăрманта пытанма çăмăл.
4) Мулкач пахчара апат шырать.
7) Мулкач купăста, çарăк-кишĕр çулçи, утă çиет.
8) Мулкач çывăрнă чухне те сисĕмлĕ.
10) Мулкач пахчана каçхине кĕрсе каять.

**5. Ыйту (ĕç).**
Текстра пĕр йышши членсене тупса çырăр. Вĕсем предложенин мĕнле членĕ пулаççĕ?
**Хурав.**
шурă, кăвак-хăмăр-сăрă – сказуемăй пулаççĕ.
хĕлле, çулла – обстоятельство пулаççĕ.

пурӑнать, кӑмӑллать – сказуемӑй пулаççӗ.

кӗре-кӗре каять, шырать – сказуемӑй пулаççӗ.

купӑста, çарӑк-кишӗр çулçисене, утӑ пӗрчисене – дополнени пулаççӗ.

**6. Ыйту (ӗç).**

Пилӗк сас паллирен тӑракан сӑмах тупӑр. Çав сӑмаха тума ыйтусене хуравлӑр, хуравӗсене çырӑр.

1) Нумай шухӑшламасӑрах, сасартӑк пуçа килнӗ кӗске сӑвӑ çаврӑмне мӗнле терминпа палӑртаççӗ? Юлашки сас паллине илӗр.

2) С. Шавлин «Вӗçкӗн Ваççа» хайлавӗн жанрне палӑртӑр. Терминта икӗ хут тӗл пулакан сас паллине илӗр.

3) «Килӗшсе ӗçленӗ ӗç пысӑк усӑллӑ – çакна пӗлсе тӑрӑр, ун пек ӗçе юратӑр. Чӑн пӗчӗккӗ ӗçе те пит пикенсе, юратса ӗçлӗр». Çак йӗркесен авторӗ кам? Ун хушамачӗн юлашки сас паллине çырӑр.

4) Ф. Павловӑн юрату виçкӗтеслӗхне сӑнлакан драми. Хайлав ятӗнчи юлашки сас паллине илӗр.

5) П. Хусанкайӑн «Аптраман тавраш» сӑвӑлла романӗнче кӗпе тӗрлекен сӑнар. Малтанхи сас паллине илӗр.

**Хурав.**

ТӐВАН (тӑван):

1) экспромт – **Т**

2) сӑвӑ –**Ӑ**

3) Яковлев – **В**

4) «Ялта» – **А**

5) Натали – **Н**

**7. Ыйту (ӗç).**

6-мӗш ыйтура тупнӑ сӑмахлӑ чӑвашла тухса тӑракан литература журналӗ пур. Ун ятне çырӑр.

**Хурав.**

Тӑван Атӑл.

**8. Ыйту (ĕç).**

Панă сăмахсен кирлĕ вариантне суйласа илĕр, клоуз-теста пурнăçлăр.

*Йăван Яккăльч пулкаланă кунта. (а)______ ку енчи шкулсене тĕрĕслеме килсе çӳренĕ. Халăхра икĕ (ă) ______ çӳрет ун пирки... Пĕрре, шăпах (б) ______ эрнинче, каччăсемпе хĕрсем укăлчара вăйă карти çавăрса юрă юрланă. Сасартăк вĕсен умне (в) ______ лашаллă кӳмепе чаплă улпут килнĕ тухнă. Çамрăксем хăраса ӳкнĕ, вăйă карти чăл-пар саланнă. «Мĕнтен хăратăр, ма манран таратăр? Эпĕ те сирĕн пекех çынах, чăвашах-çке!» – тенĕ вара улпут. Чăвашлах чип-чипер каланă. Çавалкас çамрăкĕсем тĕлĕнсе хытнă: вĕсем çак мăн сухаллă, ылтăн пакунлă генерала, патша пекскерне, ниепле те чăваш тесе шутлама хăяйман. Анчах улпут вĕсене ăшшăн калаçса ӳкĕте (г) ______ , каллех юрлама ыйтнă.*

(А. Артемьевăн «Алтăр çăлтăр» хайлавĕнчен)

Суйламалли вариантсем:

а) Хусантан, Шупашкартан, Чĕмпĕртен;

ă) юмах, халап, баллада;

б) Сурхури, Çăварни, Çимĕк;

в) мăшăр, пар;

г) лартнă, тăратнă, кĕртнĕ.

**Хурав.**

а) Чĕмпĕртен;

ă) халап;

б) Çимĕк;

в) пар;

г) кĕртнĕ.

**9. Ыйту (ĕç).**

Текста вырăсла куçарăр.

*Чĕре пĕр хут çеç савать...*

*Ман чунра юрă сăмахĕсем пуçтарăнса пычĕç, эпĕ сасăсăр юрларăм. Тулса çитнĕ уйăх сирень çеçкисемпе выляса тăчĕ-тăчĕ те майĕпен уçă чӳречерен пырса уртăнчĕ, пĕр авăк пӳлĕме кĕме хăраса чĕтренсе тăнă хыççăн чӳрече сакки çине сиксе ӳкрĕ, вара, асăрхануллăн шуса, ман минтере çутатрĕ. Вăл мана çупăрларĕ, ачашларĕ, анчах эпĕ унăн ăшшине те, çепĕçлĕхне те туймарăм. Çак вăхăтра чӳрече умĕнче хуллен, асăрханса пусакан ура сасси илтĕнсе кайрĕ. Эпĕ пĕр самант сывлама чарăнса итлерĕм. Ура сасси çывхарса-çывхарса пычĕ те, чӳрече еннелле тăсăлса ӳсекен сирень турачĕ лăстăртатса силленчĕ. Эпĕ, вырăн çинчен çĕкленсе, пĕр самант хытса тăтăм, унтан, чĕрне вĕççĕн утса, чӳрече патне пытăм, шурă чаршава сирсе, пахчаналла тинкертĕм. Сирень тĕмĕ айĕнче Гена тăрать. Ĕнтĕ уйăх та пахча хыçнелле шуса анчĕ, тухăçа кăвак сăн çапрĕ, Гена çаплах сирень тĕмми айĕнче тăрать-ха. Аслăк айĕнчи автан хăйĕн хăрăлтирех сассипе хыттăн авăтса ярсан, вăл ыйхăран вăраннă çын пек шартах сикрĕ. «Гена!» – чутах кăшкăрса ямарăм эпĕ. Акă вăл кантăк патнех пычĕ, аллинчи чечекне пичĕ çумне тытрĕ, унтан уçă кантăк витĕр чӳрече сакки çине хучĕ те пысăк утăмсемпе пахчаран тухса çухалчĕ. Эпĕ чечек çыххине алла илтĕм. Вĕсем чĕрĕ, нӳрĕ. Эпĕ вĕсене асăрханса чĕре çумне тытса чăмăртарăм, унтан кантăка хупрăм та, пите чечек çыххипе хупласа, кĕçех ăшă ыйхă ытамне кĕрсе ӳкрĕм.*

*(Нелли Петровская)*

**Хурав.**

Сердце любит только раз...

Мне тоже хотелось запеть. Полная луна скользнула по ветвям и приблизилась к окну, зацепилась за раскрытую раму, ее светлые блики вздрогнули, качнулись, словно не решаясь заглянуть в комнату. Но вот она бесшумно

вспрыгнула на подоконник, осторожно продвинулась к моей подушке, осветила ее. Луна обнимала, ласкала меня, но я не чувствовала тепла. Вдруг под окном раздались негромкие шаги. Я прислушалась, затаив дыхание. Шаги становились все ближе, с шумом качнулась и хрустнула ветка сирени. Я осторожно поднялась, стараясь ступать как можно тише, подошла к окну, раздвинула краешек занавески. Под кустом сирени стоял Гена. Уже и луна скатилась за сад, восток окрасился в светло-серый цвет, а Гена все стоял под сиренью. На повети в сарае прокукарекал петух, и он вздрогнул, словно очнувшись. Мне захотелось окликнуть его, я едва сдержала себя. Вот он подошел к окну, приблизил букет к лицу, словно уткнулся в него, потом положил на подоконник и большими шагами вышел из сада. Я взяла тяжелые цветы в руки. Они были живые, влажные. Осторожно прижав их к груди, я закрыла окно, упала на кровать и тут же уснула.

(Нелли Петровская)

**10. Ыйту (ĕç).**

«Чăвашра вăрман та чăвашла кашлать…» темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

# ТУПМАЛЛИ

Пĕтĕмĕшле ăнлантарни........................................................ 3

Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2019-мĕш çул. 9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............... 4

Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2019-мĕш çул. 10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 9

Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2019-мĕш çул. 11-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 15

Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2021-мĕш çул. 9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............... 21

Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2021-мĕш çул. 10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)........... 26

Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2021-мĕш çул. 11-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 31

Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2022-мĕш çул. 9-мĕш класс (чăваш шкулĕ).............. 36

Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2022-мĕш çул. 10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 41

Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2022-мĕш çул. 11-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 45

Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2023-мĕш çул. 9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............... 49

Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2023-мĕш çул. 10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 55

Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2023-мĕш çул. 11-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 61

Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2024-мĕш çул. 9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............... 67

Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2024-мĕш çул. 10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 72

Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2024-мĕш çул. 11-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 77

Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2019-мĕш çул. 9-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............... 82

Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2019-мĕш çул. 10-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 89

Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2019-мĕш çул. 11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 96
Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2021-мĕш çул. 9-мĕш класс (вырăс шкулĕ).............. 104
Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2021-мĕш çул. 10-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 109
Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2021-мĕш çул. 11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 114
Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2022-мĕш çул. 9-мĕш класс (вырăс шкулĕ).............. 119
Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2022-мĕш çул. 10-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 123
Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2022-мĕш çул. 11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 127
Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2023-мĕш çул. 9-мĕш класс (вырăс шкулĕ).............. 131
Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2023-мĕш çул. 10-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 136
Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2023-мĕш çул. 11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 141
Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2024-мĕш çул. 9-мĕш класс (вырăс шкулĕ).............. 146
Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2024-мĕш çул. 10-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 151
Пĕтĕм тĕнчере иртекен «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» олимпиада. 2024-мĕш çул. 11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 156

*Учебное издание*

ВЛАДИМИРОВА Ольга Геннадиевна
ИВАНОВА Алена Михайловна

**ХУРАВĔ МĔНЛЕ-ШИ?**

**КТО ЗНАЕТ ОТВЕТ?**

**Материалы международной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе**

Учебное пособие

В 3 книгах

Книга 3

Редактор *А.Н. Антонова*
Компьютерная верстка и правка *О.Г. Владимировой*

Согласно Закону № 436-ФЗ от 29 декабря 2010 года
данная продукция не подлежит маркировке

Подписано в печать 15.05.2024. Формат 60×84/16.
Бумага газетная. Печать офсетная. Гарнитура Таймс.
Усл. печ. л. 9,53. Уч-изд. л. 9,48.
Тираж 100 экз. Заказ № 571.

Чувашский государственный университет имени И.Н. Ульянова
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15